Николай Исмуков

# Суйласа илнĕ сăввăмсем

Национальная библиотека ЧР
4-045860

к К84.09(=
И 8

Николай Исмуков

# Суйласа илнĕ сăввăмсем

Шупашкар
Салика
Кĕнеке издательстви
1997



*Лаптӑк та лаптӑк ӳсетчӗ улма,*
*Шурӑ чечекӗччӗ эпӗ.*
*Лаптӑк та лаптӑк килетчӗ ума,*
*Савӑнӑç – шурӑ тетте пек.*

*Хуйӑх та савӑнӑç пӗр шӑпарах...*
*Çул иртнӗçем пурнӑç терчӗ,*
*Атӑл хӑвийӗ йӗпе-сапара*
*Пиçнӗн, мана пиçӗхтерчӗ.*

*Çул вӗçӗнче хама хам суям мар:*
*Пур-и е çук-и çав турӑ,-*
*Пурпӗр, туссем, телей мар, телей мар –*
*Хуйӑх манран сӑвӑç турӗ.*

*Пурпӗр, туссем, сывлӑх-кӗрлӗх пур чух*
*Çав хуйӑха тав тӑвас кӑмӑл çук.*

4-45860
Национальная библиотека
Чувашской Республики

# ÇĂВАРНИ ÇАТМИ



Василий Иванович,
Сире ҫуралнă кун ячĕпе
саламлатпăр, ырлăх-сывлăх,
телей сунатпăр.
Салампа, [illegible] [illegible]
Сирĕн [illegible] ҫем, —
[illegible] Николай Ильич[illegible].
26.XII.99з.

## Тăван яла килнĕ чух

Кашни ялăн ячĕ хăй пĕр кĕвĕ:
Çĕрпÿел, Чурачăк, Патăръел…
Ял çинчен ÿкернĕ кино евĕр
Куç умне тухайрĕ хамăръен.

Хыр вăрманĕ çумĕн, ял-ял умĕн
Пилĕкне авса юхан Пăла
Унчченхи пекех тасçта васкать-мĕн
Хăвапа харшанă çулпалла.

Çаплипех çиçсе тăран мăн улăх,
Ай, ытла хитре-çке, тупата.
Пирĕн пек вăл ватăлмасть те урăх,
Пирĕн пек туймасть вăл вăхăта.

Картинкка çинчи пек пăхăр хырлăх,
Юнтапа енче тăваткăл хир…
Çакăнтан тата илемлĕх, ырлăх
Тек ниçта та курас çук эпир.

Çăварни çавра çатми пек тикĕс
Айлăма вырнаçнă Арапуç,
Сăнасассăн, кайăк йăви пек эс,
Сан çинчен кайма пĕлмерĕ куç.

Сывă-и, ĕрчсв тытан ялйышăм?
Хăв кăларнă çирĕп виçепе
Хут вереннĕ ывăлна эс йышăн —
Тивĕçлĕ пулсан вăл хисепе.

Кăшт пулсан та ячĕпе хисепĕ
Айăпла туятăп-çке хама,
Ма тесен чалтун хăна пек эпĕ
Пит сайра килетĕп ялăма.

Е инçе, е пушă мар тени те
Сăйланса тўрре тухни кăна.
Пурнăç лайăх чупнă чух анчах, тен,
Асилместпĕр çывăх тăвана...

Ан вăрçсам, ялйышăм, манăн шухăш
Сан çинчен çеç пулнă яланах.
Ахальтен-и сăввăма пит шухă
Ял кĕвви вырнаçрĕ аванах.

Акă ĕнтĕ хамăр кас урамĕ,
Акă хамăр лартнă йăмрасем.
Чуптăвам-и вĕсене? — юрамĕ,
Ўсĕр килнĕ тейĕç ватăсем.

Ачаран чунтан юратнă выран
Ытамне лексессĕн, мĕн тума
Асилў вăратрĕ ыра-ыра
Тунсăх йывăрлатнă туйăма?

Урампа пăхса майпен иртетĕп.
Утăмран утта — танлаштару.
Ĕлĕк чух çаплаччĕ пурнăç тетĕп,
Халь капла иккен лару-тăру.

Çулĕсем тата ăнтан кăларĕç:
Çÿреймест автобус йĕпере.
Çул тумашкăн, ваттисем каларăш,
Те чул çук, те чун çитмест пире...

Астăватăп,— кам-ха ăна манĕ? —
Кашни çул, çăва тухмассерен,
Кĕреçе тытма пултараканĕ
Çул тума тухатчĕ килсерен.

«Çул эрнийĕ» ятлăччĕ уявĕ.
Уява кам тухтăр укçалла?
Кирлĕ марччĕ ун тÿлевĕ, тавĕ,—
Чăн, ĕçленĕ коммунизмла.

Вăй-хăвачĕ çук-и халь калхусăн,
Пуçлăх çук-и ял Советĕнче?
Тĕлĕнсе ăнтан каян пĕр хушă
Çав ăслайлă пăлахайсенчен.

Анланмашкăн пирен вахат ĕнте:
Ĕçлесех тесессĕн çĕнĕлле,
Пуçлăхсен те, пирен пек çынсен те
Пăспа мар — аспа ĕçлемелле.

Çитĕ «çĕтĕлмешкĕн», тиркешмешкĕн.
Савнă тăван килĕм, ман килес.
Пĕчĕк пахчана илем кÿмешкĕн
Шур çеçке çурать хура пилеш.

Унчченхи пекех умра акаци,
Шашулккасăр пĕчĕк калинкке.
Хĕрлĕ мăкăнь ун çумне акатчĕç,
Халь те мăкăнь хĕмленет иккен.

Ĕмĕртен тирпейлĕ пулнă халăх
Кунĕн-çĕрĕн ĕçлесе ялтах
Савăнса этем пек пурăнмалăх
Асталанă кирлине йăлтах.

Арчара тупра, лавкка кавирĕ,
Сар улпут апачĕ — умĕнче.
Кĕнеке те, таса хут та ирĕк,—
Ĕлĕкхи пек чухăн мар тĕнче.

Тўррине тўрех калас пулсассăн,
Пурнăçăмăр халĕ пыл та çу.
Пурте пур пек, шутласа пăхсассăн,
Анчах тем çитмест пек, темĕн çук.

Хамăрпа танлашнă çак пуян та
Çак ытла хитре самапаран
Тем илмесĕр юлнă пек туятăн,
Тем çухатнă евĕр хуйхăран.

Кантуртан хитре çуртсем лартатпăр,
Машина́ тавраш та килсерен...
Урамра, ав, пылчăк, ăпăр-тапăр,
Тупаймастăн саплăк пек çерем.

Иртнине эп асилсе пыратăп.
Анчах кам ĕненĕ-ши тинех
Тĕкме çумĕн аслă урамра та
Чечексем ўсме пултарнине?

Ялтипе виçсе танлаштарсассăн,
Мĕншĕн-ха хула урамĕнче
Ешерет çеремлĕх кассăн-кассăн,
Апăр-тапăр çук çурт умĕнче?

Манăçса пырать иртнийĕ, пурпĕр
Йывăррăн çунаççĕ мăкăньсем.
Вĕсенче аттешĕн тунсăх пур пек,
Калайман чи кирлĕ сăмахсем.

Ача чух çунаттăм эп пĕлесшĕн,—
Халĕ тин ăнкартăм йĕркине —
Мĕншĕн, мĕншĕн çав хура пилешĕн
Çеçкисем шап-шурă иккенне...

Халь тĕнче, чăнах та, савăк, тăнăç —
Тав тумалăх пур патшалăха.
Пурпĕрех чечеклĕ мирлĕ пурнăç
Ан мантартăр иртнĕ хуйăха.

Çав хăрушă вăрçăра пуç хунă
Савнă аттесемĕр ячĕпе
Акнă мăкăнь кĕп-кĕрен саппунăн
Йăмăхтăрччĕ пĕтĕм ялĕпе.

Чи хисеплĕ палăк чул та мар вăл,
Сарă ылтăн кĕлетке те мар:
Чаплă палăк — халах асĕнче вăл
Йăх ятне тытса пыран тымар.

Ахаль мар пуль аннесем усранă,—
Манмалла-и пирĕн вĕсене? —
Куççульпе те вăхăтпа сархайнă
Аттесемĕр çырăвĕсене.

Ах, салтак шанчĕ, мĕншĕн эсĕ
Виç кĕтеслĕ çырупа пĕр пек? —
Çырăнса пĕтмесĕр, вĕçленмесĕр
Татăлатăн тунсăх йĕркепе.

Ватăлма ан васкăр-ха, тархасшăн,
Паттăрсен чипер мăшăрĕсем?
Ав, сире стена çинчен курасшăн
Ĕмĕр çамрăк юлнă аттесем...

Ĕнтĕ шухăш çип çăмхи пек кусрĕ,
Тупрĕ пулĕ хăйĕн еккине.
Акă кил хуçи те алăк уçрĕ,
Кил хуçийĕ — тăр-пĕччен анне.

Савнăçне пимле пытараймасăр,
Чăвашсен сăпайлă йăлипе
Ытлашши сăмахсăр, чуптумасăр
Çупăрларĕ икĕ аллипе.

Кĕтекен хăна ялан сăваплă,
Пĕлсен-ши, чунăмçăм анне,
Маншăн эсĕ пурăнни пит хаклă,
Эсĕ хăв телейĕм иккенне.

Шур çăка хуппи пек пĕркеленчĕк
Тăп-тăваткăл сăн-питӳ çине
Хăш çулсем çапла-ши йĕркеленчĕç
Шыв çурса антарнăн хирсене?

Яланах тирпейлĕ эс çӳрстĕн:
Икĕ аркă, аçлăклă кĕпе...
Ман ятпа пылак шерпет çĕклетĕн
Пӳрнеске пек пĕчĕк черккепе.

Çулупа пулсан та эсĕ ватă,
Астăну сан çивĕч-ха, анне,—
Çитмĕл çичĕ сăвă астăватăн
Çитмĕл çичĕ самана ятне.

Пирĕншĕн чунран пăшăрханатăн,
Чи кирли ялан чĕлхӳ çинче.
Пур пулса иртен япалана та
Хак паран патшалăх шайĕнче.

Сăмахна эп итлесе ларуçăн
Шухăша путап самантлăха.
Чун-чĕрӳ сан ялти çурт пек усă,
Кăмăлу сан — уй пек сарлака.

# Аслӑ Арапуҫ пасарӗнче

I

Анат чӑвашсен авалхи йӑлипе
Пасар хапхинчен ҫакса янӑ такан:
Сана, илекен, ҫут телей лавӗпех,
Сана — канлӗхпе ӑнӑҫу, сутакан.

Вӗлле пек, пасар хӗвӗшет те сӗрлет —
Япшар сутаканӗ, тиркеш илекен.
Чеелӗх, тӳркӑмӑллӑх — пурте пӗрле,
Вӗсен хушшинче пурнӑҫ ҫулӗ иккен.

Ак ват кинемей, хӗрупраҫ та чикан
Курса савӑнаҫҫӗ — таварӗ ахрат.
Хӗвел еннелле тинкерсе пӑхакан
Кушак куҫӗсем пек выртать виноград.

Пӗр пысӑк витре те пӗр пысӑк карҫын
Пӑрчкан ҫӑмарти пек шултра хурлӑхан.
Кунтан ырлӑха хапсӑнать-и ыр ҫын? —
Пурпа савӑнатӑн, ҫукпа ҫырлахан.

Кама мӗн астарӗ? — Ак пур ҫапата,
Вӗр-ҫӗнӗ ала та ҫӑка ҫӑпала...
Пӗр вӑхӑт тӑрсах тӗлӗнетӗн тата:
Мӗн чухлӗ сана кирлӗ мар япала!

Апла та шутлатӑн, капла та шутлан,
Пасар анлӑшне ҫирӗм иккӗ хутлан.
Хӑш чух туянсан лапӑхрах, тен, хӑш чух
Тӳлевсӗр парсан та илме кӑмӑл ҫук.

Ан пӗттӗр тесе-ши телей шыракан
Пасар хапхинчен ҫакса янӑ такан
Ытла илӗртӳллӗ ҫап-ҫутӑ такан?
Анчах та кам пултӑр телей сутакан...

II

Уҫăлать те хупăнать
Тимĕр тĕнĕл янă алăк,—
Арапуҫ пасарĕнче
Вĕркĕшет тем чухлĕ халăх.

Кам сутать те кам илет,
Пур пăхса ҫӳрекенсем те.
Сителсем сутаҫ сĕтел,
Сĕнтĕрсем илесшĕн чĕнтĕр.

Кирлине тăваҫ сутма,
Ҫуккине илесшĕн пурте,
Илеймеҫҫĕ те вара
Пасара тăраҫҫĕ тӳртĕн.

Сутаять-и сутакан,
Илеет-и илекенĕ —
Вăхăчĕ килсе ҫитсен
Сĕврĕлет пасар ĕлккенĕ.

Кам сăнанă? — пасарта
Ывăнсан канма лармаҫҫĕ.
Ачасем, пасар пĕтсен,
Вак укҫа халь пуҫтармаҫҫĕ.

Эсĕ, пурнăҫ, аслăрах
Арапуҫ пасарĕ мар-и? —
Тăп-тăваткал ҫут тĕнче
Куҫăмран пĕртте каймарĕ.

Кам килет кунта юри
Чап, суту-илӳ тумашкăн,
Кам килет кунта юри
Калаҫмашкăн, савăнмашкăн.

Ҫав курса ҫӳрекенсем,
Ĕлĕкхи ăсчах каларăш,
Чи телейлĕ этемсем.
Тен, вĕсем мана палларĕҫ?..

## Эй, ăсчахсем

«Авалхи тĕнче историйĕ» кĕнекерс куç шăрçисĕр ÿкернĕ философсем инçете-инçете пăхса ларнă пек туйăнаççĕ.

Эй, ăсчахсем! Кив кĕнекесенче
Пахса ларан кив ĕмĕр ачисем!
Пер пĕтĕм улшăну саккунĕнче
Текех нихçан та улшăнман çынсем,

Эсир, хисепле суккăр сутăç пек,
Вичсешĕн мар-и вĕçсер уçлăха? —
Шур илнĕн курăнан куçăрсемпе
Çаплах пахатар çут малашлăха.

Элле шыратар хăвăр çухатман
Пуласлăхри пуян вăхатсене?
Е иртнĕ емер пулăмне тытма
Кÿлсе тухатăр шухăшăрсене?

Пĕлÿçĕсем, эсир пĕлмен, паллах,
Мухтавла ятсемпе пурнан тĕнче
Тата кама кăларнине мала
Малашлăхăн кăвак черетĕнчен.

Грек йăхĕ харпăр хăй вырăнĕнче:
Тăпса юпи, ăс-хакăл тыткăчи.
Вĕри те вайлă шухăш хумĕнче
Епле тăрать сар Азин сар ачи!

Нумай выртсан та сĕм аваллăхра
Тексĕмленмеççĕ ылтăн пĕрчисем.
Пăлхавлă вăхăтра та халăхра
Пĕлÿçĕ йăхĕ пынă ĕрчесех.

Мĕн чул ăсчах ÿстернĕ Атăлçи
Çемçе çаранлă анлă сăпкинче.
Ăс-хакăла ытла та хапăл çын
Пулать-и чунсăр сăвă пахчинче?

Таçтан, таçтан тухаççĕ вĕçтерсе
Пегас çинче мухтавлă этемсем —
Хăйсен шăписемпе килĕштерсе
Пурăнайман телейлĕ сăвăçсем.

Кам асăрханă урхамах вăйне? —
Малти урисене кайрисенчен
Ирттерейсе чупма пултарнинче
Чăваш курать ун пурăнас кунне.

Çапла пурнать этемлĕх авалтан,
Сулмаклă ÿсĕм чуппине кĕрсе.
Куратăр-и? Саманаран малта
Утаççĕ пултаруллă шăллăрсем.

Ан тив, кунсем, çулсем те черетпе
Тумлаччăр канлĕ манăç тĕнчине,
Пĕлÿçĕсем, эсир çÿл бакен пек,—
Сире курса тухатпăр çул çине.

Эй, ăсчахсем, çулти калаçăва
Хавхалатса мĕн калăр, мĕн сăмах?
Истори тиесе тăран лава
Тапса туртать халь вăхăт-урхамах.

Çур шывĕ пек çырансăр юхакан
Çĕр çитмĕл çичĕ тĕрлĕ самана,
Шухăшласассăн, хурĕ мĕн хака
Аспа, ĕçпе палăрайман çынна?

Шăпа çак вăхăта ваклансă май
Тивĕçлипе валеçнĕ-и кунçул? —
Кам пуранна философ пек нумай,
Кам пурăннă поэт пек çирĕм çул.

Тем çухатни те пулнă хыçалта.
Тен, çав хĕсет хăш чух этем чунне?
Анчах трофейшăн çунакан салтак
Çитсе ӳкеймĕ çĕнтерӳ кунне...

Хальхаççăн çирĕпленнĕ йăлара:
Вак-тĕвексем еçлетпĕр вĕççĕрех.
Тӳрре тухасшăн калаçан вара:
Вак укçасем те кирлĕ кĕсъере...

Пуçăмăрта ăс-хакăл пур чухне
Хĕвел пĕлтерĕшлĕ ĕç пуçлама
Пирте вăй-хал та ĕнтĕ тем чухлех,
Хăюлăх, тен, çитмест ăрăвăма?

Çунатлă юрă, çивĕч ăс, тӳпе —
Çак пилшĕн тав атте-аннемĕре.
Вышкайсăр çитĕнĕвĕн çутипе
Каçасчĕ çирĕм пĕрмĕш ĕмĕре.

Еплеваскать çак вăхăт-урхамах!
Карăнтарсан, кăрт пулчĕ тилхепе.
Элле ӳксе юлатпăр хамăрах
Каç еннелле ӳкейнĕ мĕлке пек?

Пĕлӳçĕсем, эпир те ахрăм мар,
Килеймĕпĕр кайсассăн çаврăнса.
Малашлăх ачисемшĕн чĕр тымар
Пулса юлар... сасартăк чарăнса.

Çитмелти çынна çичĕ çулхи
ача ăсĕ кĕрет теççĕ.

*Халăх сăмахĕ*

Тав сăмахне кама каламалла
Ачалăха тухас пулсан калла?
Иртнисене аса иле-иле
Килсе те çитрĕм ак тăван киле.

Аван-и, пахчаран пуçа чиксе
Урамалла пăхан шур чечексем?
Ик чӳрече мана пахча енчен
Анне пек куç илмесĕр кĕтрĕç, тен...

Хура кăпчанкăран алтуйине
Хурса эп хăварам хапха умне —
Хам çулсенчен катсассăн ик сумне,
Чупсах хăпарăп картлашка çине.

Эй, çурт хуçи, эй, шурă пирĕшти,
Аттсаларăш, ырă килĕшпи,
Кил вучахне эс сӳнтермерĕн-и,
Кĕлне çилпе эс вĕçтермерĕн-и?..

Ачалăх иртнĕ вырăн тĕлĕне
Асамлӳ вĕçет сар лĕпĕш пек:
Унта ларать кăштах, кунта ларать,
Чи тутлă, пыллă вăхăт пуçтарать.

Путек хырса петернĕ кăмака
Усрать иккен кеслеçĕ-шăрчăка.
Ахаль-и асатте — кĕсле ăсти
Унта хуратчĕ кăшт кăвас чусти.

Мачча кашти ҫинче юман пăта
Сăпка ҫакмашкăн хатĕр, тупата.
Сăпки те пур — сиктерекенĕ ҫук,
Юрри те пур — ĕнĕрлекенĕ ҫук...

Турат куҫсем мана кураççĕ-и,
Сухăрĕсем юхса тăраççĕ-и.
Сухăрĕсем юхса тăраççĕ-и,
Мăк сухала кĕрсе тулаççĕ-и.

Урхамахсем сап-сарă пушăтран,
Урисене хуҫман-и ăнсăртран?
Хитре пĕтен юмахăн тĕнчине
Илсе каяр-и ырă ҫынсене?

Юмах — чуна йăпатмăш япала,
Чăн пурнăҫа пайлаймăн ҫурмалла:
Хурăнлăхпа пĕрле пур хырлăх та,
Ырăлăхпа пĕрле пур хурлăх та.

Каҫарăр, тантăшсем,— виҫ кунлăха
Мĕн-ма килес ман йӳҫĕ чăнлăха.
Ачалăх ҫĕрĕнче мĕнпур илем,
Ача ăсĕпелех унта вилем.



Ч-45860
Национальная библиотека
Чувашской Республики

## Салам, Арапуç!

Çулсем урапа кустăрми пек: пуçламăшсăр, вĕççĕр,—
Ура утнă чух каялла таврăнаççĕ пĕрех.
Салам, тăван енĕм! Сан çийĕн саркайăкăм вĕçтĕр:
Килетĕп киле, тăвансемĕр, тен, ĕмĕрлĕхех...

Салам, Арапуçăм,— чи хаклă пĕр татăк çĕршывăм,
Аннем сывă чух тăван килĕм те пур ман,— тавах.
Суранлă пулсан та, куратăр-и? — сăввăм ман сывă,
Ютсем кĕвĕçме саплаштартăр вăл çухатăва.

Аçта ĕлĕкхи тусăмсем? Тен, вĕсем те, мăнтарăн,
Манса кайрĕç пулĕ йăлтах çулçӳрен çăрхана.
Пăлаçăм, мана эсĕ çех юррунтан кăлармарăн,—
Каллех васкаса чупса тухрăн кĕтме ывăлна.

Пĕлетĕп, хăмла çырлисем иртерех хĕрелеççĕ
Йĕпхӳ çумăр хыççăн, хĕвел чуптуса иртнĕçем.
Анчах улăхри чечексем мĕншĕн хăвăрт ӳсеççĕ?
Тен, ман асилӳ ăшшине кăшт туяççĕ вĕсем...

Салху сăввămсем çаврăнаççĕ ялан çинчĕ çаврăм.
Элле çитмĕл çул пурăнатăп? Çапла пултăрах.
Тăван ялăма чирлесе ӳкиччен эпĕ саврăм,
Юратрăм, каçарăр та, Шупашкартан ытларах.

Çулсен вĕçĕ çукка. Çулсем урапа кустăрми пек.
Ан çаврăнччăр — ывăнтăм эп ют çĕрте çӳресе.
Мана утьăкка сиктерсе вĕçтерейнĕ чĕрçи те,
Ман ĕмĕрлĕх çакнă сăпкам та, хура çĕр, эсех.

## ÇĔР ЮРРИ

### I

Çулçӳрене инçе çула тухмашкăн,
Ай, кирлĕ уçă кăмăл, тӳрĕ чун.
Халтан кайсан вара ларса канмашкăн
Умра ялан çăл шывĕ пултăр ун.

Пурах пуль çав хисепĕ пуç таймалăх,
Пурах çав техĕм илĕртме куçа —
Ахальтен мар Раççейĕпех ман халăх
Пура ярса упранă çăлкуçа.

Вара унта пăрахнă кĕмĕл çĕрĕ,
Сукмак йĕрленĕ улăх таптаса:
Юхса тăрсан кăна çăлкусĕ чĕрĕ,
Аса тăрсан кăна çăлкус таса.

Эп вĕсенчен выртса пайтах шыв ĕçрĕм
Çĕршывăм тăрăх çӳресе, туссем.
Утăмăмсем сулмаклă пулччăр терĕм,
Сĕтеклĕ пулччăр терĕм сăмахсем.

Ай, шăнкăрти, ай, шăнкăрти çăлкуçĕ,
Саппа эп калаçам куçран пăхса.
Сапран пуçланнă та Пăла — çул пуçĕ
Таçтах çитет-мĕн Атăлпа юхса.

Апла пулсан Пăла — мăн çул пуçламăш,
Çул вĕçĕ те кунтах тухайтăр-и...
Калла хампах килейтĕр чун йăпатмăш
Пире сыхлан пĕтев — чăваш юрри.

Чун савнă çăлкуççем, сире ман парăм:
Тăванăма тăван чĕлхепеле
Юррăрсене епле юрласа парап,
Епле çавăрса калăп çак пиле.

II

Çаран çине пĕрремĕш хут тухайнă
Çинçе араллă çамрăк тихалла,—
Савăнăçне ăçтан кăна пухайнă? —
Çăл шывĕ выляса чупать мала.

Сар ылтăн хĕвеле çĕклем-çĕклемĕн
Хире илсе тухать тĕрте-тĕрте.
Чарусăр каччă пек, вылянăçемĕн
Чечексене чăп чуптуса иртет.

Пырне чӳхет-и шăпчăк? Е вăл манăн
Ачалăхран сас ахрăмĕ килин? —
Шăхлич çине шăрçа ярса юрланăн
Шăнкăртатать вăл ывăнма пĕлми.

Тен, пурнăç хăй çапла тапать чул ай
Вылявлă прĕк тенчене илме?
Кунта, ак, кĕçенсе анать çул майăн
Юпах Пегас таса сив шыв ĕçме.

Тата хитре таплаштару шырар-и?
Вулакана тек астарар юри...
Çăл сассипе тасаланса янрарĕ
Çак аслă Çĕрĕн пĕчĕкçĕ юрри.

Эй, пĕчĕк юрă! Сан умна куклентĕм
Кив тĕн çынни пек, çĕклесе алла.
Мĕне тытса мĕнпе чӳк парăп ĕнтĕ
Эс ĕмĕр янрассишĕн çаплалла.

III

Эй, чĕрĕлĕх юрри! Чунра уçатăп
Хальччен туйман шалти хăватăма.

Эп вăхăт алăкне уçса пăхатăп
Чăн-чăн Пуçламăш умĕнче тăма.

Çак аслă самантра — пуçламăш, эпĕ
Пĕр юрăра, пĕр пĕчĕк тĕвĕре.
Пĕрремĕш утăм тăвассишĕн тепĕр
Шырав, тен, хускалать-и тĕнчере...

Картса хумасть çулне çак çутçанталăк.
Çапах парас килет ăна та чун.
Хăйне пăхăнтармалăх, çул тыгмалăх
Тен, урăх саккунсем те пулнă ун?

Тен, урăх çул та урăх сисĕм пулнă
Çак хускану, çак чĕрĕлĕх тенин?
Анчах аталану саккунĕ хывнă
Çул-йĕр — ялан мала кăна чĕнни.

Малах утатпăр чăрсăррăн та çирĕп,
Пĕрле чĕнетпĕр ыр чунлисене.
Куратăн-и, малта шырать çăл ирĕк,
Вăл çĕнтерет мĕнпур чăрмавсене.

Эй, пăхăнманлăх, çул уçан пулсан та,
Пĕр саншăнах эп хура-шур тӳссе,
Сăмах илтсе мĕн чухлĕ асаплантăм,
Мĕн чул тата çухалчĕç пуль туссем.

IV

Эп, пуçтахскер, çапах та пуç усмарăм:
Çăл шывĕ пек тасан янрам тесе
Çич ютсене çывăхăма ямарăм,
Мухтавшăн та каймарăм йӳтесе.

Йнкек те пулчĕ — инкекле юлмарăм,
Ултав та тӳсрĕм — çынсене вăлтман.
Ырăлăха ырăлăхпа ман парăм,
Усалсене те пур-ха парăм ман.

Тен, урăхла та пурăнма май пулнă?
Пĕрремĕш утăм та, теп, тĕрĕс мар?
Шырав тени кая юлса хускалнă,
Тĕллевĕ тĕвĕленнĕ, тен, сыв мар...

Халь тин мĕн пулнине ӳпкелеместĕп,
Иртен куна кам таварайĕ, кам?
Е çĕнĕрен çул суйласа илес-тĕк,
Эп пăхăнманлăх çулĕпех утам.

Йĕрки çапла: çухалмалли çухалтăр.
Аталану саккунĕпе малта
Мĕн чухлĕ тупмалли çап-çутă çăлтăр,
Мĕн чухлĕ тупмалли туссем тата!

Эй, чĕрĕлĕх юрри — этем телейĕ,
Сăмах хускатрăм эп сан кĕввӳ май.
Пĕр сыпкăм сив шывпа эп ĕçрĕм тейĕн —
Чун уçăлчĕ, калаçмалли нумай.

## ТАВАН ЯЛА КИЛСЕН

Сакăлталлă çул çине тухатăп.
Пăрăнса кĕреп те сылтăма,
Шлепкене хывса эп саламлатăп
Хам çуралнă кивĕ çуртăма.

Сывă-и, чĕкеç йăви пек пĕчĕк
Килĕм-çуртăм, савнă çуртăм ман?
Манăçман-и ывăлун сăн-пичĕ? —
Эп сана ним чухлĕ те манман.

Асилем тесессĕн, асилмешкĕн
Иртнĕ вăхăт сахал мар умра.
Халь пулас-и ĕлĕкхи пек вĕçкĕн,
Ташласа пăхас-и урамра?

Çӳç вире, тута та чăпăрт хупă,
Костюмран кăларнă шур çуха...
Темшĕн Çĕмĕрткас енче хуткупăс
Урăх кĕвĕпе халь каçăхать.

Урăх вăхăт — урăхла ташлаççĕ,
Ĕлĕкхи пек юрламаççĕ халь.
Ушкăн-ушкăн урама тухмаççĕ,
Чăвашла та ташлакан сахал.

Кĕçĕр каç сасартăк эп ăнлантăм
Çамрăклăх иртсе те кайнине.
Салхулантăм, шăхармасăр антăм
Хамăр «Чипер арăм» кассине.

## ИРХИ УКЕРЧЕК

Тип кăна тавралăх шăпчĕ,
Çил те çукчĕ тин кăна,—
Шăхăрса та ячĕ шăпчăк,
Йыхăрса килес куна.

Шурăмпуç—пĕветнĕ енчĕк—
Шуралсах ĕлкĕриччен
Сарă кайăк пек çĕкленчĕ
Сар хĕвел сăрт хыçĕнчен.

Юратса пăхса илстĕн:
Сывлăмпа çиçен хирте
Шенкер куçлă симĕс йĕтĕн
Кÿршĕ хĕрĕ пек хитре.

Пăла çумĕн аслă улăх,
Çăкасарĕ çеçкере.
Сан пекки, ман ялам, урăх
Çук та пулĕ тĕнчере.

Çĕнĕ кун илемĕ анчĕ
Куçкески пек çут кÿлле.
Шăпчăк майĕпен шăпланчĕ,
Çил те чарăнчĕ хуллен.

## ПĔРРЕМĔШ ЛĔПĔШ

Çурхи хаваслă шăв-шавра
Йăмра хайларĕ çĕнĕ юрă.
Çул хĕрринчи юханшывра
Хĕвел çап-çутă тĕрĕ турĕ.

Çур ханисем хавасланса
Вĕçсе килеççĕ ушкăн-ушкăн.
Карта çинче хавхаланса
Çырать, ав, сăвă пĕчĕк Пушкин.

Пăт-пат çĕр тухнă урамра
Пĕрремĕш лĕпĕш вĕлтĕртетрĕ.
Чĕрем кăлт турĕ те — умра
Ачалăх çаруран вĕлтлетрĕ.

## ПУЛЬНИЦĂРА

Тем анлăш палата та тăвăр.
Кунсем те, каçсем те пĕр пек.
Паян эс çырайăн-и сăвă
Çаплах, унчченхи хĕрӳпех?

Асать, хумханать чĕрĕ тунсăх—
Йĕпеннĕ хура вĕлтĕрен.
Çупатăм ман ывăннă, усăк,
Те лăпкăн вĕçме пĕлменрен?..

Çапла, пурриче упраймастпăр,
Йĕретпĕр вара çухатсан.
Ăçта-ши хĕвеллĕ те капăр
Çӳхе парне тутăрĕ сан?

Епле çăмăл пулĕччĕ, ырă
Ялан эс пулсассăн çумра.
Манра эс çуратнă пĕр юрă,
Пĕр юрă -- пĕр ĕмĕт умра:

Каллех ĕлĕкхи пек пырасчĕ,
Санпа алла-аллăн тытса.
Текех чирлес марччĕ—утасчĕ
Пĕр тикĕс, пуçа ывăтса.

Тăрам-и апла эп, утам-и
Çӳхе кĕпе вĕççĕн кăна.
Таван пек, мăн улăх ытамĕ
Савса ачашлатăр мана.

Сипетлĕ чечекĕн шăршийĕ,
Сывлам ăна кăкăр тулли.
Ирхи таса сывлăм шевлийĕ,—
Тен, ман савнă çыннăн кулли...

## ТАВАН КӖТЕС

I

Хур шуйхашни те илтӗнмест текех.
Кӗтӳ анса тусан ляпланнӑ ӗнтӗ.
Хевтесӗр ҫил вӗҫгерейместтӗке,
Тӳнтерлӗ ларчӗ суккӑр вӗлтӗрен те.

Теме сиссе кӗлет кӗтессинче
Қаҫса кайсах юрлать пӗр шухӑ шӑрчӑк.
Пуплет ыран мӗн тумалли ҫинчен
Правлени умӗнче пӗр ушкӑн карчӑк.

Мӗн юлнӑ урамра? Мӗскер асра?
Теме кӗтсе теме тимлетӗп питӗ:
Ҫук, илтӗнмест паян ҫӳлти касра
Саккӑрлатса хатарлан пир ҫапни те.

Кун вӑйӗ майӗпен сӳнсе пӗтсен
Хура куҫӗсемпе пӑхать те каҫӗ,
Ҫӳл йӑмрасем — кӗрнеклӗ йӗкӗтсем —
Ҫавӑтӑнса каҫхи вӑййа тухаҫҫӗ.

Шыва пӑрҫа ӳкернӗн сас парса,
Ҫутаяксем пытанмалла выляҫҫӗ.
Хумсем вара, ыталанса пырса,
Хӑва ҫулҫисене чӑп! чуптӑваҫҫӗ.

Хӑй евӗр пурӑнать каҫхи тӗнче.
Ана курма, туйма кӑна пӗл эсӗ.
Мир пултӑр ӑшӑ чӗрҫиттӳ ҫинче,
Мир пултӑр чунунта, таван кӗтесӗм.

2

Ирсем, ирсем! Саркайăк тĕкĕпе
Шывпа пуçса сире ÿкерИĕ пулĕ:
Епле хитре, черченкĕ! Тĕкĕр пек
Ума тухать ик юплĕ Шетмĕ çулĕ.

Чĕкеçĕн йăвинчен тирпейлĕрех
Пăмралăх айĕнчи ман савнă ялăм
Хăна кĕтейнĕ пек кĕтет ире.
Тавсси килекене! Тавсси, вăй-халăм!

Пуç тăрринче чĕвĕлтетсе ларан
Сап-сар хĕвел чĕппи пек сарă кайăк,
Чăвашăн шăпчăкĕ эс пулнăран
Юрру умне пуçа пырса эп тайăп.

Саламлă çыру евĕр кун килет.
Унпа мĕнпур пуласлăх, шанчăк, ĕмĕт.
Илемлĕхе савса юрла, поэт,—
Ир пултăр та кун килтĕр ĕмĕр-ĕмĕр.

Хăй евĕр пурăнать ирхи тĕнче.
Ăна курма, туйма кăна пĕл эсĕ.
Мир пултăр ăшă чĕрçиттÿ çинче,
Мана пит тарават тăван кĕтессĕм.

## ЧУРЕЧЕ ÇИНЧИ ХĔЛ ЭРЕШĔСЕМ

Йăмрасем шап-шурă пас тăкаççĕ,
Кĕмĕл уйăх сарнă çунатне.
Калăн, юмахри Диканька касĕ
Анна Аслă Арапуç садне.

Шухăшра кăна вĕçсе çитейĕн
Ĕлĕкхи ытарлă кун умне.
Шур илсе-çке суккăрланнă тейĕн
Хурал пÿрчĕ кантăкĕн куçне.

Темиçе мĕльюн çулхи аваллăх
Лăпсăркка упасарри пулса
Чул çинчи ăста гравюра майлăн
Кĕленче çине ÿкет шурса.

Ак ăçта вăл кивĕ мезолитăн
Сăнĕ-ĕмĕлки шуса иртет.
Иртнĕ вăхăт, чухласа эс илтĕн,
Çапăнса, тен, юлнă вăл пиртех.

Кăткăс япалашăн тĕлĕнетĕн,
Савăнан ансатшăн темĕн чул.
Тен, этемлĕх аталанăвне те
Кĕскетсе утса эп тухнă пуль?

Аваллăн кунта çитсе ÿкме-мĕн
Чăнлăх илнĕ юмахран тумне.
Эй, мĕн чухлĕ вăрттăнлăх тĕнчемĕн —
Тупайса пĕтер-ха тупсăмне.

## САМАНИ ТЕ, КĂМАЛ ТА АВАН

Арапуçăн çĕрĕ хĕсĕр мар
*В. Митта*

Самани те, кăмăл та аван.
Мĕншĕн юрлас мар-ха ман, тăван?
Ал сулса пуçлам-и çĕнĕ юрă —
Çуркуннесĕр ирĕлтĕр шур юрĕ.

Ушкăнпа тухсассăн акана
Тырă çеç-и? — туслăх акăпать.
Тус-юлташлă пурăнар, ачсемĕр,—
Тулли пулĕ кĕреке те ĕмĕр.

Аванса юхать ялтан яла
Сăвăçсен сăпкиийĕ — çут Пăла.
Шур хăвалăх — шур хумханчăк тĕрĕ,
Çамрăклăх сăвви çав пулĕ терĕм.

Арапуçăн çĕрĕ хĕсĕр мар —
Лартнă йывăç яратех тымар.
Ав мĕн чухлĕ вăйпитти çыравçă
Ывçăн-ывçăн савнăçне сапаççĕ.

Пăла ен çемçе таса чĕлхи —
Шăнкăр-шăнкăр çăл шывсен юххи.
Пăтратмасăр эп ăна ăсам-и —
Куçтăр кăшт мана та ун асамĕ.

Хĕрлĕ мăкăнь, хĕрлĕ чечексем,
Тек ан ларăр пуççене пĕксе.
Çĕклепет паян патвар та сывă
Çĕн хунав — ăс-хакăллă хĕр-ывăл.

## ВĂРМАН

Çил тухнă та, каш-каш кашлать
Кĕрхи вăрман манпа калаçнăн.
Пилеш çулçи ташла-ташла
Прачак урлах вĕçсе, ав, каçнă.

Кашлать вăрман хăй кĕввипе,
Хĕвелпеле тăрри хĕмленнĕ.
Пĕр йăлăхмасăр кунене
Эп сахал мар ăна итленĕ.

Уи кĕввинче сăнка юрри—
Анне сасси — юхать ачашшăн.
Тен, çавăнпа кунта юри
Килсе çÿреттĕм йăпанасшăн.

Çав юрă май куç умĕнчех
Иртсе каятчĕ пĕчĕк тертем...
Вăрманăм, чĕрçиттÿ çинче
Эс вылятса мана ÿстертен.

Перле тăрса юрлаттăн пек,
Эпир вăййа тухсан, вăрманăм.
Пĕрремĕш хут кунта хĕрпе
Çÿренине ăçтан-ха манăн?

Ир-каç юрлатчĕç кайăксем.
Канмастчĕ шăпчăкĕ-ăстаçă.
Хĕвел шевли пек кунăмсем,
Ыйхă килмен каçсем ăçта-ши?

Çул çÿресе эп тĕнчере
Нумай илемлĕ выран куртăм,
Анчах упранчĕ чĕрере
Тăван тавралăхшăн ыр туртăм.

Паян кунта эп. Тĕлпулу!
Чĕрем сиксе тухас пек манăн.
Эп килтĕм — санăн ывăлу,
Эп килтĕм, манăçми вăрманăм.

Умра хĕрелнĕ вĕрене,
Юратнă хĕр пек шурă хурăн...
Ытла та çывăх чĕрене
Ачаранпах саваплă вырăн.

Юрла, вăрманăм, кашласа.
Сассу сан ирĕклĕ те уçă.
...Хĕвел çинче вăй выляса
Вĕçет, вĕçет сап-сарă çулçă.

## ЧЕЧЕКЕМСЕМ

Кивелнӗ сад. Анчах та пите лайăх
Ларса канмашкăн ун сулхăнӗнче.
Юратна юррине юрлать пӗр кайăк
Тахçантанпах садри тем хушшинче.

Тӳр чунлă кайăк. Çене сад чӗнсен те
Улаштармасть вӗреннӗ кӗтесе.
Çер çитмӗл çичӗ тӗслӗ чечексем те
Лараççӗ пек савнисене кӗтсе.

Умалтурат, кăвак çеçке, сар ейӗк,
Çумрах-çке шурă пурçăн — шур çеçке.
Е сăнаман-ши ун чухне сире эп,
Е çамрăклăхăм пулнă-ши кӗске?

Чечекӗмсем, саркайăк хепӗртенӗ
Куçран пăхса ларас пулсан сире.
Уç конвертсем вӗçсе çӳреççӗ тейӗн,
Сар лепӗшсем вӗçеççӗ вӗççӗрех.

Ах, чечексем, эсир асилтеретӗр
Чап-чакăр куçлă шукăль хӗрсене:
Çавăтăнса вăйă картине кӗретӗр,
Юрлатăр лапкăн çăлтăр юррине.

Ах, чечексем...Ун чух эп çамрăк каччă —
Пелнех-ши суйлама та юратма?
Анчах пӗри, пӗри вут хыптаратчӗ
Тин çеç вăраннă усă чунăма.

Пӗрремӗш юрату, сӳнмен кăвар та
Сан пек суран тăваймӗ чӗрере.
Чуна ӗнтсе тăмха çапса хăвартăн,
Асаплă хăвартăн ӗмӗре.

Паян та ак кăвак чечек пĕлтерĕ
Сан куçусем çинчен пăшăлтатса.
Кунсем иртсен те ĕмĕр иртмĕ терĕм,
Анчах тăнлавăм пычĕ шуралсах.

Кăвак хуппи пек хăвăрт иртрĕ ĕмĕр,
Ыйтса та юлаймарăм телейне.
Кивелнĕ садăн чĕр çеçкийĕ евĕр
Çап-çамрăк туйăм юлчĕ чĕрене.

## ÇĔРШЫВĂМ-АННЕ

Умра, тантăшсемĕр,
Телейлĕ кунçул.
Сулмаклăн утмашкăн
Вăй-халăм мĕн чул!

Юратнă Çĕршывăм,
Епле эс хитре!
Хавaслă кун сăнĕ
Çиçет сăн-питре.

Çĕршыв вăл анне пек
Ялан чĕрере.
Çак икĕ сăмахăн
Пĕлтерĕш пĕрре:

Аннесĕр, Çĕршывсăр
Пулать-и этем?
Вĕсем пулмасан,
Ӳкем эп, пĕтем.

Аннемĕр пикекĕ —
Çĕршывшăн пикек.
Вăл маншăн та йывăр
Арман чулĕ пек.

Çĕршыван телейĕ—
Аннешĕн телей.
Хавна шеллемесĕр
Ана хÿтеле.

Таван амапне те
Манан çынсене
Епле шанса парап
Çĕршыв пурнаçне?

Тăван çĕршыва
Юратсассăн кăна
Анне пилĕ çитĕ
Мана та сана.

Çĕршыв-аннене
Хаваллатăп сăвва.
Вăл сывă пулсассăн,
Эпир те сывах.

Умра ялан халь телевизор.
Килтен тухмастпăр сăвăр пек.
Утам-и пĕр пашăрханмасăр
Унччен çӳренĕ çулсемпе.

Çитсе курам паян Çĕршывăн
Асран каймн кĕтессине.
Манми туссем хавассăн, сыввăн
Кĕрейччер савă çеммине.

Каллех сăнам Çепĕр каçсен
Унне ӳкен çут уйăхне.
Кусран пăхса тăрам сар Азии
Тĕпренчек херлĕ чечекне.

Кашни чечек — пĕр куп илемĕ.
Перер-перерен весене
Унченхи пек эп парнелем-и
Ĕçре ĕшенне хĕрсене?

Тĕк татнă пек, поэт калараш,
Иртейрĕ вăхăт сиккипе.
Çут çăлтăрсем пек сапаларĕ
Пире шапа Çĕршывĕпех.

Ăçта-ши халь эсир, ман савнă,
Ман кăйкăр куçла пĕкĕтсем?
Аса килессĕ-и асамла
Вай-халлă çамрак вăхăтсем?

Пурне те халь сире пухасчĕ
Ĕçкере мар — çав стройкăрах.
Кăвайт чертсе каллех ларасчĕ
Ал ăшăтма вучах тавра.

Хавaслă кулă пек çиçетчĕç
Пăлхавлă çулăм пĕккисем.
Çав татăк-татăк çулăм пекчĕ
Ун чух вĕри чĕремерсем.

Сикетчĕ çиçĕм-сварка çуттăн
Вĕт çăлтăрсем ума сапса.
Хуран тулли вĕретчĕ битум,
Хуллен-хуллен хăмпăланса.

Паталлă алсемпе маттуррăн
Пăралука пăра-пăра
Хăватлă шăнăр-арматура
Хĕрсех çыхаттăмăр вара.

Барак вырăнĕнчи хĕвеллĕ
Сап-сар çуртсемĕр сых ятне
Упраççĕ-ши ĕçчен чĕреллĕ
Чăвашăн гараватлăхне?

Лебедкăпа çĕклем-çĕклемĕн
Бетон хăпартнă çурт çине
Эпир шăратнă та çеклене
Хальхи ăру çирĕплĕхне.

Аçта-ши халь эсир, ман савнă,
Ман кăйкăр куçлă йĕкĕтсем?
Аса килеççĕ-и асамлă
Вăй-халлă çамрăк вăхăтсем?..

## ÇУЛÇӲРЕНСЕМ

Кивçен илсессĕн, памаллах, пĕлетпĕр.
Килтен кайсан, килех-мĕн килмелле.
Çулçӳренсем, çак тĕнчене килетпĕр
Телей те ырлăх шырама элле?

Телей тени... Эй, ватăсем, тархасшăн,
Каçарăр та, калаймăр вăл мĕнне.
Ача, те йăкарсах, куçна курасшăн
Кайăкне мар — ун савăк çеммине.

Пуçлатпăр пурăнма ансат та ассăр,
Вĕçне тухатпăр ăс пухса çитсен.
Кам пурнăçĕ пĕр шухăша каймасăр,
Пĕр шутламасăр иртнĕ халиччен?

Лавккасене укçасăр кĕнĕ евĕр,
Талантсăрах кĕретпĕр тĕнчене.
Хăçан татса пĕтерĕпĕр? — Çак ĕмĕр
Пире мĕн чухлĕ кĕртнĕ кивçене?

Этемĕн ун нихçан та кăмăл тулмĕ:
Ик ĕмĕр пурнасла илет, тиркет.
Тав куркине алран ярасшăн пулмĕ,
Анчах çул куркине ĕçмех лекет.

Мĕскер яланлăх тĕнчере, мĕн капăр,
Мĕн ĕмĕр кивелми юлать ларса?
Çулçӳренсем, киле ак таврăнатпăр
Калла çулта та савнăç шыраса.

Пиртен килмест тĕнче йĕркийĕ-карчĕ,
Каяс чухне мĕскер-ши хăварам?
Усалсене усаллăх парас марччĕ —
Çынна телей хăй шырĕччĕ вара.

Пӗлетӗп эп, салхулӑха сивлеççӗ,
Савӑнăça саваççӗ ӗмӗртен.
Анчах та чӑплӑха чуппах сисеççӗ.
Туссем, туссем! Кӑшт шутласа илсен,
Çак сӑвӑшӑн мана каçарӑр, тен...

## ЮМАН ВУТТИ

Юман вутти ҫунать кăмакара.
Епле вăл хĕрхенмест хăй хĕрӳне.
Куҫра выляв, ыр канлĕх шăмшакра.
Тата мĕн кирле-ха сулҫӳрене?

Кăвак та симĕс, хĕрлĕ, сар тĕссем
Пирс парать халь авалхи юман —
Ҫут тĕнчере пумай ҫулсем ӳссе
Тĕнче тĕсне илмесĕр вăл юлман.

Тавлашнă вăл шур юрлă тăманпа
Кĕрешӳре тухаснăн ҫиеле —
Сар ҫулăм пĕккисем, тен, ҫавăнпа
Пăлхавлăн хăпараҫҫĕ ҫӳлелле.

Уяр кунсем-и тăнă ҫунтарса?
Е муритленĕ-и йĕпе-сапа —
Пер витĕр хĕрелсе, пĕр хуралса
Юман вутти кăвар шевле сапать.

Ларатăп шухăшра вут умĕнче:
Пирте мĕскер сыхлане иртиничен?
Атте-анне йăли-йĕркисенчен
Юлайĕ-ши чăвашлăх чунсенче?

Йăлтах калла эп парăп илнине —
Пĕр ҫын пулсан та туйтăр ăшшине.
Анчах хам пурăнни хакне татни
Пурăнни мар — кивҫен илсе пани.

Сахал илсен те памалла нумай.
Ҫапла анчах тĕнче утать мала.
Тавах, юман. Кунта эп ҫула май —
Кăшт ăшăнсан, каллех ман утмалла.

## ÇĔНĔ КУН

Хĕвеллĕ çĕнĕ кун, салам сана!
Эс вăхăт шутĕнче чи кĕçĕнни.
Чӳречене яр-уçă уçсанах
Пĕлес килет: мĕн парнелен çĕнни?

Пулаççĕ-и санпа унчченхилле
Утас çулсем тап-такăрах çатма?
Е килĕç иртнĕ йăнăшсем каллех
Утас çулта сулăнкăна çапма?

Эп çĕн куна кĕретĕп иртнипе:
Хĕнпе хĕрсе çирĕпленен ăспа,
Çунса тасалнă сарă савнăçпа,
Тӳсĕмпеле, çукран пур тунипе.

Анчах пулассипе пурнап паян:
Çĕн çитĕнӳшĕн пултăр утăм ман,
Хавхалануллăн юхтăр юррăм ман,
Мал ĕмĕтпе ман пурнăçăм пуян.

## КĔРХИ ШУХĂШ

Кăшкăрашса чупаç-и класĕпех
Шкултан тухсан вĕт-шакăр ачасем? —
Автобус хыççăн сивĕ шоссепе
Кĕпĕрленсе вĕçеççĕ çулçăсем.

Кĕр кунĕ — алăк умĕ, çу — тĕпел,
Эпир унта хăна-вĕрле кăна.
Пĕр чăмăркка сар çу пек сар хĕвел
Текех ӳкмест çавра уçланкăна.

Хуралçă пӳрчĕн мăйрине лексе
Упаленеççĕ ватă пĕлĕтсем.
Пус çекĕлĕ пек кĕтесле вĕçсе
Хуркайăк ăсанать, чуна йĕртсе.

Эй, хĕрупраç! Аллăрсене сулсах
Курăнмиччен ăсатăр вĕсене,
Хелле вара каç-каç вахат тупса
Саппун çине ӳкерĕр вĕçевне.

Кунсем кĕскелнеçем хуллен-хуллен
Варăмланса пыраççĕ шухăшсем.
Вак-тĕвек еç тăватнăр-çке куллен,
Тен, çавăнпа çукрах ятăмăрсем...

Кам çыхнă хура тутăр çу каçа? —
Каççем çиччен сирсе сирмелле мар.
Ай-хай, иртет-çке вăхăтваскаса,
Çурхи шыв пек тытса чармалла мар.

Автобус иртрĕ, çулçă хускалмасть.
Юр ларĕ чи малтан çул хĕррипче.
Калас сăмах пек канаç тупаймасть
Хуралнă çулçа хуран тăррипче...

## ВОКЗАЛТА

Килеççĕ те каяççĕ — вокзалта
Ларса юлмасть ĕмĕрлĕхех никам та.
Ватти-вĕтти, хĕрарăмĕ, салтак...
Пуриншĕн те вăл тараватта янтă.

Сăнассăм килмесен те куç курать.
Пĕри ялан паврать, теприйĕ чĕмсĕр.
Пĕри ытла та канăçлă — çыврать,
Тепри кумать лара-тăра пĕлмесĕр.

Кам маларах каять, кам — каярах.
Кама мĕнле шăпаллă расписани.
Кам ларса çӳрĕ чаплă вакунра,
Кам ытларах пуçтарĕ çул тусанĕ.

Пĕлетпĕр: пурте, пурте çул çинче.
Шлагбаум антарман-ха,— пырăр, иртĕр.
Вокзал пек туйăнать çак çут тĕнче.—
Кĕретпĕр те тухатпăр çех ун витĕр.

## ÇАВА ТУХНИ

Урпа акма та вăхăт çитрĕ ахăр:
Кÿпчекленсех ырать çырма-çатра,
Араб саспаллисем пек кукăр-макăр
Пĕрсем хăварна амансем садра.

Таçта йăвашшăн аслати кĕрлерĕ...
Ачалăха аса илсе пĕрре
Выртса йăваланар-и, вĕçтерер-и
Çул иртнĕçем чĕрре кĕрен чире.

Çăва тухса та кайрамăр — сисмерĕм.
Пульницăран тин тухнă пек киле —
Ан тив, сар чечекпе ешертĕр эрĕм —
Пурне те лăпкăн ачашлас килет.

Иртейне асапсемшĕн халь — телейĕ.
Тĕнче анчах тĕк тăтăр, ериппе.
Такмакласа çăвай çапатпăр тейĕн,
Ĕçлес килет çак пурнăç юррипе.

Çынна тĕлĕнтермелĕх çук хăватăм,
Кайса ÿкмелĕх ĕç те тăваймăн.
Унта-и пурнăç тупсăмĕ? Ав, ватă
Картиш шăлать, çĕре йĕрлет ăман.

Çерçи вăл шăпчăк мар, такам та чухлĕ,
Анчах та чухăн унсăрăн тĕнче.
Кама мĕн чухлĕ панă, çавăн чухлĕ
Сумпа ларар кунçул кĕрекинче.

Мескершĕн кĕвеçес? Калам сăнарлăн:
Никам та çырмс ман сăввăмсене.
Апла пулсан, кам тăхăнĕ ман тарлă,
Ман пĕчекçеççĕ лавр кăшăлне?

Виçесӗр тӗнчере пур япалан та
Хӑй вырӑнӗ, хӑй вӑхӑчӗ иккен.
Çерем çинче выртса эп йӑвалантӑм:
Сыв пултӑр хӑй хакне ӗненекен,
Хӑй вырӑнне тӳре пек пӗлекен.

# ХУРА ВӐРМАН ÇИНЧЕ



* * *

Хура вăрман çинче епле алхапăл
Сиксе, сиксе куккукĕ авăтать.
Те пурăннă кунăмсене шутлать вăл,
Те пурăнас кунăмсене шутлать.

Ах, кайăк тунсăхĕ — ытла та çăмăл,
Ах, кайăк савнăçĕ — ытла таса...
Тӳре пек хĕрхенӳсĕр вăхăт-тăвăл
Мана та ĕнтĕ кайĕ таптаса.

Çул хĕрринчи çеçкен тарса юласчĕ
Сиксе, сиксе иртен кунăмсенчен.
Кив сăввăмсем патне ман таврăнасчĕ,
Куккукăм, сан çунаттусем çинче.

Пӳрне хуçса пырас — пӳрне çитеймĕ,
Ытла нумай, тен, аватан, куккук?
Пурнас кунра мĕн килĕ, мĕн килеймĕ —
Чикан та каласа параяс çук.

Ир енелле тĕлленне тĕлĕк пек-и
Е каç юрлане çаврăм юра пек? —
Чăпар куккукăн авăк-авак текĕ
Вĕçсе анать усланка çумĕне...

* * *

Ахрат çырми пек умăмри малашлăх
Утмашкăн мар — пăхмашкăн юлчĕ-ши?..
Телейлĕ вăхăт — шухăшсăр ачалах!
Е вăл та тĕлĕкре çех пулчĕ-ши?

Тарпа сассиллĕ илĕртуллĕ улăх,
Çавра-çавра çаваранан çулсем...
Чуна уçса, тен, калаçаймăп урăх
Сиренпеле эп, шанкăрти çăлсем.

Çурса пăрахнă çырусем пек тĕлсĕр
Вĕçеççĕ сарă-шурă лĕпĕшсем.
Пуça ыраттарса тăраççĕ тĕссĕр,
Тĕллевсĕр татăк-татăк шухăшсем.

Тантăшăмсем, карталанса ан утăр,
Ан çупăр алă — аллăр ывăнать.—
Эп ăнсăртран ÿкертĕм хура тутăр
Ташлас тесе куç хывнă вырăна...

* * *

Çатмах çинчи пек шухăшсăр ачалăх
Тĕтре пек сирĕлсе пĕтиччене —
Кам хушнипе? — касса уçатăп алăк
Хаяр та илĕртÿллĕ тĕнчене.

Хăй йăвинчен тухса ÿкейнĕ кайăк
Çапла туять-ши çĕмĕрт айĕнче? —
Пĕрре ытарайми хитре те лайăх,
Тепре — хыпса çăтас пек çут тĕнче.

Анне чĕрçийĕ мар иккен тавралăх,
Атте пек тимлĕ мар иккен çынсем.
Умра — упа каçман çырма-çатралăх,
Çумра — пĕр пăлламан çулçÿренсем.

Пулни-иртни — пуçтарăнмă каçалăк.
Малта мĕн пулĕ, ахăрсамана.
Малашлăха, ытарайми ачалăх,
Йăлтах, йăлтах парса ан яр мана.

* * *

Шур чечек — савнăçа, сар чечек — ултава,
Кăвакки — тунсăха пуль тееççĕ.
Кĕренни — кĕтрете, çут хĕрли — мухтава,
Сенкерри — синкере пуль тееççĕ.

Тĕлĕнме кирлĕ мар, савăнма кирлĕ мар,—
Тĕм-хура чечексем те эп курнă.
Суйласа вĕсене уйрăм-уйрăммăн мар —
Çыххипех парнелерĕ-çке пурнăç.

Парнене кăларса пăрахма йăла çук,—
Юлтăрах ыранхи кун валли... калаçу.

* * *

1

Пӗр пӗчӗк телее уяв тӑвам-и:
Вӗр-ҫӗнӗ шур кӗпе эп тӑхӑнам.
Васка-васка ҫырам йыхрав саламӗ,
Юрла-юрла ҫавра сӗтел лартам.

Пӗр пӗчӗк телее уяв тӑвам-и:
Тус-йышӑм килтӗр, ыр сунан тӑван.
Сӑйлантӑр савӑнса туссен тӑванӗ,
Иртен-ҫӳренсене хӑна тӑвам.

Пӗр пӗчӗк телее уяв тӑвам-и:
Чӗл-чӗл пайланӑ пек сар ҫӑкӑра
Пурнишӗн те пӗрер кӑмӑл турамӗ
Унран тухайтӑр кӑмӑла кура.

Микротӗнче йӗрки-ши чун-чӗремӗн? —
Саккунӗсем ун урӑхла пачах:
Телейӗме ҫынна пайлапӑҫемӗн
Пӗчӗкленмест вӑл — ӳсӗнет анчах.

2

Ума тӑрук никек-сикек тухсассӑн,
Шур кӗпе мар, хура сӑхман уртам.
Печчен чухне сывлам эп ассӑн-ассӑн,
Ялйышӑмпа пӗрле пӳрт хӑпартам.

Ума тӑрук никек-сикек тухсассӑн,
Юратнӑ ӗҫ ан ӳктӗр алӑран.
Аш вӑркасан та лӑпкӑ пултӑр сассӑм,
Юрлас тени ан тухтӑр йӑларан.

Ума тăрук инкек-синкек тухсассăн,
Шăла çыртса чăтам-тӳсем ăна.
Тус-тăвансем вара, килес пулсассăн,
Чĕнмесĕр килччĕр — хаклă çав кăна.

Чун хушшинче йăл илнĕ чун-чĕремĕн
Саккунĕсем урăхла мар иккен.
Çынпа чуна уçса калаçнăçемĕн
Ман хуйхăм та иртсе пырать майпен.

* * *

Кунсем те каççем шутласа
эс мĕн чухлĕ ан пурăн,
Пĕлсе пĕтереймĕн пĕрех савнăçпа хĕн-хура.
Ав, çĕмĕрт çеçки те,
шуратнă пир тейĕн, шап-шурă,
Анчах çырлисем, çырлисем
мĕншĕн йĕпкĕн хура?

Тĕнчемĕр — улшуç.
Ылмашăççĕ çут тухăç, сив анăç.
Кам пулĕ тÿрĕ? Улшăну саккунне пăхăнса
Паян тивĕçпе килмелле пек
шур çĕмĕртлĕ савнăç,
Анчах хура хуйăх хурах пек тухать шăвăнса.

Шап-шур çеçкерен
шурă-шурă çырла, ай, пулмарĕ.
Епле, тутансан, вăл чĕлхе-çăвара типĕтет.
Эй, хуйăх,
эс сивĕнмĕ савăнăç пулăмĕ мар-и?—
Сана astивсен, чун-чĕре хуралса пиçĕхет.
Хура çĕмĕртрен
шур саппунлă çеçке тухса ларĕ.

Çак мар-ши улшуçăн тĕллевĕ тесе сĕмленен.
Эй, савăнăç,
эс хура хуйăхăн мăшăрĕ мар-и —
Чĕре сураннe,
арăм пек, хăвшăнах, теп, сиплен.

Телей те инкек хушшинче
эс мĕн чухлĕ ан пурăн,
Пĕлсе пĕтереймĕн пĕрех савнăçпа хĕн-хура.
Ав, çемĕрт çеçки те,
шуратнă пир тейĕн, шап-шурă,
Анчах çырлисем, çырлисем
мĕншĕн йĕпкĕн хура?

* * *

Çӗр — чăнлăх калăпӗ те, ун виçи те,—
Çапла каланă халăх ӗмӗртен,—
Хура Çӗртен пылакӗ те, йӳççи те,
Çич тӗслӗ чӗр чечек хура Çӗртен.

Сан тупсăмна тупасшăн çӗр çӗрлерӗм,
Эй, Çӗр-анне, эй, пурăнăç чӗрки.
Сан кăкăрна чечексемпе тӗрлерӗ
Асамлă йӗп пек çутă пайăрки.

Илтетӗр-и? — çав чечексем юрлаççӗ
Илемлӗ, çичӗ тӗрлӗ сасăпа...
Хӗвел ятне хăватлă гимн хураççӗ,
Çӗр ячӗпе тăваççӗ, теп, тупа...

Илемлӗхе илемлӗхпе виçер-и,
Чӗрӗлӗхе чӗрӗлӗхпе виçер.
Хӗвелӗмӗр, эс аслăрах-и, Çӗр-и?
Хӗвелӗмӗр, эс хаклăрах-и Çӗр?

Ахаль-и çӗр çыртса тупа тăватпăр
Этем чысне юнпа сыхлас чухне?
Ахаль-и Хӗвеле пăхса калатпăр
Салтакăн тӳрӗ, чăнлăх сăмахне?

Ача пек киленсе сӗткен ӗметпӗр
Юратнă Çӗр-анне кăкăрӗнчен,
Хăват илсе çич тӗслӗн ешеретпӗр
Хӗвеллӗ самана ытамӗнче.

Апла епле тав тумăн тараватшăн
Хура Çӗре — ырми аннемӗре,
Апла епле тав тумăн вăй-хăватшăн
Саманана, хӗвеллӗ ӗмӗре —
Атте пек çитӗнтернӗшӗн пире.

## ХУРАТНА КĔМĔЛ

Юнашарах иккен тĕпчен
Хĕвел кулли те хĕл куççулĕ...
Ăçтаваскать юр айĕнчен
Хуратнă кĕмĕл пек шыв çулĕ?

Пуласлăх ăнтăлать мала
Мăн улăхри юпах тиха пек.
Çамрăклатан шанчăкпала
Çурхи куна чупса тухап эп.

Çӳрет пек умăмрах вĕçсе
Хавхалану — хама виçеллĕ.
Тавах. Анаççĕ-ха ĕçсем,
Паян ак сывлăх та йĕркеллĕ.

Тата мĕн кирлĕ тĕпчерен? —
Сăлтавĕ пур-мĕн савăнмалăх.
Анчах мĕскершĕн касçерен
Чуна шăнтать çурхи çанталăк?...

## КĔВĔÇСЕ МАР КАЛАТĂП

Хапсăнса мар, кĕвĕçсе мар калатăп:
Хăшпĕр çынсен утас çул-йĕрĕсем
Тӳп-тӳрĕ те тумхахсăр. Тăвалла та
Çил юхăмне кĕрсе утаç вĕсем.

Кирлех-ши вăй хума? — кĕтсе тăраççĕ:
Телей хăсх шăл çĕмĕрсе кĕрет...
Чечексене те çул май çех татаççĕ,
Яланлăх вырăн та — кĕрекере.

Телей лашисемпе чупаççĕ тейĕн
Çак пурнăçăн хитре катаччине.
Çул айккипчен эп пăрăнса иртейĕп —
Кансĕрлес мар вĕсен савăнăçне.

Кашнийĕн хăйĕн çăлтăрĕ, пĕлетĕп.
Анчах пĕр Çĕр çинчех-çке çынисем.
Эп пур — кашни çитĕнĕве илетĕп
Салтак пек аманса, ӳксе, çĕнсе.

Кучченеç пек сайра телейĕм питĕ.
Анчах вăл пурнăç хаклăш, шутласан.
Телейлисем хăйсен телейĕне те
Ман телее илеймĕç нихăçан.

## ПУТЕНЕ

Каçалăк тухас чух юлашки ывăçна путене тытăнать, теççĕ. Кам çав путенене тытать, вăл телейлĕ пулать.

*Халăх сăмахĕ*

Хĕвел те тухман-ха Хырай хыçĕнчен,
Саркайăк анчах сас парать хушăран.
Ыраш пуссипе сивĕ сывлăм çинче
Пыратпăр эпир васкаса çаруран.

Кашнийĕн пуçне виçĕ утăм виççе,
Анне чик сукмакĕ тухать таптаса.
Вара, сарă там кăкшăмран шыв ĕçсе,
Каçалăк пуçлать, пучаха чуптуса.

Эпир, шкул çулне те çитмен ачасем,
Ĕçе хăнăхса ӳсне мĕн пĕчĕкрен:
Кашни ывăçпа малалла куçнăçем
Вырма тăрăшатпăр тасан та тĕпрен.

Выртаççĕ куçа илĕртсе вĕççĕрех
Майра кӳлепи пек ыраш кĕлтисем.
Ӳксе пуççапмалăх пурах çав Çере —
Кăçал пушă пулмĕç ампар-кĕлетсем.

Каçпа та ирпе тĕрлĕрен кăмăлпа
Ыраш пуссипе эп мĕн чухлĕ утман?
Пиçен хупласа илнĕ кив хăмăлпа
Мĕн чухлĕ тата урана амантман?

Хĕвел тахçанах аннă Шетмĕ енне.
Каç сулхăнĕнче кăшт ĕçлер-ха тесе,
Хăй ывăннине палăртмасăр анне
Пиреваскатать илĕртсе, хистесе:

«Паян тумасан паянхи кун ĕçне,
Усал тĕлĕксем курăн эсĕ ирччен.
Тухасчĕ паян çак каçалăк вĕçне
Çурла тӳртĕшсем курăнми пуличчен.

Пĕлтик путене сар телей, тет, иккен,
Ик ывăçупа, ыльăм, тыт эс ăна».
Вара вылятап аллăма килекен
Ятран илсе панă çап-çут çурлана.

Қаçалăк вĕçленчĕ. Ăçта путени?
Ăçта вăл, ăçта мана пӳрнĕ телей?
Ялан ĕç кăпа-и килет ман тĕле,
Е тĕрĕс те мар халăх тĕрĕс тени?

Е эпĕ вĕçертрĕм ăна, е вăл çук?..
Анне, шахвăртса: «Тепринче тытăн»,—тет.
Çапах та каçпа килелле кайнă чух
Қаçалăк пĕтнишĕн ман чун хĕпĕртет.

Эй, пурнăç аннӳ, эпир халиччен
Мĕн чухлĕ вырман сан сап-сар тыррупа!
Телейĕ вара пĕр каçалăкĕнчен
Куçать теприне, йыхăрать ырана.

Çапла пулмалла, тен, çак пурнăç йĕрки?
— Çапла,— евитлет ăна сăвă йĕрки.

**УЯВ ИРТЕТ ТЕ...**

Паян телейлӗ эсӗ ҫав тӗрлех:
Сан ятупа ӗҫет хӑна-вӗрле.
Кӗрекӳне мухта-мухта юрлаҫҫӗ,
Қайран вара... хӑвна мансах ташлаҫҫӗ.

Телей яланлӑх килнӗн савӑнан,
Тус-юлташу ҫинчен пачах манан.
Хуйха-суйха эс уйӑрма пӗлетӗн,
Анчах пайламалла-мӗн телее те.

Уяв иртет те пушанать сӗтел,
Пӗччен юлсассӑн, савӑк мар тӗпел.
Ултав, паллах, малтан илемлӗ ҫитӗ —
Эп тӗрӗсне каларӑм та — ҫиллентӗн.

* * *

Ах, ыйхă вĕçрĕ ман. Çутăласса кĕтсе
Çĕн ĕмĕт çуралниччĕ, иçмасса.
Пурнăçланман хĕвеллĕ ĕмĕтсем
Çунтарчĕç ăшăма сĕм каç пулса.

Çĕн ĕмĕт, çĕнĕ кун, çĕн туйăмсем,
Сире кĕтетĕп эпĕ хăçанччен...
Кĕрхи тĕтре пек йывăр шухăшсем
Саланччăр сарă кантăк умĕнчен!

## КАЛЛЕХ ЭП САН...

Каллех эп сан ытамунта,
Кивелнĕ садăм, савнă садăм.
Телейлĕ пулнă вырăнта
Каллех эп шухăшлăн сывлатăп.

Ун чух сар çӳçĕме тивсе
Май çилĕ выляса иртетчĕ,
Улмуççисен тураттисем
Шап-шур сулмаклă чечекреччĕ.

Çĕмрен пекехчĕ ĕмĕтсем,
Таса та çылăхсăрччĕ ятăм.
Пĕр юрă çаврăмне кĕтсе
Теприн çинчен манса каяттăм.

Сире-сире çав купсене
Нумай-и ылтăн вăхăт иртрĕ?
Паян хăшпĕр ĕмĕтсене —
Вĕçмен хăлат чĕпписене —
Куптах тупса пӳспе эп витрĕм.

## КĔРЕКЕ МАР — КИРЛĔ КĔТЕКЕН

Пит пуян та сирĕн кĕреке,
Ҫăмăлăрсем апла мар иккен.
Тăхăнам та киввĕ кĕреке
Уттарам-и килелле майпен.

Хапсăнмастăп пурлăха, чапа,
Кĕреке ан тăкăнтăр тулса.
Алăри ҫеҫке пек ачапа
Арăм алăк уҫтăр йăл кулса.

Пĕтĕм савнăҫ тухрĕ ман тĕле.
Урăх ним те кирлĕ мар иккен.
Пурнăҫра тупмашкан чăн телей
Кĕреке мар — кирлĕ кĕтекен.

## ВĂЛ ВĂХĂТРА — МĔН КАЛĂН...

Вăл вăхăтра — мĕн калăн? — çамрăк пулнă:
Хыçалалла çавăрăнса пăхман,
Йăнăшсене курман та йышăнман,
Пĕр хăрамасăр çĕнĕ утăм тунă.

Паян асăрхануллă, шăп утатпăр —
Çул юппинче хăратпăр ÿкесрен.
Тен, çавăнпа теветкелрех ĕçрен
Сăлтав тупса сăпайлăн пăрăнатпăр.

Халь тăтăш-тăтăш асилме пуçлатпăр,
Шеллетпĕр иртсе кайнă савнăçа.
Вара иртейнĕ кунсенче пурнатпăр...
Çапла, тен, сулăнатпăр анăçа.

## САНА ЕПЛЕ ЭП ТИВĔÇЛĔ ПУЛАМ?

Эп, юратса курман пек халиччен,
Хăçантанпа тутун чечекĕнчен
Шерпетлĕ сыпкăм юрату ĕçетĕп.
Çапах тăранасса пĕлместĕп эпĕ.
Ан калăрсам пĕлмест тесе пиле —
Қаллех çĕнĕ чечек тупас килет.

Чееленсе пурнас йăла-мĕн çук,
Шутлатăп ачапча пек тепĕр чух:
Эп юратсан, юратмалла пек эс те...
Анчах юратнине те ĕненместĕп.
Юратăвăм, эс ĕмĕр манпала,
Сана епле эп тивĕçлĕ пулам.

Эй, пурăнăç, эс аслă юрату,
Тату пулсан тата хитре яту.
Қашни куна пĕрремĕш хут куратăп,
Қашни куна юлашки хут пурнатăп.
Ан калăрсам пĕлмест тесе пиле —
Қашни куна çапла пурнас килет.

Ултталани тесе ан шутлăрах —
Çĕн куп татах та лайăхрах.
Мĕн тăвăн, тусăм? — юрату вăл суккăр,
Ана пăхăнтарма меслет те çук-тăр.
Мана эс, пурнăç, тивĕçлĕ пулсан,
Ан кăларсам вĕри ытамунтан.

## АТТЕНЕ

Хĕрсем ута çулнă чечен улăхра,
Хитре кайăксем савăк юрă юрланă.
Хĕвел йăл-йăл кулнă сенкер уçлăхра,
Тавралăх туллин, уççăн-уççăн сывланă.

Анчах пĕринче, вăрçă тухнă тесе,
Хăрушă хыпар сарăлать хир-хир урлă.
Мана эс, атте, сăпкаран çĕклесе
Чуптунă та тухнă вăрçа тарăхуллăн.

Хĕрсем утă çулнă салху улăхра,
Хитре кайăксем хурланса юр юрланă.
Хĕвел тĕксĕмленнĕ синкер уçлăхра,
Çĕршывăм аманнă салтак пек сывланă.

Пуç хунă çынсем çапăçу хирĕнче.
Атте, эс унтан каялла таврăнмарăн.
Ларатпăр анне чĕркуççийĕ çинче
Ик тăлăх, чĕкеç чĕпписем пек, мăнтарăн.

Мана тек курман эс, йĕрсен—йăпатман,
Пылак çитермен, сиктермен сăпкара та.
Кунсем иртнĕçем сарăхса пыракан
Салтак çырăвне эп пĕтев пек упратăп.

Çут шуçăм килсен çирĕмри куççенче
Сÿнейрĕ пуль çăлтăр—çунатлă çут ĕмĕт.
...Ман паттăр атте, манăн ĕçĕмсенче,
Ман ĕмĕтсенче пурăнатăн эс ĕмĕр.

## САРТ ÇИНЧЕ

Вăй-халлă сисĕм пур-ха халлĕхе.
Çак сăрт — çар пуçĕн вырăнĕ, туятăп:
Йĕритавралăхри илемлĕхе
Куçпа эп çавăрса тытса тăратăп.

Апла эп çĕнтерӳçĕ паянтан,
Апла Парнас çинче эп — савăк сăвăç.
Çĕнтерӳçе хĕç витмĕ нихăçан,
Поэт ĕçне ялаплăх сума сăвĕç.

Эй, чăнлăхăм, ултав алăкĕнчен
Кĕрсе тухан та урăхла килетĕн:
Çак кăшăл пек хитрелĕх ункинчен
Тухаймăп хăтăлса эп ниепле те.

Апла çав çĕнтерӳçĕ тыткăнра,
Апла эп читлĕхе вĕренне кайăк?—
Турилкке пек çавра уçланкăран
Пуянлăха епле илсе тухайăп?

Эй, тусăмсем! Пурнас чух савăнса
Кулянмалли те тупăнать арçыншăн:
Тăратăп халсăр князь пек шутласа —
Хитрелĕхĕн хуçи-ши эп, тарçи-ши?..

* * *

Арпашать çут тĕнче: умăмра те тăшман,
Те çăлма тухакан хурăнташ-хунтăш ман...
Саккăрла явăнса çаврăнать çил-тăман,—
Вăй та çук, май та çук ăна хирĕç тăма.

Урам урлă йĕркен выртса тухнă кĕртсем —
Картишне кĕреймен вилнĕ шурă хурсем.
...Тен, çапла ир енне майĕпен вăй пĕтсен
Ӳкĕп те нихăçан та тăраймăп, туссем.

Саккăрла явăнса çаврăнан самана
Унччен хи çул çине кăларать-ши мана?
Шурă-шурă кĕртсем, вилнĕ шурă хурсем —
Сăввăма кĕреймен шурă шухăшăмсем...

* * *

Тĕнчемĕр тăваткал тесе ма ытарлăн калатчĕç?
Юмах-и, чăнах-и — ĕненнĕ ăна чиперех.
Çаплаччĕ чăнах та, эпир çамрăкрах чух çаплаччĕ:
Тăвата енне те çулсем тараватчĕ пире.

Тирпейсĕр салатнă картсем пек мĕн пуранна кунăм
Шур хутăм çине кĕрсĕмесĕр выртать çаплипех.
Килес телее пултăрах!—кăшт хуçăлнă чунăм
Хупмасăр хăварнă кĕрхи укăлча хапхи пек.

Тĕнчийĕ çавах, енĕсем те çаплах ун тăваттă.
Мĕн улшăннă? — Кĕр еннелле аннă вăхăт кăна.
Апла хывăх пек салатса тĕрĕс мар эп тăватăп
Шăпа шутласа парнеленĕ малашлăх куна?

Унччен çут тĕнче çулăхсах, тен, мана ыталатчĕ...
Мĕн-ма, пархатарсăр, çавна хаклама эп пĕлмен?
Епле пĕр енне талпăнаттăм эп — ирĕк хăлачĕ,
Хыçа юласса тепĕр енĕ аса та илмен.

Халь акă, тĕнче ытамне пушатса пынăçемĕн,
Хамах çулăхса ыталатăп ăна, йўнсĕрскер.
Мĕн-ма юратса пĕтермен эп тăваткăл тĕнчемĕн
Тăвата енне те пĕр пек юратма килнĕскер...

* * *

Кам хăйнă кашкăрла туртса илмешкĕн
Ун çăкăрне тăр-кăнтăр кунĕнче? —
Пуçа чиксе эп тăтăм çавă мĕскĕн
Ыйткалакан инкекĕ умĕнче.

Тантăшăмсем те сумлă кӳршĕ-аршă,
Çапла эп мĕскĕн тăнине курса:
«Мĕн татăлатăн,— терĕç,— кирлĕ маршăн?»
Вара мăраннăн утрĕç çаврăнса.

Каçхи апат валли хăварнă çыртăм
Улма хушса пĕçернĕ çăкăра
Илсе эп килтĕм те ăна тыттартăм
Тата кăшт патăм тутлă сухăра.

Ыр тунине вăл тавăрмашкăн тивĕç
Ыр тунипе тесе шухăшламан.
Атте-анне ĕçрен килсен мĕн çиĕç
Тесе кăна хăрарăм эп, айван.

Кашнин чĕри туртса сурмалла мар-и,
Умрах выçса вилет пулсассăн çын?
Тавах! Атте усал куçпа пăхмарĕ,
Аппа та пулчĕ ним сăнамансçи.

«Çын хуйăхне эс ăнланма пуçларăн,
Апла çын пултăн»,— терĕ те анне —
Те савăнса, те хурланса, мăнтарăн,
Куççулĕпе йĕпетрĕ саппунне.

Унтанпала мĕн чухлĕ вăхăт иртрĕ,
Чул хушшипе шыв юхнăн хĕсĕнсе.
Мухтавсăр пуçăма кăвак кĕл витрĕ,
Куçра тамасть малашлăх хĕвĕнсе.

Çут ӗмӗтсем çунса пӗтсен, йӳç тӗтӗм
Сарăхтарать улма пек сăнсене.
Пӗрех вăйсăррисен хутне эп кӗтӗм,
Пӗрех шеллерӗм мӗскӗн çынсене.

Ман пурнăçа манран туртса илесшӗн
Тăшман çава тытса сулсассăнах,
Çав мӗскӗнсем мана кăшт хӳтӗлесшӗн
Хута кӗрсе каларӗç-и сăмах?..

Çапла иккӗленсе сывлатăп ассăн:
Элле тӳрккеслӗх ӗмӗрӗ çитет? —
Çын хуйхине çын ăнланми пулсассăн,
Тӗнче вара пӗтмеллипех пӗтет.

Çук, çук! Çынра çунса кайман-ха çынлăх,—
Пӗр виçепе виçес-и эртеле!
Мана çăлакансем, сире çӗр çуллăх
Хам сывлăхран катса парам телей.

Пӗрре эп савăнтăм, тепре хурлантăм —
Чăна эп хутăм чăнлăх йӗннине.
Анне, аннеçӗм, халӗ тин ăнлантăм
Ун чух эс мӗншӗн, мӗншӗн йӗнине.

## Кĕлчечек

Епле пит шăрăх тăчĕ ун чухне!
Хуйхи-суйхи те пулчĕ тем чухлех.

Тусанпала хупланнăччĕ çулсем,
Пыр чӳхеме юлманччĕ çут çăлсем.

Вĕретчĕ вĕри çил пуçа касса.
Камах шутланă чĕрĕ юласса?

Мĕнпур чечек-ӳсентăрансенчен
Сăрт çинчисем малтан ӳкеç иккен.

Тĕпрентĕн эс те, мĕскĕн кĕлчечек.
Çунса кĕллентĕм эпĕ те сан пек.

Ылхан яратăп шалкăм тĕнчене,
Ӳксе тав тăвăп ырă çынсене.

Нумай çӳрерĕм эп тĕнче касса,
Сив Çĕпĕрте сив çăлтăр шутласа.

Каллех куратăп ак тăван çĕре.
Вăрманăмсем, сăртсем, салам сире!

Мĕнпур чечек-ӳсентăрансенчен
Сăрт çинчисем малтан шăтаç иккен.

Хура каçри хуркайăк çулĕ пек
Сив кĕл çинчех çĕкленчĕ кĕлчечек!

Ах, юрă евĕр чун уççи чечек,
Кĕлрен шăтса тухайăп-ши сан пек?

. . . . . . . . . . . . . . .

Тăратăп сăрт çинче эп тăр-пĕччен,
Тухса ӳкес пек ун ытамĕнчен...

## Куккук чечекĕ

Вылять-шим çак тĕнче? Хырай çинче
Чăпар куккук чарусăр авăтать,
Пĕр каçăхса каять, пĕр такăнать.

Кук-ку, кук-ку! Пĕр çывăх, пĕр инçе
Саккăрланать те сасă мал енче,—
Çук, татăк ахрăм мар, кун тăкăнать.

Куккук, куккук! Сăвапсăр çĕр çинче
Кун тăкăнса пĕтсессĕн, мĕн юлать? —
Çут уçлăхри пек тĕттĕм каç юлать.

Апла, кала-ха эсĕ, паллакан:
Килет-и те каять-и васкакан?

Куккук чечекĕ шăтнă каçсенче
Пĕлетĕп, çутçанталăк хуçăлать,—
Çу алăкĕ алтарь пек уçăлать.

Çак улшану майпен ман витĕр те
Тăвар шыв евĕр сархăнса иртет.
Ахаль-им ман шăмшакăма хуçать.

Пуçа ыраттарса, астăвăма
Тирпейлесе-йĕркелесе тăма
Иккĕленӳ иккĕленсе куçать:

Кайни килет-и е килни каять?
Тен, çут тĕнчи çавăрăнса тăрать...

Салам, çулла — пӳ янă сарпике!
Эс ман вăталăх йăмăкăм пекех:
Сăпайлă та именчĕклĕ, ĕçчен.

Тăм тирĕк пек çавра уçланкăна
Хĕвел, сар çу пек, çаврăнса ӳксен,
Питне сăвать çырла яра куна.

Ăçтан ун чухлĕ сисĕм сан, çулла?
Ыран качча каяс пике кăна
Чиперленме пултарĕ çаплалла.

Ылмашăвăн çӳçенчĕк чиккинче
Пăлат хĕç евĕр çивĕч-мĕн тĕнче.

Кашнийĕн хăйĕн вăхăчĕ,— мĕнех.
Пĕр аслă Куç пек çут тĕнче умне
Çавăрăнса тухар-и йĕрĕлчен,—

Кайран мĕн пулĕ? Асăнса çиме
Уçланкă пек çавра сĕтел çине
Сар çулçă — сар икерчĕ ӳкиччен

Умри куна тумлам-тумламăн мар,
Туй каччилле шалтах туса парар,
Курка тĕпне вара сапар çĕре:

Пĕри кайса тепри килмессерен
Пĕлĕтпеле Çĕр пулччăр виçере.

Йали-йĕркийĕ юлтăр ĕмĕрхи —
Виçе тытан шайлаштару йĕрки,
Ытлашшине илсе, çитменнине парать.

Çапла пĕр иксĕлсе, пĕр çитĕнсе
Хăй тĕллĕнех аталанан тĕнче
Хайне хăй витĕр çсх сăрхăнтарать.

Апла, пĕр пĕтĕмлĕх гармонипе
Чĕрре кĕмсĕр, унăн еккипе
Пĕр май утса тухар-и мал сине? —

Ĕненер çутçанталăк саккунне:
Çулла пĕтмесĕр пулмĕ кĕркунне.

* * *

Эй, мӗн чухлӗ чечек ҫӗр ҫинче,
Эй, мӗн чухлӗ чечек!
Инҫетри ҫӑлтӑрсен тӗнчинчен
Ҫимӗке аннӑ пек.

Уйӑрса тарам мар вӗсене —
Савӑнса ҫех тӑрам.
Уйӑрса эп парам кашнине
Ашӑ кӑмӑл-турам.

Тусӑмсем, килӗр, иртӗр мала,
Юрлӑр чун каниччен.
Тӑвансен пурте тан пулмалла
Мӗн ҫӗре кӗриччен.

Улӑхӑм — тӗс кайман улача,
Тӗррисем — хантӑсла.
Ентӗ ҫимӗк пӗрле те, анчах
Араскал ӑрасна.

* * *

I

Çамрăк чух пыраттăм вăхăтран малта:
Урхамах пек çивĕч, шухă ĕмĕте
Çăварлăхламасăр таканлаттăм та
Ыткăнаттăм тĕпсĕр, вĕççĕр инçете.

Кăмăла мĕн килнĕ е килсех пĕтмен —
Çитнĕ, курнă, çĕннĕ, илнĕ эп ăна.
Йывăрлăх мĕскер вăл? — эп ăна пĕлмен,
Çул çинчех сипленĕ тарăн сурана.

Çула май эп татнă шур чечексене,
Хĕрлине хăварнă, хурине курман.
Укăлчан сăрланă сарă хапхине —
Чухласах-и, çук-и — хыçăмран хупман.

Ӳкнисем — çухалнă, çухални — тек çук.
Ман ура айне, ав, ӳкнĕ вăхăт та.
Кирлĕ мар çур пурнаç, кирлĕ мар çур çул:
Чапĕ те хисепĕ — пĕтĕмпех малта.

II

Вăтăрта пыраттăм вăхăтпа пĕр так,
Ĕлкĕрсе çӳреттĕм урхамахăма.
Йăнăшнă пулсан та пĕр тĕлте пăртак,
Хам шăпа хуçиййĕ пулнă эп хамах.

Вăйпитти этемшĕн инкек çук иккен,
Ман тавра тĕнче хăй çаврăннă иккен.
Ах, епле тăратчĕ савăк самани,
Савнисем çумрахчĕ, çукчĕ савманни.

Чăвашсем ахаль-и пўрт хăпартнă чух
Никĕсе хураççĕ çирĕм пилĕк пус?
Ылтăнăм пулман ман, кĕмĕлĕм те çук,—
Чун уçмалăх пулнă çирĕм пилĕк тус.

Шутласа каланă сăмахсем хитре.
Виççĕ виçнĕ утăм — укçари пичет.
Мĕншĕн сывăрмарĕ вăхăт сехетре?
Мĕншĕн пур пĕтет те мĕншĕн çук çитет?..

III

Ватлăхра вăраххăн юлтăм вăхăтран,
Тин хуса çитеймĕп урхамахăма.
Кукленсе шыратăп эпĕ ăнсăртран
Çул çинче çухатнă йес таканăма.

Ав, çынсем килеççĕ шавлă пасара —
Эпĕ тухнă ĕнтĕ каялла кайма.
Ман илни-качкийĕ — лавăм çап-çара,
Чапĕ те, хисеп те çуккă пуç таийма.

Уява кĕтетĕн кĕтнĕн савнине,
Ташласа иртет те, тунсăх çеç юлать.
Курма çех-ши килтем çакă тĕнчене?
Куртăм та — ăна та хăварас пулать.

Тав туман курканап сим-пылакĕ çук,
Пĕччеnex ĕçмешкен пирĕн йăла çук.
Айăп ан тусамăр, хĕрлĕ чечексем,
Сирĕн хушшăра эп тăрăнса ўксен...

* * *

Пĕр иртнĕ вăхăт çаврăнаймĕ урăх.
Шур юр кайсан, çанталăк ăшăтсан,
Ытла таса та симĕс-симĕс курăк
Кив çулçă айĕнчен тухать шăтса.

Чи илемли, чи çамрăкки çур кунĕ
Ылмашăнан кунсен ĕретĕнче.
Сыв пултăр çак аталану саккунĕ,
Хăй тĕллĕн улшăнса пыран тĕнче!

Кам алă пачĕ, кам, ав, алă сулче,—
Çапла çанталăк веçсĕр тупăшать.
Пĕрре те тунсăх çукчĕ — кивĕ çулçă
Хускатрĕ те шуйхатрĕ шухăша.

Ан тарăх, ан шелле, ан çун, ан тăвăн —
Черет арпашăнман-ха пуçĕпех.
Йĕрки çапла-çке пурнăçăн, мĕн тавăн?
Çул çитнĕ вата кайĕ çулçă пек.

Пĕр иртнĕ вăхăт çаврăнаймĕ урăх —
Аттеçĕм çуккă ĕнтĕ тахçанах.
Иртет иккен те ырлăх, иртмĕ хурлăх —
Тухса йĕретĕп вăрттăн пахчана.

Вĕсем туса ĕлкĕрейімен уяван
Пыл сăрине ĕçетпĕр ку таран.
Явса пĕтерейімен сўсмен пăявĕ
Вĕçне тухман кунсем пек пăтара...

* * *

Мала утмашкăн малаллах пăхатăн,
Пăхатăн хыçала та вĕçсĕрех.
Çын кунçулне сăнанă пек сăнатăн
Паян хăв утса тухнă çул-йĕре.

Çак тӳпене çитме ансат çул пулнă —
Тумхахлă çул шыранă ман шăпа.
Телей патне çитме пĕр утăм юлнă —
Эп иртсе кайнă урăх сукмакпа.

Е тепĕр чух ак кирлĕ-кирлĕ маршăн
Хыпса çунни те пулнă пурнăçра.
Анчах, хама юратнипе те мар-ши? —
Чик юпине эп çухатман куçран.

Малашлăхпа тӳлетĕн те иртнишĕн
Сисмесĕр кĕскететĕн кунçула.
Пĕр çухату пĕр пĕчĕк çитĕнӳшĕн...
Аталану саккунĕ, тен, çапла?

Куратăр-и, епле ансат ман пурнăç:
Хăна пулса кĕрсе кашни куна.
Анчах малта те тӳрĕ çул, те пăрнăç,
Тен, утмалли те паяна кăна?

Çухалĕ пурнăç кăсăкĕ те маншăн,
Пĕлсе тăрсан кунçулăн еккине.
Пирс уç картсемпе выляттарманшăн
Тавах тĕнчен хăй тĕрлĕ йĕркине.

# ПӐЛА ХЁРРИНЧЕ



## Астăвăм

Ир еннелле çил-тăман чарăнсан,
Каç Вăхăтран юлчĕ-ши татăлса?
Кивĕ масар шурă пир пек тасан
Шăплăх çинче, ав, выртать тăсăлса.

Сарă çурта пек тăрать тирĕнсе
Тӳрĕ тирек пĕр чартак тĕлĕнче.
Шур хурăнсем, тунсăхпа перкенсе,
Тăлăх хĕрсем пек тăраç кĕрт çинче.

Эй, чĕркуçленĕр, çынсем,— çут тĕнче
Халь асăнать ырă несĕлсене.
Хаш сывласа асилӳ çутинче
Килччĕр вĕсем чĕрĕлсе çĕр çине.

Килччĕр те курччăр хальхи саманан
Савăнăçне те хуйхи-суйхине,
Шыв пек юхса-çухалса пыракан
Ырă аваллăх йăли-йĕркине.

*

Ун чух эп виç çулхи айван ачаччĕ.
Мĕскер ăнланнă-ши вăл пусăмра?
Анчах пичет çапса хăварнан юлчĕ
Ĕмĕрлĕхех çав вăхăт асăмра.

Тĕнче вăрçи тин пĕтнĕччĕ, çапах та
Нуши пĕтсех пĕтменччĕ вăрçăпа.
Юмахсемпе эп çывăрса кайсан та
Çĕрле сиксе тăраттăм выçăпа.

Те çил-тăман, те шур шуйттан асатчĕ —
Юр тултаратчĕ хӳмесем таран.

Вут-шанкине тупма ытла асапчĕ,
Сӳтсе илетчĕç вĕрлĕк картаран.

Ир еннелле кăшт уяртсан çанталăк,
Сăн палăрмалăх кăвак çут килсен,
Шăн кантăка вĕрсе пĕр пĕчĕк «алăк»
Уçатчĕç хăй çутмасăр аннесем:

Ҫам мăрйинчен йăсăрланать-ши тĕтĕм?
Вут амăш кам кăмакине савать?
Хивреленсе иртет те юр пĕр пĕтĕм
Шухăшсене тӳреммĕн тĕв тăвать.

Ҫăвар илме васкамалла-çке. Сивĕ
Упаленсе кĕретчĕ кĕпĕрех.
Юрагнă аттесем хăварнă кивĕ
Чаппан ăшăтаймастчĕ çав пире.

Ҫашни килтен, каварлашмасăр, харăс,—
Чунпа туйса-ши пĕрлĕх хăватне? —
Сукмак хывма тухатчĕ кӳрĕш-арăш
Пуссем патне те пĕр-пĕрин патне.

Эй, ирсерен йĕрленĕ урлă-пирлĕ
Чĕре тымарĕсем пек сукмаксем!
Пурăнăçа тытса тăран чи кирлĕ
Халал пулман-и эсĕр çав кунсем?

Пире шур юр пек шухăш хуплаймарĕ.
Тăм чӳлмекри шар кăварпа пĕрле
Ун чух чун ăшшине çӳретнĕ мар-и
Сукмаксемпе утса килтен киле.

* * *

Тинех улăштараймăн пурнăçа,
Вăл вуласа пĕтернĕ кĕнеке пек.
Хупатăп та тĕтреленен куçа —
Мĕн пулнине аса илетĕп эпĕ.

Вĕçмесĕр пурнаять-и кайăк хур?
«Шарланкă тăраять-и шавламасăр?»
Вĕçме пĕлменшĕн хамăн айăп пур,
Пупле пĕлменшĕн пултăм пулĕ сусăр.

Теме ĕмĕтленсе, тем хапсăнса,
Эп пурăнма кăна хатĕрленеттĕм.
Элле çаплах пĕтернĕ пурăнса?
Эллс малта йăсăрланать йӳç тĕтĕм?

Хăй паттăрне поэма вĕçĕнче
Поэт пĕччен-пĕччен хăварнă евĕр
Шăпа мана ик йӳплĕ çул çинче
Чи йывăр вăхăтра пĕччен хăварчĕ.

## Пӑла хӗрринче

Мӗн-ма кӑлкан пек кӑвакарчӗ ҫӳҫӗм? —
Кӑлкан савмасть-ҫке Арапуҫ енне.
Е кӑвакарчӑн, вӗлт вӗҫсе иртӳҫӗн,
Кӑвак тӗкне ӳкерчӗ пуҫ ҫине?

Шухӑшласассӑн — шухӑшӑм тем чухлӗ,
Ҫырас пулсассӑн — кайӗ вӑрӑма.
Иртнисене аса илсен — чун хӳхлӗ,
Асилмесессӗн — манӑп парӑма...

Чӗрем чӗрсе пӑрахнӑ шур хӑва пек,—
Тен, хуҫӑлӑп — пиле ҫухатмӑп эп.
Ҫакна кура пулсассӑн ҫын хисепӗ!
Ҫакна кура парсассӑн чыс-хисеп!

Хӑва ҫулҫи ҫаврӑнсан тӳнтерлӗ,
Пӗлетӗп эп ыран сивӗтессе.
Ҫак пурнӑҫӑн та паллисем тем тӗрлӗ,—
Аҫтан пӗлес ыран мӗн килессе?

Мӗнпур чӗр япалашӑн пӗр виҫе-мӗн:
Кайри мала иртет, малти — кая.
Анчах мӗскершӗн ҫӳҫ шуралнӑҫемӗн
Курас килет ман ҫывӑх тӑвана?

...Айюк! Шыв ҫиййӗн сикрӗ ҫутаяк.
Шухӑшӑма пат татрӗ — тав ӑна.

## Шупашкара килни

Эп кунтан, инçетрен, çул çине тухнă чух
Чуптуса ăсатса яракан çыннăм çук.
Айăпа эп кĕмен, çук ман парăм-кивçен,
Анчах темĕн çитмест, темшĕн питĕ кичем.

Мĕн-ха юлчĕ ӳксе вăхăт пуйăсĕнчен? —
Тĕмсĕлсе эп пăхатăп вакун куçĕнчен.
Тăрса юлчĕç çуртсем пухăна-пухăна,
Чӳрече çумĕпе вĕçрĕ шухăш кăна.

Акă Атăл умра,— те юхать, те юхмасть,
Хăв анса курмасан ĕненме юрамасть.
Ĕнертен паяна, паянтан ырана
Вăхăт хум пек иртсе улăштарчĕ мана.

Эп киле килесси — паянхи шухăш мар.
Сывă-и, сăвăçсем пурнакан Шупашкар?
Сан патна васкаса, юратса килнĕ чух
Мĕншĕн хирĕç тухса кĕтекен çыннăм çук...

* * *

Сар кун самани пуçăмран ан лăпкатăр,
Çапса йăвантартăр çулти сулнăка,
Аманттăр мана — яланхи салтака,—
Çут шанчăкăм çех аманса ан юлайтăр.

Çăка хапхапа ун тăпсийĕ те тӳнтĕр,—
Эп çех-и яла таврăнман сар ача?
Пĕтсессĕн çурт вырăнĕ, сӳнтĕр вучах,—
Çут шанчăкăм çех нихăçан та ан сӳнтĕр.

Çак çут тĕнчере суккăр вăй та пурах-тăр:
Епле çил туллать, çил силлет армана,
Парнас тăрринчен вăл пăрахтăр мана,—
Çут шанчăкăма çех унтан ан пăрахтăр.

Атте ăсталанă ик авăрлă алтăр —
Халь усă курмастпăр та — пушă ларать.
Мĕнпур япала кивелет, çухалать,—
Çут шанчăкăм çех тутăхса ан çухалтăр.

Çут шанчăкăма ĕненсе пурăнсассăн —
Ӳпкев-мăшкăла манса кайăп пачах,
Çурт вырăнĕ тупăп та чĕртеп вучах,
Каллех эп хăпарăп Парнас таррине
Юри юрлама çĕнтерӳ юррине.

Хам шанчăкăма ĕненсе пурăнсассăн,
Çынсем пек хайлав пурăнма пултарсассăн...

*В. Федоров майлă*

Ĕçлейместĕп. Тунсăх муритлерĕ.
Те сиссе туссем çав ман терте
Çул çине тухса çӳре кăшт терĕç,
Çул çинче вăл тунсăх йăлт иртет.

Акă эпĕ çул çинче, туссемĕр:
Патăръел, Чурачăк та Канаш...
Çырас шухăш ун пулман ан тейĕр —
Аллăмра ман шĕвĕр кăранташ.

Çитмен вырăн хăварман та ĕнтĕ,
Пултăм ялăмра та çула май.
Улшăну кунта нумай иккен те,
Асилӳллĕ вырăн та нумай.

Шухăшсем, пулассипе çырлахăр,
Ан хускатăр иртнине питех...
Каялла килме те вăхăт, ахăр —
Тунсăхлаççĕ, тен, кĕтеç килте.

Шухăшлатăп, тусăмсем, мĕн-ма-ши
Тунсăх сирĕлмерĕ умăмран?
Иртнĕ кун калла таврăнманран-ши
Е çулсем калла çаврăннăран...

## Мускавра, кану çуртĕнче

Асăма ан килтĕр терĕм
Иртнĕ йăнăш, иртнĕ кун —
Çулăма кунта тĕллерĕм,
Кантăр терĕм кӳтнĕ чун.

Куç тулли çап-çутă кӳлĕ,
Кăкшăм-курăк айлăмра.
Кичем мар-çке,— ма каçкӳлĕм
Ĕсĕклет кунта тăмра?

Кӳлĕ çумĕн йăрăс яхтă,
Çурчĕсем пит вырăнта.
Танлаштартăм та, чăнах та
Кăкшăмри пекех кунта.

Тавтапуç, паян эп сывă.
Тăрă кӳлĕ умĕнче
Выртнă та çыратăп сăвă
Малашри кунсем çинчен.

Çĕн çĕрте вĕр-çĕнĕ шухăш.
Пĕр-пĕрне тусла кĕтсе
Черетленчĕç çивĕч, шухă
Чĕкеçсем пек ĕмĕтсем.

Шĕвĕр вĕçлĕ сăркăч вĕççĕн
Эп тытам та вĕсене
Ĕмĕр-ĕмĕрлĕх вĕçмешкĕн
Антарам шур хут çине.

# Утă çинче

I. Çуллахи кун хаклă:
Иртенпех хĕрсе,
Ыткăнса сулмаклăн
Ут çулаç хĕрсем.

Ĕнтĕ кассăн-кассăн
Йăванать паккус.
Ĕç ăнса пырсассăн
Савăн, савнă тус.

Кăмăл — аслă улăх,
Савнăç — сăн-питре.
Кĕмсл саслă кулă
Араснах хитре.

Сывлăм сирпĕнет те,
Йĕпенет саппун.
Темшĕн çут хĕвел те
Çутарах çак кун.

Вĕл! вĕçет саркайăк,
Вĕлт анать каллех.
Пурте пите лайăх,
Пурте йĕркеллех...

II. Çутă пулнипе-ши
Лап ÿкет мĕлке?
Савнăç хыçĕпе-ши
Йăпшăнать инкек?

Ах, мĕн-ма текерлĕк
Веççĕр ĕсĕклет? —
Пер чăмать пуçхĕрлĕ,
Пĕр вĕçет пÿкле.

Çут тĕнче рехечĕ
Килмĕ ĕретрен:
Пĕрине — сехмечĕ,
Теприне — кĕтрет.

Хăшĕ, тен, суранлă
Савăк сăвăç пек,
Савăнма çуралнă
Ĕмĕр тăршшĕпех.

Хăшĕ — теветкеллĕ
Пулнăран-ши ку? —
Яланах инкеклĕ,
Яланах салху.

И паккус-паккусăн
Курăк йăванать.
Анчах мĕншĕн, тусăм,
Чунăм хурланать?

Чарăнать сасартăк
Шавлă ĕç чуппи:
Касăлнă чун-татăк
Кайăкăн чĕппи.

Çавасем юрлаççĕ,
Пуççене чиксе.
Тайăлса юлаççĕ
Хĕрлĕ чечексем.

* * *

Шухӑшсем — вӗри-вӗри хумсем
Ҫаврӑнса тухаҫҫӗ катаран.
Вак чулсем — чулланнӑ пулӑмсем,
Эпӗ хам, тен, тутӑхнӑ ҫыран...

Ай, паян ҫанталӑкӗ тӳлек!
Хускатмасть хӑва та ҫулҫине.
Те хӗвел, те пӗр ҫавра телей
Ӳкнӗ тӗкӗр евӗр шыв ҫине.

Ҫывӑраҫҫӗ ҫилхемес хумсем.
Асилӳллӗ шухӑш пӗртте ҫук.
Ҫам шутлатӑр рехетри кунсем
Иртессе тӗнче тӗк тӑнӑ чух.

Ах, тытса тӑраймӑп ывӑҫра
Сарӑ кайӑк евӗр савнӑҫа —
Тӑвӑл тухрӗ, хум ак хӑлаҫран
Хӑваларӗ кайрӗ канӑҫа.

Хум ҫапать те ҫырӑ ҫырана —
Шӑпӑрах вӗт-шакӑ тӑкӑнать.
Пирчесе ҫитмен чӗр сурана
Ҫӑваймасть — ыраттарать кӑна.

Шутлӑр-ха, туссемӗр, хӑвӑрах:
Савӑк кун нумай та пурӑнмасть.
Салпӑран кун, пӗр ӳксен вара,
Нихӑҫан иртессӗн туйӑнмасть.

Ятсӑр сӑвӑсем пек ҫак хумсем:
Пӗр пекех те, пурпӗр ӑрасна.
Пӗрисем чун ҫӳллӗш, теприсем,
Хум пулсан та, темшӗн шыв кӑна.

Тытăмĕ тĕнчемĕн — кам пĕлет?—
Тăвăлра е тăнăçра анчах.
Тăвăлра вăл пурнăç тет поэт,
Тăчă тăнăçра та тет ăсчах.

Тинĕс, тинĕс, канăççăр шыва
Хăвалан пулсассăн та умран,
Мĕншĕн çак татми тавлашăва
Эс татса парасшăн ман чунра?..

* * *

Пĕчĕкçеç пахча илемĕ —
Хĕрлĕ пурçăн мăкăнь,
Пурте лайăх чух çурта пек
Ан сӳнсем, ан тăкăн.

Пурăнма кăна пуçлать ав
Пур тавралăх сыввăн.
Анчах мĕншĕн çут куççуль пек
Туйăнчĕ çут сывлăм?

Аслă Атăл юхăмне те
Çавăрма пулать, тен,
Чуххăм пурнăç чуппине çех
Тавăрмашкăн çук, тен...

Вăхăт çитĕ те, ах, мăкăнь,
Тăкăнăн ак эс те.
Ман хăçан çитет черетĕм? —
Çавна çех пĕлместĕп.

* * *

Поэзире мĕскер тупса эп калăп
Нихçан никам та каламаннине?
Састаш валли те пур иккен кив калăп,
Тухма юрамĕ пĕртте айккине.

Йăлтах каланă: пуранăç çинчен те,
Юратупа сар чечексем çинчен.
Хитре танлаштару тупаймăп ĕнтĕ
Тесе пăшăрханатăп халиччен.

Юпах Пегас юртса-ши такăрлатнă
Хĕвел ўкейнĕ сăвă уй-хирне.
Шăтать-и те шăтмасть-и? — вăрлăх акнă
Шур хурăн лартнă лаптăк уй-хирне.

Татсах кам калĕ пуранăç пĕр енĕ
Çап-çут, теприйĕ хуп-хура тесе?
Темиçе хут каланă сăмахсенĕн
Сĕтекĕ пур-и, сăвăç тетесем?

Поэзи вăйĕ пурнăçпа пĕр тан-тăр:
Чул шăтарса тухан ўсентăран
Сăмсийĕ евĕр çĕн сăнар тупан та
Ун умĕнче ăнтан кайса тăран.

Апла пĕтмен иккен-ха ман мехелĕм.
Ан тив, кашни кун мар та, хушăран
Асчах курмалăх, сăвăç кевĕçмелĕх
Çĕн сăнарпа танлаштару шырам.

* * *

Поэт вăл чечек пек — нихçан ватăлмасть,
Поэт вăл чечек пек — хăрать.
Ан калăр ăна сивĕ кун сив сăмах,
Ан пулăр унпа пит кăра.

Ăна кӳрентерĕн эс çур сăмахпах.
Анчах шеллеме тăхтасам:
Поэт тарăхни сăввипе-ши тухать? —
Вăл ĕмĕрĕпех тап-таса.

Хитре сăвăпа шур чечек çурăлать,
Салху сăвăпа — хĕр чĕри.
Юратăр та савăр, хĕрсем, поэта
Çунса каймалла пек вĕри.

Поэзи — саркайăк вĕри вĕçевре,
Ик рифма — пĕр мăшăр çунат.
Телейсĕр пулма пултарать-и поэт? —
Вăл хăй çут телей салатать.

Хура пĕлĕтпе хуралать-мĕн Пăла,
Хушка пĕлĕтпе çуталать.
Поэт чун-чĕри! Ак мĕскер улшăнмасть,
Çанталăк кăна улшăнать.

* * *

Ытла та чӑнкӑ-ҫке телей ҫыранӗ!
Тӳлек ҫанталӑкра хум каннӑ чух
Унта чупса эп тухаяссӑм ҫук.

Хӑмӑшлӑхран хаш сывласа ҫил тухтӑр.
Пӗрех хутчен, чун савнӑ ҫырана
Хумсем йӑтса кӑларччӑрах мана.

Анчах кунта та тинӗсӗн саккунӗ:
Пӗр хумӗ теприне, ав, ӳкерет,
Мана каллех шала илсе кӗрет.

Е, шутласассӑн акӑ тепӗр майлӑ,
Ҫыран ҫине тухса выртсассӑнах,
Хӗвел ҫунтарса ямӗ-ши сӑна?

Ҫук, ҫук! Ҫуралнӑ тинӗсрех ҫӳрем эп.
Хум ҫийӗ — савнӑҫ, тӗпӗнче — инкек,
Унта лексе эп якалам чул пек.

Телейлисем телей мӗнне пӗлмеҫҫӗ.
Калам ӑсчах пек: ҫав телей тени —
Телей патне вирҫесӗр туртӑнни.

Апла шавла эс, тинӗсӗм — ман пурнӑҫ.
Хум хыҫҫӑн хум хӳтер ҫпне-ҫинех:
Ялан эп ӑнтӑлам ҫыран ҫине.

* * *

Хăрушă тĕлĕке татса вăраннăн,
Сасартăк тухнăн çутă чăнлăха,
Шарт сикрĕм эпĕ çак хура вăрманăн
Ĕлккенлĕхне курсассăн тăруках.

Элле унччен те кайăксем юрланă,
Мухта-мухта эп пуръннă куна?
Мĕнле курман эп халиччен сăрланă
Укерчĕк пек çавра уçланкăна?

Элле унччен те пулнă çакă симĕс
Чаппанлă чăрăш, шупăрлă çăка?
Шур çеçкерен тĕвленнĕ тутă çимĕç
Эп астивмен те — юлнă пусăха.

Хĕвел хĕртсе ирĕлтерсе пĕтернĕн
Чăт-чăтлăхри вунçич çулхи юра,
Таптаннă шухăша паян эп сиртĕм,—
Ан чăлхантартăр вăл текех юрра.

Пин сасă вăрманта. Вĕçсе хăпартăр
Тата пĕр сасă — юрă пуласси.
Мана ятарласа савăнтарма-тăр
Кĕрлет, янрать хаваслăх пăласси.

Калас текен сăмахăм пур-ха манăн,
Итлекенсем те пулĕç кăмăлтан.
Вăрантăм, тăвансем,— хура вăрманăн
Юрри пулса юлам-и паянтан...

## Кĕрхи уçланкăра

Инçе çултан кĕмерĕм эп киле те —
Çул кĕскетсеваскарăм вăрмана.
Килес темен çĕртен каллех килетĕп
Пĕрре телейлĕ пулнă вырăна.

Уçланкăра пĕччен эп. Тунсăхланă
Хырсем тимлеççĕ тахçанхи сасса.
Нумай пулмасть кунта телей вылянă,
Пĕр пĕчĕк çавраçил пек алхасса.

Паян вара сар çулçăсем ӳкеççĕ —
Сар савăнăç анать çунат усса.
Ман шанчăкăм ытла та пĕчĕкçеççĕ,
Ан ӳктĕрччĕ вăл çулçă пек çунса.

Эп хам та асилӳ ... Вĕçсе анаççĕ
Сар çулçăсем — ман иртнĕ кунăмсем.
Кĕлтунă пек вĕрин пăшăлтатаççĕ,
Тен, сан ятна, Мария, хурăнсем...

* * *

Юратăва çарпусĕ пăхăнать,
Юратăва асамçă ăмсанать.
Сар лĕпĕш пек, каçхи кăвайт тавра,
Шăпа та çаврăнать пуль ун тавра.

Каçса кайсах юрлаччăр шăпчăксем,
Çынсем пекех юратчăр чечексем.
Пĕрне-пĕри хĕрӳллĕн савнă чух
Умра нимле чару та пулас çук.

Питне çăвать ир тăнă çĕнĕ кун,
Йĕпенчĕ сывлăмпа кăвак саппун.
Арапуçсен кивелнĕ садĕнче
Мĕн-ма раснах хитре ирхи тĕнче?

Çĕн кун пек çĕнĕрен-и çуралас? —
Сан куçăнта ӳкерĕнсе юлас.
Çак телее çарпусĕ пăхăнать.
Çак телее асамçă ăмсанать.

* * *

Қaçар, қaçар. Çавна эп пĕлеймерĕм:
Çут çăлтăрла, таса шур çурталла
Çĕрле кăна çутатмалла пуль терĕм —
Тăр-кăнтăрла та мĕн çутатмалла.

Тен, тепĕр чух сăмахăма тытмарăм,
Тӳрккес те пултăм-и, тен, тепĕр чух?..
Анчах чуна сутмарăм эпĕ, арăм,
Ун пек йăла ăратнере те çук.

Туспа эп тус, тăван эп хам тăваншăн,—
Қашни хăйсен вырăнĕнче вĕсем.
Эс ăшă, ăшă кил хĕвелĕ маншăн,
Эс ман çырас хĕрӳллĕ сăвăсем.

Эс пулмасан çумра, мĕне пĕлтерĕ
Чап, пурлăх, хаклă шурă кĕленче.
Эс пулмасан, мана татса пĕтерĕ
Ытла хаяр, ытла хитре тĕнче.

Сар ылтăн сулă — çамрăклăх ытамĕ
Епле илемлетет аллусене.
Юр лекнĕ пуçăма пырса таям-и
Кĕрен чечеклĕ минтерӳ çине...

* * *

Çулçӳрекен хăрать-и сĕм-çĕрле?
Чикан лаша илет-и тӳлесе?..
Ахах пухмашкăн чăмрăм пуçхĕрлех
Хăватлă та асамлă тинĕсе.

Кунта пачах та урăхла çĕршыв,
Кунта, тен, пĕтĕмпех суя тĕнче? —
Мĕскершĕн сарă çавă тĕссĕр шыв
Куçа уçсассăн тинĕс тĕпĕнче?

Телей ванчăкĕсем пек ялтраса
Выртаççĕ ахахсем унта-кунта.
Мехел çитсессĕн — пурнăп савăнсах,
Меслет пулсассăн — юлăп çакăнтах.

Ĕненмелле-ши çак ăраскала?
Ак ывăçăм тулли ахах, мерчен.
Анчах епле ишсе тухам калла
Пĕр çаврăм юлнă сывлăш пĕтиччен...

* * *

Санран ман каçару ыйтмашкăн
Вăй-хал та, совеç те çитмест.
Ыйтсассăн та, таса юласшăн,
Мана нихçан каçармăн эс.

Эп айăплă. Тӳрре тухмастăп.
Хура хĕвел хăпариччен —
Мĕн пуласса курса тăрас-тăк!—
Çуралманни аванччĕ, тен...

Юлать-и парăмра хĕрарăм? —
Шухăшламан эп ун çинчен.
Анчах ма хуçăк йĕп курмарăм
Эс панă çăкăр таткинче?

Тата мĕн чухлĕ эпĕ утăп
Йăтса тур панă хĕресе:
Çын панă хамăн айăпа та,
Сан айăпна та çĕклесе?

* * *

Элеги пек салху эс яланах,
Аллу та ӳкнӗ хуҫӑлнӑ ҫунатӑн.
Анчах та ӑшунта хыпса ҫунатӑн,—
Хыпса ҫунсах вулатӑн сӑввуна.

Вара... сӳнсе ларатӑн та — шӑпах.
Ман ҫул-йӗрпе, тен, эс те утса курнӑ? —
Тӑвата йӗркерех вырнаҫнӑ пурнӑҫ,
Тӑвата йӗркерех ак пӗр шӑпа.

Эс хӑв та — чӗрӗ тӗвӗ, ырату —
Суран ҫине ӳксе суратӑн мар-и...
Тен, лайӑх ку? — шӑпа пире памарӗ
Ыратуран ҫуралнӑ юрату.

# Асилӳсем

Ман ырӑ тусӑмсем — асилӳсем,
Телейлӗ иртнӗ кунӑн мӗлкисем,
Эп аманса йывӑрланса ҫитсен,
Ҫулсен хуралнӑ чатӑрне сирсе
Мана каллех киле илсе каятӑр,
Каллех ачалӑха йатса тухатӑр,
Лӑпкатӑр, ачашлатӑр, йӑпататӑр,
Сурансене ҫуса ҫыхса яратӑр,—

Элле сыхласшӑн ман кунҫулӑма?
Элле... каллех, каллех асап курма?

Ман ҫӑткӑн тӑшмансем — асилӳсем,
Инкеклӗ иртнӗ кунӑн мӗлкисем,
Эп йӑл илсе ураланса ҫитсен,
Ҫулсен шуралнӑ чатӑрне сирсе,
Мана ҫичюталла илсе тухатӑр,
Каллех чӗр-тамӑка тӗртсе яратӑр,
Касатӑр та ваклатӑр, ҫунтаратӑр,
Суран ҫине тӑвар сапсах тӑратӑр,—

Элле варса илесшӗн пурнӑҫа?
Элле тӳлевлӗ тунӑ савнӑҫа...

* * *

Хĕрлĕ пилеш лартрăм пӳрт умне
Усал-тĕсел килсе ермессе.
Улталантăм, тусăм,— алăк умне
Шăпа килчĕ инкек тиесе.

Йăли-йĕрки халĕ урăхла,
Пĕлсе пĕтереймĕн уçăмне.
Ĕнтĕ те хурлăха, те ырлăха
Хура пилеш лартрăм пӳрт умне.

Пурнăç ытлă-çитлĕ килнĕ чух
Çырлисене татма ан васка:
Хĕрлĕ пилеш йӳçĕ, ай, чăтма çук,
Хура пилеш ытла тăкăска...

* * *

Шайлаштару йёрки, тёнчем, пур сан:
Тăкак мĕн чул — ун чухлĕ перекечĕ.
Çак пурăнăç палан çырли пулсан,
Поэзи — ун ӳсĕртекен шерпечĕ.

Хуйăхăма сиреп ăна сыпса,
Унра хальхаççăн çăлăнăç шыратăп.
Чиркӳ чанне тăваттăлла çапса
Янратнă пек, тăват йĕрке çыратăп.

* * *

Хура каçра çуралнă çăлтăрсем
Тата хитре, тата ялтра иккен.
Халхавлă кун çуралнă сăвăсем
Ян хурçăран та тасарах иккен.

Суранлине хушман суран сунма.
Анчах ĕлĕкренех мĕн-ма, мĕн-ма
Чăн-чăн поэт шăпи пӳкле тухать?
...Е вăл ăна хăй шыраса тупать?..

* * *

Санрав * та суккăр-мĕн усал шăпа —
Ни калаçма, ни ӳкĕте кĕртме.
Тăваттăлла ташланă ташăпа
Ана эп пултараймăп илĕртме.

Инкек çине синкек илсе килсе
Сив кĕл сапсах тăрать ман пуç çине.
Элле пĕлмест вăл, ăссăр, эп вилсен,
Манпа пĕрлех çĕре кĕрессине?..

---

* Санрав — хăлхасăр, илтмен çын.

* * *

Аннеçём пилĕ умĕнче шăпах
Хура юпа пулса тăрать шăпа:
Сиксе каçма пултараймарăм,— çук,
Çавра кайса эп тупаймарăм çул.

Çапах та çухатмарăм шанăçа,—
Тăванăмсем, ÿпкев ан тăвăрах:
Усал шăпа паман савăнăçа
Шыратăп халь чун савнă сăвăра.

*   *   *

Хӑв шӑпуна хӑвах аван пӗлетӗн,
Шур юр пӗрчи — шур хӗлӗн пӗр чӗппи.
Пӗрех ман кантӑк умӗнче ҫӳретӗн —
Ҫаллех вӗҫмешкӗн хӑтланан эппин?

Ах, мӗскӗн юр пӗрчи, ах, манӑн мӗскӗн,
Ӳкетӗн те выртан чӗп-чӗр сӑнпах.
Чун кӗртӗттӗм сана тепре вӗҫмешкӗн,
Вара эп хам та вӗҫӗттӗм санпа.

* * *

Çеçке те çыр курăкĕ пултăр
Çырма хĕрринчи улăхра.
Çынра вара çынлăхĕ пултăр,—
Мĕн кирлĕ тата урăхран?

Тӳре айăпланă çынна та
Ан касăр, ан таптăр тӳрех.
Хамра пуррине çех ыйтатăп:
Çынсем, пуларсамăр сӳрек *.

---

* Сӳрек (авалхи сăмах) — çынлăх.

* * *

Хула урамӗнчи вӗрене
Те пурӑнма кӑна вӗренет?
Вӗлтӗр кӑна вӗлтӗр вӑррине —
Сар ҫунатлӑ ылтӑн юррине —
Ма вӗҫтерет сивӗ чул ҫине?
Ма пӑрахать таптав ҫул ҫине?

* * *

*Г. Юмарта,* унăн парне
кĕнекине явап парса

Мана эс «авăнми тĕрек» сунатăн,—
Пĕлместĕн-им эс манăн инкеке?
Вĕçем тесессĕн — хуçăлнă çунатăм,
Тӳсем тесессĕн — вăйăм çук текех.

Вута вутпа сӳнтерейместĕн, тусăм,
Сиреймĕп тунсăхпа тунсăхăма.
Анчах мĕн-ма сан сăввуна пĕр хушă
Вуларăм та — пусартăм ăшăма.

* * *

*Г. И. Безрукова*

Инкек çукки хăех телей тееççĕ.
Тен, тĕрĕс те çак ăслă сăмахсем...
Пурăнăçне çапла-шимirttereççĕ
Сăпайлă, çырлахуллă ăсчахсем?

Инкек çукки хăех телей тееççĕ.
Телей çукки поэтшăн — чăн инкек.
Дум спиро сперо! * Ĕмĕт пĕчĕкçеççĕ
Вут умĕнче вĕçен сар лĕпĕш пек...

* Шухăшлама пултаракан çыннан малашлăхĕ пур.

* * *

Тен, шухăшран эс чăмăртаннă пулĕ,
Çул çӳресе ĕшеннĕ, ырнă пĕлĕт?
Çил тустарать сана, çил пуçтарать,
Каллех таçта хăваласа ярать.
Çапла пĕччен эс тухиччен ăнран,
Ма çакăнса юлмастăн хурăнран?
Чĕнмест ыйткалакан пек тăлăх пĕлĕт.
Тен, шăплăхран вăл чăмăртаннă пулĕ...

* * *

Çук, вăхăт мар-мĕн — улшăнать тĕнче.
Тăхта эс, ан васка, пăхса илсем:
Хура пĕлис пек хура çĕр çинче
Хура пилешĕн шурă çеçкисем.
Çук, вăхăт мар — ылмашăнать тĕнче.
Йăлт урăхла кунта, пăхса илсем:
Шур пӳс пек шурă-шурă юр çинче
Хура пилешĕн шăннă çырлисем.

* * *

Ӳсес пулсан ӳсентӑран —
Сирсе тухать тӑва.
Хӑрас пулсан — тымар таран
Хӑрать вӑл,— мӗн тӑван?..

Шӑл ҫӗмӗрсе кӗрет телей —
Пӗр килмеллех пулсан.
Ҫитет телей те ман тӗле —
Пӗр ҫитмеллех пулсан.

Ҫулать пире, ҫулать «ҫава»,
Ҫаю шӑтать ҫулсан.
Пурнасчӗ-ха, тӑван, ҫавах —
Пурнас кунсем пулсан.

* * *

Çĕршер çулхи аваллăха
　　çунат çине илсе
Çăхан вĕçет, хура мĕлки —
　　ман хулпуççи çинче.
Мухтав утне тăварчĕ-шим? —
　　тăмасть вăл кĕçенсе,
Мĕлкен те йывăрăшĕ пур,—
　　каяймăп эп инçе.

Йывăрланса çитсен тумлам,
　　пуçхĕрлĕ ӳкнĕ чух
Кăшт тăхтаса тăрать, аюк...—
　　чĕрвилĕм умĕнче.
Тумлам тумлать.
　　Тен, ман куççуль? —
Никамăн та ĕç çук.
Пĕр пăлханмасăр йышăнать
　　улшăнава тĕнче.

* * *

Ура айне ӳксе чăлханчĕ каçĕ,
Сӳнет кĕрен чечеклĕ вĕлтĕрен.
Шур чечексем пуçне чиксе лараççĕ,
Шур тутăр çакнă тейĕн пĕкĕрен.

Мана ӳкĕтлесе-ши ӳхĕ пĕчĕ
Парах эс ĕненме çынна тесе.
Пĕрех эп утрăм, пуçтахскер, пĕр пĕчĕк
Ĕненĕве ялав пек çĕклесе!

## Марий-Эл

*Георгий Иванович Безрукова*

Ман пуç тăрринче аслати аванса авăтсассăн,
Хĕçсем хуçăлса ӳкнĕ евĕр çут çиçĕм çиçсен,
Ача пек эп сан ытамна пырса ӳкрĕм,— тархасшăн,
Анне пек ăнлан та мана, уншăн ан çилленсем.

Сăваплă та Хĕрлĕ хула * халиччен эп курманччĕ:
Саламлă сăмах пек кунта витĕр хĕрлĕ пилеш.
Эп ун йӳççине кăшт тутантăм та — чунăм хурланчĕ,
Анчах вăл сипетлĕ çырла иккенне те пĕлес.

Ерехмет, тау-тав! ** — усалсен вăйййине эс кĕмерĕн,
Йышран уйăрмарăн мана эс, усрав ывăлна.
Хура Атăл урлă хитре асаматăн кĕперĕ
Çĕкленчĕ те — патăн мана пĕр турам раскална.

Пĕлменччĕ: çăлсем Марире мариллех-çке юрлаççе,
Ай шăнкăр та шăнкăр çăл евĕр пуплет-çке мари.
Çак килĕшӳре, ахăртнех, сăвăçсем çуралаççĕ,
Çак килĕшӳре пурăнать-мĕн поэзи турри.

Пĕр евĕр шăпаллă çынсем пĕр-пĕрне сума сăвĕç,
Сăмахсăр ăнланĕç вĕсем пĕр-пĕрин туйăмне.
Эп, Çеçпĕл çĕршывĕн хĕрхӳ эмелне сыпнă сăвăç,
Виç çеçпĕл, ик эккĕл *** хуратăп Чавайн умне.

Тĕрленĕ кĕпер умĕнче чарăнатăп та акă
Улма та чăпар утăма эп ярап тăварса.

---

* Пошкар-Ола Хĕрле хула тени пулать.
** Тау-тав — тав самахĕ.
*** Эккĕл — чечек ячĕ.

Тĕне кĕртнĕ пек чӳхесе кăларать те Кокшага
Тăшман туртса илнĕ вăя та парать тавăрса.

Мари-тӳрекпе кӳршĕлле килекен Килемары,
Кунтан эп калла кайиччен çут Пăла хĕррине
Сирс асăнмалăх çырса хăварма кирлĕ мар-и
Пĕр-икĕ çавра анатри чăвашсен юррине? —

Уртăш йывăççи, уртăш йывăççи
Туй пĕкки тума аванччĕ.
Ырă утсене ытла йывăр-шим? —
Хăмăт тивнипе аманчĕç...

* * *

*Хасан Туфана*

Шаккурӑн шап-шур урхамахӗ, тен, иртрӗ,
Ҫуна хыҫӗпе ҫил-тӑман кӑларса? —
Шуратнӑ хӳме пек ҫӗкленчӗ юр, ӳкрӗ,
Утас ҫулӑма картласа хӑварса.

Кӗртсен ҫийӗпе саламат, тен, ташларӗ? —
Темле усал вӑй юпалать пек юра...
Тӗнче те мана хирӗҫле вӑй пуҫларӗ:
Тавралӑх шап-шур та — куҫра хуп-хура.

Шӑпамҫӑм, апла эс мана пӑхӑнтартӑн?—
Гипс хунӑн шуратрӑн поэтӑн сӑнне.
Анчах ҫич юта ахалсх савӑнтартӑн:
Эп палӑк пулса тухӑп ҫут ҫуркунне!

* * *

*Нестер Янкаса*

Юлашкинчен вилмеллипех амантăм.
Асаплă пулчĕ пурнăç, çул — инçе.
Алла çитичченех аван ăнлантăм:
Çитменлĕхĕм — çынна ĕненнинче.

Хăтар тертĕмсенчен часрах, мехелĕм,
Хĕрес çумне Пилат пек пăтала.
...Касса пăрахнă пуç пек чӳк хĕвелĕ,
Ав, кусса ӳкрĕ юнлă Атăла.

* * *

*А. И. Мефодьева*

Савӑнӑҫа илсе пӗтертӗм, юлчӗ тертӗм.
Мӗн тӑвӑн? — пур пӗтет те ҫук ҫитет...
Чи чаплӑ вӑхӑта, тен, пурӑнса ирттертӗм —
Асаилӳ хуркайӑк пек вӗҫет.

Шӑпа паманнине те эп ҫитертӗм,
Ҫухатрӑм та вӗрентӗм хаклама.
Чи чаплӑ вӑхӑта эп пурӑнса ирттертӗм,
Анчах ҫырман-ха чаплӑ сӑввӑма.

Кикак хуркайӑкӑм тек йӑвине анмарӗ.
Элле халь чун-чӗри ун урӑх-шим?
Асаилӳ вара пурӑнӑҫпа тан мар-и,
Е вӑл ҫулса пӑрахнӑ улӑх-шим?..

Кунҫулӑм вӗҫсӗр мар ҫав... Шутласассӑн,
Ялан ҫӗр пус тулать-ҫке пӗр сумра.
Ҫырас чи чаплӑ сӑвӑ умӑмра пулсассӑн,
Пурнас чи хаклӑ вӑхат та умра.

## Çеçпĕл Мишшине

Сан йывăр шăпуна аван пĕлетĕп,
Мĕнпе вĕçленнине те... пурпĕрех
Мĕн-ма сана ялан аса илетĕп,
Мĕн-ма санра шыратăп эп тĕрек?

Çапла, çапла: пĕр пек тăмасть çанталăк,—
Пĕрре, ах тур, уяр, тепре — йĕпе.
Ав, шалтлатать уçса хăварнă алăк
Хăрах çунатлă салакайăк пек.

Касаккасси те, Шăхасан та, Теччĕ...
Çулсен хисепĕ ÿкрĕ çул çине.
Ачалăхра тĕнче епле хитреччĕ,
Ӳсерехпе çухатрĕ ĕлккенне.

Саманаран малта утма пĕлеттĕн,—
Тата епле вăл пултăр-ха поэт.
Ӳре хуркайăка хисеп тивет те,
Анчах та йывăрлăхĕ те лекет.

Малашлăх ачисен тăварлă терчĕ
Пĕр сан çине кăна тиенчĕ-ши?
Сана çуратнă саману пĕтерчĕ,—
Çавна юлашкинчен анлантăн-ши...

Çук, курман мар-çке тĕнчене эс — курнă,
Шыраман мар эс çăлăнăç кунне.
Анчах йăлмак çавракăш чухлĕ пурнăç
Шăнăçтарать-и сăвăçăн чунне.

Пурăнмаллаччĕ, Çеçпĕлĕмĕр, тетпĕр,
Савса юрламаллаччĕ пурнăçа...
Кам чăтса курнă элеке — пĕлетпĕр
Чатмашкăн питĕ йывăр иккенне.

Халь-халь çапас пек хăмсарса тăрсассăн
Таптавлă саманан талпас тарçи,
Ай-хай, туссем пĕр шухăшсăр, пĕр ассăр
Пуç ывăтса эсир утайăр-ши...

Ют çын хуйхи ютсемшĕн, паллă, çăмăл,
Ют çын суранĕ ютшăн çамăлрах.
Ма ăнланман? — поэт кăшт урăх çын вăл,
Ун чунĕ хуçăлать урăхларах.

Шуйттан пулсассăн, пулмаллах пек турă...
Эй, хуçасем, калас-тăк тӳррипе,
Сăвăçăра çăлас тесе мĕн турăр?
Е тăтăр чĕмсĕр, чунсăр тӳре пек?

Эсир тата — халь Çеçпĕле пĕр саслăн
Хĕрсе мухтакансем, кăшт маларах
Ма хăвăр хӳттĕре илмерĕр аслă,
Анчах та хӳтĕсĕр ывăлăра?

Лӳшкенĕ çумăр. Пирĕшти ытарлăн
Йĕрсе юрланă юрă уссăрах...
Виç пус укçа хурса ăна пытарнă
Йытта пытарнă пек... тупăксăрах.

Сăвап укçи, тен, чун çутишĕн пулчĕ,
Анчах савман-çке Çеçпĕл ют çĕре.
Илтсемĕр,— ун йăлттам поэзи учĕ *
Кунта хуçисĕр кеçенсе çӳрет.

Тăван çĕршывĕнче вyртан телейлĕ
Тесе ахаль калана-им чăваш? —

---

* Поэзи учĕ — Пегас.

Вилсен телей те пур, те çук — пĕлеймĕн,
Çапах та йăлана сума сăвас.

Анчах сана киле илсе килмешкĕн
Шур пӳс çитмест-и пирĕн е çĕр пус?
Е халĕ те чăваш ытла та мĕскĕн,
Е хуçасем çав териех . . . . уç?

Çак сăвăшăн мана сăмах та тивĕ,—
Шутланине пĕрех калам пăртак:
Чи çӳллĕ сăрт çинче выртмашкăн тивĕç
Эс, Çеçпĕлĕм, тăван Шупашкарта.

Сан кăмăлу пек сарлака халь Атăл,
Пĕр сăвă йĕркисем пек хумĕсем.
Сана кĕтсе хуралчĕ шур хăва та,
Сана кĕтсе ӳкеççĕ мăкăньсем.

Митта та ӳкрĕ, Хусанкай та кайрĕ.
Кăвар чĕреллĕ Çеçпĕлĕм, пĕлсем:
Пӳкле çулу çине çунса тухайрĕç
Тата мĕн чуль кăвар пек çеçпĕлсем...

Сан йывăр шăпуна аван пĕлетĕп,
Мĕнпе вĕçленнине те... пурпĕрех
Мĕн-ма сана ялан аса илетĕп,
Мĕн-ма санра шыратăп эп тĕрек?..

## Виктор Гюго

*Джерси утравĕ, 1838 ç.*

Çĕршывăм!
Курайăп-ши сана эп урăхран?..
Йĕри-тавра хăватлă тинĕс, тинĕс,—
Ах, аякран пăхмашкăн çеç вăл тикĕс,
Ах, тикĕс мар, кунçул пек, çывăхран.

Таçтан килеç те пухăнса хумсем
Ура айнех чупа-чупа тухаççĕ,—
Хисеп ятне, тен, реверанс тăваççĕ?
Салам илсе килеççĕ, тен, вĕçсем?

Çĕр аршăнлă утрав тыткăнĕнче
Çĕршыв тени халь унşăн çак-им ĕнтĕ?
Утравĕ чăн-чăнах акăлчансен те,
Анчах та Çурçĕр тинĕсĕ — тĕнчен.

Пăлхаварлă хушка хумсем çинче
Чарлан вĕçет çуйхавлăн, урлă-пирлĕ.
Çак пурнăçран ăна тата мĕн кирлĕ?
Çĕршывĕ унăн — ик çунаттинче.

Юрать-ха, кайăка вĕçме чарман,
Анчах çил хирĕç тепĕр чух ăна та.
Чарлан, чарлан! Эс канăçсăр ытла та,
Эс чун пулса вĕçместĕн-и, чарлан?..

Те тинĕс варринче, те хĕрринче
Караппалла вылять трагеди семе.
Те пурнăç варринче, те хĕрринче,—
Аçта çитсен талса анать-ши ĕмĕт?

* * *

*Владимир Александрович Иванова* — шанчăклă юлташăма

Çапла, хисепрен кăларсассăн, манаççĕ,
Истори иккен, çамăл ăслă пике...
Шап-шурă чиркӳ — иртнĕ вăхăт мăнаçĕ,
Çавра ылтăн купол сар çарăк пекех.

Сӳрс шăлĕ евĕр çыруллă ун чанĕ
Чĕлхесĕр этем пек кама халь чĕнет?
Ана тимлесе итлекен-тăнлаканĕ —
Ача пек пĕр айăпсăр куçлă инçет.

Хура чĕкеçсен урлă-пирлĕ вĕçевĕ
Сайра çапкаланă хӳме хушшинчен
Хура киçтĕкпе чар та чар туртнă евĕр
Тĕл-тĕл хуçăлать çунатсен вĕçĕнче.

Çулсем пусарса пĕчекжестнĕ ват карчăк,
Инкек сусăрланă уксах та чăлах,
Сире килĕртен мĕн амакĕ каларчĕ?
Е чунăр туртни, е йăпанчăк сăмах?

Алтарь умĕнче пуç пĕксе, пилĕк пуслăх
Çурта çутнипе сăхсăхса каç та ир
Элле чĕререн сăхакан пилĕк пуçлă
Çĕлен пек хуйха çĕнтересшĕн эсир?

Чӳклев йăлипе пуçласассăн та ĕçкĕ,
Чиркӳ йăлипе пуçтарсан та укçа,
Алай та пăлай телейсем хамăрпах-çке?! —
Çӳреймĕпĕр çын умĕнче пуç ухса.

Кунта эсӗр пухӑннӑ Ҫук шырама-тӑр? —
Пурнан пурнӑҫра ҫитеймен ҫынлӑха?
Анчах та ӑна тупайсан та — тупатӑр
Пӗрре калаҫмалӑх, ик-виҫ кунлӑха.

Килти кучченеҫӗн сӑвапӗ те пур, тен? —
Сӑйланӑр пыл сӗрнӗ икерчӗсемпе.
Халь хуйхӑ сире танлаштарнӑ та — пурте
Ҫӳретӗр кӑвик кӑвакарчӑнсем пек.

Телей вӑл пӗччен ҫӳрекен япала-ҫке...
Пӗрре ӑнсӑртран пуҫ ҫине кӑшт ҫусан,
Ана та пӗр пек уйарма пӗлмелле-ҫке
Уксах-чӑлахсем хушшинче те пулсан.

Пурнан пурнӑҫра ҫитмесессӗн те кӗмӗл,
Чун канлӗхӗ ҫиттӗрччӗ хуть, иҫмасса!
Иртет Аслӑ Вӑхӑт, юлать Кӗҫӗн Кӑмӑл
Ҫынра ҫитеймен ҫынлӑха шырасах...

* * *

*В. А. Иванова*

Ĕҫченлĕх, тирпейлĕх, сăпайлăх.
Ҫак вичĕ тĕп никĕс ҫинче
Хисеплĕн тăрать манăн халăх
Ытти халăхсем хушшинче.

Кĕрнеклĕ, мухтавлă хĕр-ывăл
Ĕҫрен писмесессĕн, вара
Татса татăлми эпир сывă
Салтса салтăнми сыпăра.

Хай свĕр хитре тăван енĕм,
Йăмралăхăн сиплĕ шăрши.
Ĕҫченлĕх пире парнеленĕ
Йăва пек типтерлĕ Ҫĕршыв,

Ана упрамашкăн тирпейлĕх
Пилленĕ маттур халăха.
Тирпейлĕ пулать-и тӳр пилĕк?
Пĕлет-и тытма пурлăха?

Сана ҫын тесе кам хисеплĕ
Хăвна хисепе хумасан?
Тăван сăмаху сан сипетлĕ,
Юрру ҫăл юррийĕ пек сан.

Ас-хакăл, пӳ-си те пит лайăх,
Чыс космос таран, тӳперен.
Пур чух килĕшет вăл сăпайлăх,
Ҫук чух та вăл кирлĕ пире.

Хăна-мĕн килсессĕн, чăвашăн
Уяв ҫитнĕнех темелле:

Юрлать тайăлса вăл тăваншăн:
«Çукки—çурмалла, пур—пĕрле».

Мĕн чухлĕ хăватлă çĕн туртăм,
Мĕн чухлĕ вăй-хал халăхра.
Чăвашăн пуласлăхне куртăм
Союзăмăрта — туслăхра.

Сăпайлăх, тирпейлĕх, ĕçченлĕх.
Тата мĕн сĕнес халăха?
Тереклĕ çак виçĕ кĕтеслĕх
Упратăр талантлă йăха.

* * *

*Аттене асăнса*

Кӳтнĕ чуна çутатса ăшăтасшăн
Татăк та татăк çунать тип кăвайт.
Çĕр тĕпĕнчи сасăпа чан çапсассăн,
Чул хĕреспе çĕкленет Бухенвальд.

Меншĕн паян уяртмарĕ çанталăк?
Вĕт çумăрпа татăлса вăл йĕрет.
Иртнĕ асап кунсене асăнмалăх
Палăк пек лартнă юпа пĕр ĕрет.

Кайăк вĕçсе иртеймен лагерь çийĕн,
Чунсăр чулсем те аманнă кунта.
Сӳннĕ те сивĕннĕ вилĕм лаççийĕ
Халь те çунать пек пăхсан умăнта.

Гетепе Шиллер çĕрне чыссăрланă
Çынçисене, ахăр, çын çуратман.
Мĕншĕн, фашист, сана çын ятне панă?
Мĕншĕн сана тăруках çер çăтман!

Манăн аттем те çухалнă хыпарсăр.
Тен, Бухенвальд çăтса янă ăна?
Эй, таварăу, сан таса çулăмусăр
Эпĕ сиплеймĕп чунри сурана.

Халĕ манра — тĕрлĕ çыннăн асапĕ,
Куç умĕнче — вилтăпри те мăян.
Çын инкекне çывăх туйрăм та эпĕ
Савнă аттем çулне çитрĕм паян.

Çутă малашлăх ятне ĕмĕр-ĕмĕр
Пурăнăр, пурăнăр, иртнĕ кунсем.
Эй, ан çухалăр, маттур салтаксемĕр,
Лĕпĕш пулса вĕçсе иртĕр, чунсем.

Сирĕн суранăрсене çыхса ярăп
Атăл çинчи акăш тĕкĕпеле.
Кĕллĕ çĕре тĕрлесе эп хăварăп
Тухăç пек хĕрлĕ чечексемпеле.

Çук! Çынлăхран кăларан сĕм тискерлĕх
Ан килтĕрех пуç çине нихăçан.
Йĕтĕр ыр çын çухалнишĕн текерлĕк,
Вĕçтĕр тискер этем çийĕн çăхан.

Чĕрĕлĕх, ирĕклĕх, пурнăç кĕрлевĕ
Сăввăмсенче ĕмĕр тăтăр çунса.
Савнă аттем калайман сăмах евĕр
Тухчăр вĕри сăмахсем çапăнса.

1985 çул — Бухенвальд

## Лаштра йӑмра

*Кукаҫине — Илья Филиппова асӑнса*

Лаштра кӑна йӑмра, лаштра йӑмра
Ӳсетчӗ ӗлӗк пирӗн урамра.
Саркайӑксем ларатчӗҫ ун ҫине,
Саркаланса юрлатчӗҫ юррине.
Ҫулла, хӗвеллӗ шӑрӑх кунсенче
Выляттӑмӑрччӗ ун сулхӑнӗнче,
Хӗлле ҫил чарӑнатчӗ те унта
Хуллен мӗн пуплешетчӗ-ши унпа?..

Ай, тӗк тӑмасть тӗнче, ай, тӗк тӑмасть.
Йӑмра шӑпи хальччен асран тухмасть:
Е кӗвӗҫтерне вӑл кӗлмӗҫсене,
Е тарӑхтарнӑ вӑл тиексене? —
Тӗпрен касса антарчӗҫ те ӑна
Сыпӑласа асатрӗҫ хулана.
Ҫулҫисене парахрӗҫ йыт айне,
Юррисене хестерчӗҫ хул айне.

Урам илемӗ пӗттӗр терӗҫ пуль,
Йӑмра йӑхне ан пултӑр терӗҫ пуль —
Тапта-тапта пытарчӗҫ вуллине
Ял тулашне, Ҫӑл Атӑк хӗррине.
Йӑмра вырӑнӗнче халь тунката
Пӑсса хӑварнӑ ҫурт пек, тупата.
Ҫил чарӑнса тӑмасть унта текех,
Ҫул ҫаврӑнса кӗмест унта текех.

Эй, ырӑ ҫутҫанталӑкӑм, тавах,—
Никам та мар — эс тивӗҫ мухтава:
Тапта-тапта пытарнӑ турата
Эс чӗрӗлӗх вӑйне паратӑн та

Кӗлле кӗрсе пиллетӗн кун ҫути,
Каллех ҫӗклетӗн пӗлӗте ҫити.
Ҫук вӗчӗхӳ санра, ҫук кӗвӗҫӳ,
Ыр тӑвасси ҫынна — мӗнпур ӗҫӳ.

Тавах, тавах! Паян ял хӗрринче
Вире енчен вӗрен ҫил хумӗнче
Кашлаҫҫӗ кӑрнатир пек йӑмрасем —
Хура ҫӗрпе шур пӗлӗт ачисем.

* * *

Ут утланса-ши иртрӗ утмӑл ҫул? —
Утса-чупсах кӗскелчӗ утма ҫул.
Анчах паян кунччен те асӑмра
Лаштра кӑна йӑмра, лаштра йӑмра...

* * *

*Ю. Артемьева*

Çу вĕçленчĕ, кĕркунне пуçланчĕ,—
Сисеймерĕмĕр те чиккине.
Чăнахах та, кам ăна ăнланчĕ,
«Чи хакли яш ĕмĕр иккенне»?

Çĕн куна кĕтсе илет те ĕмĕт,
Асилӳ яланлăх ăсатать.
Те юхать çут уйăх, те шур пĕлĕт?
Ĕнтĕ тем каять те тем юлать...

Витĕр хĕрлĕ палана та авă
Юмăç пек куратпăр витĕрех.
Йӳçĕ пултăр — пурпĕрех таса вăл,
Йӳçĕ пултăр — усăллă пĕрех.

Шур çурта лап сӳннĕ пек сасартăк
Чун кĕртен хавхалану пĕтсен,
Малалла чĕнсĕччĕр татăк-татăк
Пĕчĕк ялавсем пек ĕмĕтсем.

Тунсăхпа тусан пулатпăр, тусăм,
Хуйхăрса хуратăпăр сана.
Мĕн калам-ши лайăххи пĕр усăм,
Мĕн сĕнем-ши, тантăшăм, сана?

Тепĕр чух туссем те манса кайĕç,
Тепĕр чух пулан-и çын хурри —
Илемне савма манса ан кай эс,
Пĕртаван тĕç илемпе ырри.

Ыратсан та эс шӳтле, юлташăм, —
Кĕвĕçсе тăрайччăр пĕлĕшсем.
Такăнса ан татăр юрă-ташă,
Сар кĕпе çеç юхтăр вĕлкĕшсе.

Унчченхи пек Атăлăн хумханччăр
Чăнкă кăкăр евĕр хумĕсем.
Чунсене савни пек çупăрлаччăр
«Шупашкарăн лăпкă каçĕсем».

Унчченхи пек çавтăнса тухар-и
Пĕвеленĕ Атăл хĕррине.
Çĕнĕлле ура тапса юрлар-и —
Пўлейми чун-кăмăл юррине.

Çул иртсен те, чунупа ан улшăн:
Савăнса çўре те, савна тус,
Ыранхи телейшĕн, тепĕр çулшăн
Атăла пăрах эс пилĕк пус.

Эс мĕнле те — эпĕ улшăнаймăп:
Вĕçертмесĕр йывăç карлăка
Куç хупса пусатăп эпĕ хамăн
Илертўллĕ паллăмарлăха.

* * *

*Геннадий Айхине*

Салам, Мускав çынни.
Салам! Мĕнле пурнатăн?
Хыпар-хăнар çĕнни
Мĕн каласа паратăн?

Мана, килекене,
Кăштах эс хăналасшăн
Лартан кĕрекене,—
Йăли çапла чăвашăн.

Вара, куллен-куллен
Çăл шыв йăл илнĕ евĕр,
Юхать çемçен, хуллен
Анатъенсен пуплевĕ.

Çырулăх ĕçĕнче
Сану сархайна темĕн? —
Индус сăн-питĕнчен
Санра кăштах пур тейĕн...

Чăвашăн несĕлне
Тĕпченĕ майăн эсĕ
Ана индус енне
Туртатăн, тен, пĕлмесĕр.

Тĕнче поэзине
Хакланă чух сапайлă
Митта сăввисене
Картатпăр хамăр майла.

Мен-ма япалана
Пур чух тăкак тытатпăр?

Поэт кайсан кăна
Ĕçне-хĕлне хаклатпăр?

Шутламăпăр паян
Вĕçне тухан çула та —
Эс французла вулан,
Эп арапла вулатăп.

Чăн, вакласан — нумай
Пĕтет сăмахĕн тĕшĕ.
Пурăнăçна çул май
Эс иртгермен, сиктешсм.

Чăваш поэзине
Тĕнче умне кăлартăн.
Кăранташу çине
Ялан саркайăк лартăр.

Мехел çитнĕ таран
Меслет тупса вăй хутăн.
Пăхсассăн катаран —
Историре халь ху та.

Пĕлен, сар çу ӳкст
Пăтравлă уçласассăн...
Сана курса, поэт,
Кăшт тасалать пек сассам.

Эс юратни, çунни
Ытла та çывăх маншăн.
Тавах, Мускав çынни,
Чăвашлăха манманшăн.

Çак шавлă хулара
Эс таравлт пулни те
Шап-шурă флоксăра
Çемçе тĕссем курни, тен...

## САРĂ КАЙĂК ТĔКĔ...

Тайăлса ӳсет çӳл сăрт çинче
Пĕр тĕпренчĕк шăрчануй чечек.
Сăпасан, кунти вырăнсенче
Ĕмĕрсен мĕлкийĕ шунă пек.

Чăрăшсем тăратчĕç хуралта
Ĕлĕкхи чăваш чаппанĕпе.
Эп вара çап-çутă Çавалта
Хур пăхаттăм кунĕ-кунĕпе.

Сакăлталлă çул ик айккипе
Сарă кайăк тĕкĕ — сар чечек.
Сар ачалăх иртрĕ сиккипе,
Çак тавралăх çаплипех чечен.

## ПАРНЕ ПАМАÇÇĔ ПУРĂННИШĔН

Парне памаççĕ пурăннишĕн.
Чун еккипе килмест кунçул.
Пĕр пĕчĕк лаптăк тыр анишĕн
Тăрмашрăм эпĕ темĕн чул.

Пĕлетĕп, ваттисен халапĕ
Юнашарах мĕн чăннипе...
Мĕн тунипе çырлахмалла пек,
Лăпланмалла пек пулнипе.

Анчах умра вырман каçалăк,
Куç виçеймест сар тыррине.
Инçех те мар кĕрхи çанталăк,
Пухса кĕртес мĕн пуррине.

* * *

Çыран çине сике-сике
Хумсем алхасрĕç айăн-çийĕн.
Вăхăтсăрах çĕре ÿкет
Куççуль пек панулми çеçкийĕ.

Çил тухнă. Путсĕр, шухă çил...
Инкек çапла çапсассăн вирлĕн
Çумра эс кирлĕ, çывăх çын.
Сан ăшă сăмаху пит кирлĕ.

* * *

Те мансах пыратăн эс те,
Савнă çыннăм, савние:
Лĕпĕш пек вĕçсе килместĕн
Манăн чӳрече умне.

Тĕмсĕлсе аса илместĕн
Эс мана, тен, урăхран.
Чечексем пухса кĕместĕн
Ман пата эс улăхран.

Унчченхи пек, йăпанасшăн
Ытлашши салху чухне,
Пĕчĕк кайăк пек ачашшăн
Ӳкес çук чĕркем çине...

## Гете. Мариенбад элегийӗ

Эс тухрӑн та, сарӑ хӗвелӗм,
Ман Мариенбадӑм,
Мӗн чухлӗ ҫут ҫӑлтӑр
Сӳнсе ӳкрӗҫ-ши харӑсах.
Ют ҫын пӗтевне пӑхнӑ евӗр
Сана пӑхса тӑтӑм,
Ҫунса каясран та
Тӑмарӑм питех хӑраса.

Телей е инкек умӑмра?
Ик пусӑм, пӗр пуҫӑм.
Ейӳ янӑ туйӑм хыҫра та,
Умра — сем вӑрман.
Мана хавшатса хаварасшӑн
Эс килтӗн-ши, тусӑм,
Е ҫамрӑклӑха ахрӑм пек
Каялла тавӑрма?..

Усал ересрен урамра
Катӑркас ӳстереҫҫе,
Анчах утас ҫулӑм
Мӗн-ма уйрӑлайрӗ икке?
Хӑшне ман суйлас? —
Ана юмӑҫсем те пӗлмеҫҫӗ,
Маттур ӑсчахсем те
Канаш параймаҫҫӗ иккен.

Сана хӗвӗмре хӗстерсе
Усраймастӑп, хӗвелӗм,—
Эс, кӑнтӑр телне ҫитнӗскер,
Ҫунтарӑн та ярӑн мана.
Анчах сан ӑшшусӑр
Йӳҫсе хӑпараймӗ кӗвелӗк,
Ейӳ туйӑм чакӗ,
Ҫухатӑп умри вӑрмана.

Ун чух, тен, хитре сăвăсем
Хайлама та пăрахăп,—
Ялан вăйпитти
Никамах та юлман çĕр çинче.
Тен, тăрăп пĕр-пĕр кĕтесре
Хăрхăм евĕр хăраххăн,
Анчах халлĕхе эп пурнатăп
Чечек варринче.

Ан тив, ман малашлăх
Пуласлăхсăр, шанчăксăр пултăр,
Ют çын кураймасăр тăни
Ан хускаттăр чуна.
Паян саланас ярмăрккан та
Чĕл техĕмĕ пур-тăр:
Парнелĕх туяннă тавар
Çăмăллаттăр куна.

Тепре тĕл пулса каласçассăн,
Вăра, тен, çитет те,
Вăра, тен, лăпланăп тесе
Йăпататăп хама.
Мĕн-ма кун иртет те —
Çеçке пек типсе эп çитетĕп,
Мĕн-ма каç иртет те —
Пуçлатăп эп тунсăхлама?

Мана шелleме кирлĕ мар,
Тăхта, ан васка эс —
Поэт вал чул палăк:
Хўтлевсĕр, çапах кĕлмĕç мар.
Выртан шăрçана
Ман ура айенчен илсе кайĕç.
Çапах та мана
Çур хĕвел, çур телей кирлĕ мар.

Тӗнче йӗркисем пӑхӑнтарӗҫ
Вылявлӑ куна та,—
Ана пуринчен те аван
Анланать пуль ӑсчах.
Мӗн-ма юрату пӑхӑнмасть
Нимӗнле саккуна та? —
Килет те каять вӑл,
Юлать ыратӑвӗ анчах.

* * *

Манăçăн тусĕ — тусан
Ман ятăма хупласан,
Эп пурăнни тĕнчере
Пурăнманпа пурпĕрех.

Селĕм селемçĕ чунран
Çĕрĕ чĕрсе тăвас çук,
Чулçă шап-шурă чулран
Палăк касса тăвас çук.

Эпĕ нихçан та çырман
Сăвăсене пуçтарса
Сарă шăрçаллă сырлан
Ярĕ çыру кустарса.

* * *

1

Хитрелĕх умĕнче — хисеплĕ парăм.
Хитре юратăва, чăн, тивĕç эс.
Ҫайран мĕн пулĕ? — шутласа тăмарăм:
Тĕл пултăм та халь уйрăлас килмест.

Сăвва эс лайăх рифма пек кĕретĕн,
Ҫемми кăна кăштах хĕсет чуна.
Тунсăхлама пĕлнишĕнех пире, тен,
Шăпа хăй парнелет çак ыр куна.

Парне хакне пăхмаççĕ. Кирлĕ маршăн
Ҫапла хыпса эп çунăп-и вара?
Алла вĕрентеймен саркайăк мар-ши
Ҫемçен чĕвĕлтетсе ларать умра...

Парр! вĕçсе кайăн та — текех кураймăп,
Чĕркем çинче сана тытса лараймăп.

2

Телейлĕ чух телей ҫинчен шутламăн:
Кирлех-ши ик хĕвел чечек валли?
Асталăх ҫеҫ ҫитмест — чунра халь манăн
Мĕн чухлĕ сасă юрă тумалли.

Анчах телей ку вăхăтлăх, пĕлетĕп,—
Сан чĕрӳнте эп пĕр куна кăна.
Симпыллă кĕреке сыв пултăр тетĕп,
Тепре хăйса килем-и хăнана?

Пе́рпеклĕх ҫук. Шутлавлă ман ăса та
Сар ҫутă тивнĕ — хăварман пайран.
Паян хама савакана ăсатăп,
Кама кĕтсе эп илĕп-ши кайран...

Парр! вĕҫсе кайрăп та — тек кураймарăм,
Чĕркем ҫинче лартса савăнаймарăм.

3

Халь мĕншĕн ирĕк мар тахçан хам савнă
Пĕчченлĕхре? — Вăл маншăн халь инкек.
Иртсе кайсан ӳкет пуль çутă савнăç
Ура айне пĕр тĕссĕр тутăр пек.

Хĕвел анăçалла сулăннăçемĕн
Епле çак вăхăт васкама пуçлать.
Сана ăсатнă чух йĕрленнĕ çемĕ
Крещендо пек çӳлте, ак, хуçăлать.

Апла каллех — хавхалану пĕтет те —
Аманнă кăйкăр евĕр ӳкмелле?
Çухатнине ман тупмаллах, пĕлетĕп,
Ăсатнине кĕтсе ман илмелле.

Парр! веçсе кайрăн та текех килмерĕн,
Вĕçме сан хыççăн хамăн хал çитмерĕ.

4

Çул уçăлать утакансем валли çеç,
Савсах савма пĕлекене сăвап.
Çак тивĕçе пăхса телей валеçĕç,
Хитре сăнпа та курăн эс асап.

Çур килтĕн те кĕркуннепе ăсантăн,—
Апла çул май эс кĕтĕн ман пата?
Анчах та пурнăçа епле пулсан та
Çул майăн пурăнаймăн, тупата.

Тĕнче вăл аслă, енĕсем тăваттă,
Хăш еннелле çул тытăн-ши тата...
Пĕрех сана ÿксе эп тав тăватăп
Хал панăшăн çырма çак сонета.

Пĕр вĕçсе кайрăн та тек кураймарăм,
Тăраниччен сана юратаймарăм.

5

Тул çутăлнă чухне ĕмĕтленеççĕ,
Лса илме пуçлаççĕ каç енне.
Хăçан-ха вăл? — илемлĕ пĕчĕкçеççĕ
Аллусене чуптунăччĕ санне.

Сана эп шухăшра таçтах çитернĕ,
Теп, хăвăнтан хитре вăл, çутăрах?
Çапла, теп, Рафаэль хăех ӳкернĕ
Хĕр умĕнче вăйран кайса тăрать.

Юратăвăн хăйне йĕркине унăн:
Тутли те пур, йӳççи те тем чухлех.
Тĕл пулнă чух ытла хаваслă чупăм
Хĕссе килет уйрăлаяс чухне.

Черкем çиче текех лармасть саркайăк,
Кам айăпла? Камах татса калайĕ...

## ШУРĂ АКАШ ЮРРИ

I

Тĕл пулатпăр чунтан юратса пĕр-пĕрне,
Хурланса та çунса уйрăлатпăр.
Пĕрле чух телее те пайлатпăр пĕрле,
Пĕчченшерĕн — ӳксе тунсăхлатпар.

Халиччен те çунса эп пĕтмен-ши вара?
Ман чупра халь янран пурнăç маршĕ
Чĕрене çунтарса, хавшатса хăваран
Марнепбадан элегийĕ мар-ши?..

Талисман пек таса пулса юлĕ яту,
Чунтуни ирĕлсе сисĕм пулĕ.
Ырăссем калаш.ле, юлашки юрату
Шурă акăш юрри пулса юлĕ.

II

Лăпланса пурăнас тенĕ чух ман тĕле
Ак каллех ăшçунтармăш тухайрĕ:
Шурă акăш пулса вĕçсе килчĕ телей,
Шурă шухăш пулса вĕçсе кайрĕ.

Маларах, тен, вĕçсе килмеллеччĕ-ши ун,
Каярах, тен, вĕçсе каймаллаччĕ?.. —
Юратса пĕтермесĕр лăпланĕ-и чун
Унччен кăйкăр ĕмĕтлĕ каччăн?

Пурте вăхăтлăх канăçсăр çак тĕнчере:
Хура хуйăх та, сарă телей те.
Уйрăлу пуласса сисce тăнă чĕре
Тĕлпулу пуласса та сисет, тен?

Кил, савни, ыталам, ачашлам эп сана —
Пĕр самантлăх телей те телей-тĕр...
Шурă шухăш-кичемлĕх вĕçсе кайсанах
Шурă акăш каллех вĕçсе килтĕр.

## ÇУЛСЕМ САВАРСА ТУХЧĂР САН ПАТНА

Те ир тухсан юратчĕ, те кайран,
Те каласан юратчĕ, те чăтсан...
Çул хыççăн çул тухать Урал таран,
Çул хыççăн çул тухать çула татса.

Калас сăмахăм пурччĕ ман малтан,—
Калас теменнине каларăм, тен,
Çула тухмаççĕ пурнăç çăмăлтан,
Тухмаççĕ кĕрхи каç тăван килтен.

Хыçа юлать пусаруннă тĕкме,
Мĕлкийĕсем тараççĕ çутăран.
Каллех, каллех çул юппинче тăран,
Мана эс ăсатан каллех кĕтме.

Эс панă шанчăк пытăр çул тытса:
Кунçулăм тĕрлĕ кукăрсем туса
Каллех çавăрса тухтăр сан патна.
...Кĕлтунă пек пăшăлтатап ятна.

# ЧУЛ ÇИНЧИ ÇЫРУСЕМ



# КАВАЙТ УМЕНЧЕ

Е ку тӗлӗкре? Хӗм сапса вирхӗнеҫҫӗ
Пӑлхар уххисен иӑхӑртан сӑннисем.
Хӑлха янӑранӑн сассем ҫинҫелеҫҫӗ
Хӗвеллӗ кунсем тайӑлса пынӑҫем.

Аваллӑх! Қаҫхи улӑх тӑрӑх саланнӑ
Шур ут кӗтӳне пуҫтараймӑн тинех.
Аса илӳсем ҫеҫ ача пек пӑлханнӑ:
Каллех пухӑнасшӑн кӑвайт хӳттине.

Ашра, ҫапӑҫу хирӗнчи пек, пит тавлӑн
Хӗрет калаҫу, чӗм кӗртет чӗлхене.
Ялав пек ҫӗкленчӗ те ҫулӑм, пӑлхавлӑ
Йыхрав пек, хура сӗмлӗхре чӳхенет.

Апла эп сире сӑвӑра пуҫтарам-и,
Историн ҫухалнӑ тӗпренчӗкӗсем.
Чул крепӑҫ умра! Ритм пултӑр таранӗ,
Састашӗ вара — йӗкӗреш йӗтресем.

Мала, пӑлхарсем! Тӗссӗр манӑҫлӑх ҫулӗн
Йӗрне шухӑшпа та пулсассан пӳлер.
Мала, тӑвансем! Исмаэлӗн Миккулӗ
Малта ҫеҫ шантарӗ вӗр ҫӗнӗ Пӳлер.

Поэт халь ҫарпуҫӗ. Пӑхатӑп пӑлхавлан:
Аҫта чаплӑ ҫар, ҫӗнтерме пулнӑскер?
Аҫта ирӗке савнӑ халӑхӑм манӑн?
Акшар тӑвӗ пек чӑнкӑ кӑкӑрлӑскер?

Аҫта ирӗке савнӑ халӑхӑм манӑн?
Аҫта Атӑл урлӑ куҫ ывӑтнӑ ҫын?
Ыр ӑрӑмҫӑсен йӑлине те йӑлт маннӑ
Куккук кунҫулна шутлӑ авӑтнӑ-шим...

Ăçта çимĕкри чăвашла юрă-кĕвĕ?
Саркайăк ăçта савăнмашкăн анать?..
Пуç уснă ыйту паллисен уйĕ евĕр
Шур çӳçлĕ кăлкан çеç ӳксе хумханать.

Хыçра сурат мар — çухату хирĕ пулĕ,
Умра ыраш мар — ырату хирĕ, тен?
Эпир шутламашкăн ăста та — кам тӳлĕ,
Мĕнпур çухатушăн кам тӳлĕ пиртен?

Эпир-им паян çав мăнаçлă пăлхарăн
Мăнаçлă, анчах шуранка пепкисем?
Эпир-им паян çав мухтавлă пăлхарăн
Мухтанчăк, анчах халсăр тăхăмĕсем?

Эпир-им паян пурнăçа хак хумашкăн
Вĕреннĕ çынсем — пасарти сутăçсем? —
Çынран ирттерсе икĕ ĕмĕр пурнасшăн
Тусна та сутма хапăл пулнă çынсем?

Шерпет иксĕлсен, мĕн çиичсн-ши калаçĕç...
Ай, пурнăç, иртет те, ай, кăмăл юлать.
Мĕн-ма Атăл мар, ăшăхланнă Пăла çеç
Паян чăвашла шăнкăр-шăнкăр юрлать?..

Ăçта эсĕ пулнă, ман халăхăм, аслă
Пăлхар ирĕкне сыхлама тухакан
Қаç кӳлĕм кичем те, ир кӳлĕм хаваслă
Поэтăн пуçне каснă чух ятаган?*

Сана илтĕнмест-им шап-шур Шупашкарăн
Юнран тасатса хунă пĕр çуртĕнчен
Митта ахлатни те, асапçă хаярран
Ана кашкăрса хĕнени ӳкинчен?

---

* Ятаган — кукăр кинжал.

Мĕскер вăл тĕнчешĕн Янкасăн асапĕ,
Çырли ÿкнипех ÿкмĕ терĕп палан.
Ак çитрĕ самант! — кĕсъери вак укçа пек,
Йÿнелнĕ укçа пек эс юлтăн паян.

Тăрлавсăр йышна танлаштармăп сана эп,
Анчах та, ман халăхăм, сан ятупа
Санах пĕтермен-и? ...Тем йывăрăш айăп
Санра та паян, ав историк тупать.

Пĕлетĕп, эс халĕ те сыхă: пуканшăн
Элек вĕçтерсен пĕр панккав ян та ян,
Мана çула май хытăрах тапайманшăн,
Чулпа çапайманшăн чунтан кулянан.

Тĕнчи çаплалла йĕркеленнĕ пуль кутăн:
Ырсемĕ пулсассăн, Усалĕ пулать.
Христос çумĕнче çÿремен-и Иуда,
Пăлат хĕçпеле сых пулман-и Пилат?

Пÿрмен телее Пÿлерте те илеймĕн,
Мĕн тăвăн? — халь ĕнтĕ Пÿлерĕ те çук.
Çапла калаçсах пăхăнманлăх илемĕ
Çухална санра, тĕссĕрленнĕ куçу.

Курмастăн эс халь сарă куçлă çÿлевçĕ
Мăнаçлăн çĕмел тăрринче канпă пек
Чун тăнаçлăхне тăхаланă чÿклевçĕ
Хĕвелĕ çунса тăнине кунĕпех.

Менне, самантапăм, тÿрре тухăн эсĕ,
Хăравçă салтак çапăçу хирĕнчен
Тарса ÿкнĕ пек, пурăнса пĕтермесĕр
Тухсассан историн çурма çулĕнчен?

Эп таркăн ачи пулас çук! Пахăр, эпĕ —
Пăлхар-несĕлсен карăнтарнă уххин

Яла văратса вирхĕнен пĕр йĕппи пек
Чарусăр мăнукĕн чарусăр тăтхи.

Хальччен тайăлман тусене эпĕ тайăп
Тесе ыткăнатăп эп сăвăлăха.
Умра ак чулланнă чун-крепăç! Унта эп
Пĕрре çапăнса аманманччĕ-и-ха...

1987 ç.

## ÇĔРШЫВĂМ!

Телейĕм те эс, хуйăхăм та маншăн,
Тăпрам та пулăн, тен, юлашкинчен...
Каçарăн-и мана сăвăлайманшăн
Сана савса пĕр çаврăм халиччен?

Ыттисенчен кăшт уйăрса тур панă
Хама виçеллĕ талантпа тинех
Сана халь вырнаçтарăп эп вартанă
Таварлăрах тăвата йĕркене.

Тен кирлĕ те пулман ун чух сана эп,
Кăкру çинче туй-çу кĕрленĕ чух?..
Шутлам тесессĕн, пур-ши манăн айăп
Инкеклисем патне туртсассăн чун.

Саманисем халь май та хирĕçле те,
Шăпи вара пĕрре — иксĕмĕре.
Курăсăрин! паян эп тĕрĕслетĕп
Сан ятупа ултавлă ĕмĕре.

Унччен Олимп сăрчĕсене суйланă
Фарисейсем çарпуçĕпе танах
Сана мухта-мухта пайланă санăн
Çапăçура туптаннă мухтавна.

Паян та çавсемех ĕçсе çиеççĕ
Шавла-шавла, анчах та «ç ĕ н ĕ л л е!»
Паян та хисепре çӳрет суеççĕ,
Паян та пурăнать вăл кивçенле.

Йĕрки çапла, сутакансем плеснĕн.
Çĕршывăм, сăвăçна эс ĕненсем:
Ыран пушар тухассине пĕлсессĕн,
Паян вĕрсе çил кăларас вĕсем.

Йӗрки ҫапла, илекенсем сутасшӑн.
Ҫӗршывӑм, сӑвӑҫна эс ӗненсем:
Ыран кунта чап валеҫеҫ пулсассӑн,
Паян санран тавар тӑваҫ вӗсем.

Эп ҫак сӑмахсене ҫырсаччӗ ҫичӗ
Е сакӑр ҫул калла. Паян вара
Мӗн курнипе, мӗн илтнипе те ҫитӗ:
Сана тӗртеҫҫӗ тӗпсӗр авӑра.

Пасар йӑлисене чӗртсе таратнӑ
Ҫӗн хуҫасем, инҫет Монакӑра
Хӗр кӑкӑрӗ ҫинче картсем пӑрахпӑн,
Татса та пачӗҫ шӑпуна кӑра.

Кӗвелнӗ юн тумхийӗ саплӑк-саплӑк
Лӗпке урлах пӗр шелсӗр иртнӗ пек
Сана туртса антарчӗҫ те асатлӑ
Политика меридианӗпе,

Ҫынҫиенсен ытла хаваслӑ кӗрчӗ
Ял-ял ҫунан кӑвайт хӗрӗвӗнче
Ҫакай туранӑн, вакласа пӗтерчӗҫ,
Ятна та хӑвармарӗҫ Ҫӗр ҫинче.

Инҫех те мар ертӳҫӗ, авӑ, влаҫӑн
Хура пусми ҫинчен хушса тӑрать —
Историе кӗрсе юласшӑн «У ҫ ҫ ӑ н»
Тӑрӑшакан Геода Герострат.

Ҫӗнтерӳсен чури — ват Исмаэлӗн
Хуралнӑ бронза питлӗ ачисем
Чыс-хисепне хӳтӗлеймерӗҫ меллӗн,
Кар! тӑраймарӗҫ салтакла чӗсем.

Аҫтан кар тӑрӑн! — ҫиллӗн, кассӑн-кассӑн
Истори хӑй те Янус аллинче
Шӑллатнӑ кустӑрма кӑна пулсассӑн.
Каҫса каять пулсассӑн сан ҫинчен!

Пĕрех сан ятупа çурта çутмарăм...
Тӳрре тухни-ши? — ахăр-сулăмра
Чуна çăлас тесе чуна сутмарăм,
Сана сутмарăм эпĕ чупăмра.

Ман несĕлĕм каçарнă тăшмана та, —
О çирĕп кăмăл — ыра хунчăка! —
Анчах качаллă, йĕс таканлă ута
Таптанă йĕрĕнсе сутăнчăка!

Пӳрне хуçса шутлатăп, ретĕн ретĕн
Суйлатăп кевер чул... Элле ку чух
Сăвапсăр çĕр çинче те, пĕлĕтре те
Нимле тӳре те, тĕрĕслĕх те çук?! —

Кирек кама та кирлĕ-мĕн теренчĕк,
Иккĕленекене те — ĕненӳ.
Чак тăрăнчĕ чĕре çине, чĕтренчĕ
Наркăмăшланă сăнă — кӳренӳ:

Халăхăмра вăй çук тесен — юрамĕ,
Вăй пур тесен — тухатăп чăнлăхран.
Ан тив, çак таврара пĕччен юлам эп,
Пĕччен юман пек, мăнкăмăллăхра,

Нурĕпĕрех чакассăм çук эп несĕл
Лартса хăварнă чикĕрен текех,
Мĕн-ма тесен хыçра, Çĕршывăм, эсĕ,
Малта та эс, Çĕршывăм, талккишпех.

ÇЕРШЫВАМ!
Телейĕм те эс, хуйăхăм та маншăн,
Тăпрам та пулăн эс юлашкинчен...

1991 ç.

* * *

«... йăнăш пулчĕ-шим ĕнтĕ?»

Кĕçтентти Ивановăн вилес умĕнхи юлашки сăмахĕ.

Хальччен тарашни, çунтарни чĕрене
Элле йăнăш пулчĕ, тăванăм?
Апла-тăк мĕскершĕн çак çут тĕнчене
Хăйса килмелле пулнă манăн...

Телейсĕр этем яланах ытлашши,
Ана кĕлĕре те манаççĕ.
Мĕн-ма çĕр çинче эпĕ çеç ытлашши, —
Шăпа хăвалать пĕр мана çеç.

Юхать васкаса шăнкăр-шăнкăр Пăла,
Юхать те — юлать чĕлĕм чулĕ.
Чулпа чул çапса, типĕ ăвăпала
Чуна тивертсе янă пулĕ.

Хăçан эп ыр курнă, кала-ха, поэт,
Хăçан чĕптĕм савăнăç курнă?
Асаплăх иртет те, асаплăх килет, —
Çаплах иртсе кайĕ-шим пурнăç...

Паян эп — тин çеç тĕрмерен тухнă пек:
Ни арăм, ни тăхăм, ни çуртăм.
Пушар хыççăнхи кăмрăка пăхнă пек
Хура чăнлăха эпĕ куртăм.

Мункун çывхарать улача кĕпепе.
Каллех улача кĕпепе-çке!
Ватта сулăнсассăн тĕне кĕнĕ пек
Йăлтах, йăлт мантартăрччĕ ĕçкĕ.

Пирус тĕтĕмпе курăни-курăнми
Те явăнчĕ мăйкăч, те чĕнтĕр..
Тăванăм, тăванăм, хальччен пурăнни
Элле йăнăш пулчĕ-шим ĕнтĕ?

## КЕФАРАТПА КĔТŸÇĔ

Хур мăйлă кăкшăма шерпет тултарнă пек
Шăхлич сассипеле тулать тавралăх:
Ырсен çухатăвне йăлт тавăрмалăх
Ăçтан вăй çитнĕ ун кĕтӳçĕ пуçĕпе! —
Аваллăх алăкне, чим, тăхтăр, уçăн эп.

Чул айĕнчен çăлкуç чупа-чупа тухать,
Вал, туй каччин вак укçине пуçтарнăн,
Хĕвел çул май сапа-сапа хăварнă
Ахах пĕрчисене ывçи-ывçи пухать,
Кăвак кусĕпеле çынна кусран пăхать.

Кăçал качча каяс хĕрсен чĕрисене
Çу сĕрнĕ пек çемçетрĕ мар-и юрă? —
Çурлисене çумма хурса, шап-шура
Саппун аркисемпе шăлаç кусĕсене,
Элле савсах савман маттур каччисене?

Тасти кӳлемекре тăп чарăннă пират.
Мĕскер вал уншăн ырăнхи çил-тăвăл!
Паян итлет кĕтӳçĕн юррине вал:
Хай çылăхĕсене майпен манса пырать,
Куç хупанки çинче савиннĕ çеç тăрать...

Тĕнче халь хăй те — пушат сăпкари ача,
Вылять, ав, юрă çаврăмне кĕтӳçĕн.
Анчах ăçта шăхлич хуçи — кĕтӳçĕ?
Матери текенни халь ĕнтĕ çук пачах,
Йĕри-тавралăхра шăхлич сасси анчах.

Агат тава лексе ак тухрĕ Кефарат,
Ялав пек хумханать паттис уртмахĕ.
Тин çаппă чăкăт пек шур урхамахĕ
Пусмассерен хыçра çут çăлтăр хăварать,
Кăвак çилхи çинче çил кĕмĕл сăварать.

Эй, аслă Кефарат, эй, юрăçсен патши!
**Мухтав чури, мухтав çинчех пурнатăн:**
Шăхлич çине шăрçа хурса юрлан та
Асамлă вăй илет пĕве кĕрен arsln*,
Ун туйĕ пĕтиччен вилме тăхтать ват çын.

Ку кам юрри тата?! — шарт сикрĕ Кефарат,
Унран иртме кĕтÿçĕн пур-и совеç!
...Çак самантра мана та, тен, пер сăвăç,
Нумай сăмахлăскер, вĕчче тытса тăрать,
Пуш çурт пек пуш чунне майпен чул тултарать.

Кĕве çиет малтан сăсар сар çĕлĕке.
О кĕвĕçÿ! Чи лайăх, чи талантлă
Çунса тăран вуткайăк пек çунатлă
Поэтсене чухрах çын çинĕ ĕлĕкрен,
Вĕсен тăхăмĕсем ак халь — кĕвелĕкре.

Кĕтÿç çине хура мĕлке тĕлех лекет:
Умра Кефарат мар — ват шăтнă Каин*.
Ăна курсан чечек те шанса кайĕ...
—Элле эсех юрлан? — ыйтать патша-поэт, —
Пĕр пĕчĕк кайăк пек шăхлич алран ÿкет.

«Кала, кĕтÿçĕ, эс, — чĕм турĕ Кефарат; —
Писмен çинче ак пурăнăç, ак — вилĕм,
Хăшне савса хăшне паян эс илĕн?
Чинра та хисепре пурнас тесен вăрах,
Шăхличĕ таврашне манас пулать вара».

---

* Arsln лат. — ар çулне кĕрсе пыракан çамрăк.

*Каин — тен мифĕ тарах, Каин этемлĕх историйĕнче хăйĕн шăллĕне вĕлерсе преступлени тунă пĕрремĕш çын.

Мĕн калĕ Каина хисеп курман поэт?
Чин хаклă-и е хаклă юрă унщăн?
Савса пĕтереймен хĕвеллĕ куншăн,
Ав, тинĕсрен чарлан вĕçсе килет,
Кетÿçĕ уппала сăмах кĕтсе илет:

Эй, патшасен патши! сан юррусем аван;
Çапах та чунупа эс юрăç мар-мĕн —
Поэт тени влаçа нихçан та лармĕ.
Епле эс халиччен çавна ăнланайман!
Ман пурнăçăм — юррăмсенче айван

Шăмарчĕ Кефарат: çил-тăвăл — ăшĕнче,
Куçĕсенче ялтрарĕ сăнă-çиçĕм.
Элле бамбук шăхличĕпех кетÿçĕ
Чи чаплă-сумлă юрăç пулĕ çĕр çинче?
Аça çапассине сиссе йĕрет тĕнче.

Ак чĕнчĕ Кефарат палач-тарçисене,
Лешсем юн шăршине туйса ташларĕç,
Пĕр кĕтÿçе тăват пая пайларĕç:
Кустарчĕç лăпăска пуçне сукмак çине,
Ал-урине татса пăрахрĕç йыт çиме

Анчах та юррине ăçта чиксе хурас? —
Тытма та çук ăна, тытсан — касма та.
Вăл, сывлăш евĕр, сăрхăннă чула та.
Çăлкуç вылявĕнче шăнкăртатать çав сас,
Пират та халь ăна ĕнĕрлеме хавас.

Тусем те ӗмӗрсем ҫине ӳпне ӳксе
Кӗтӳҫ юррийӗ пулчӗ мар-и ахрӑм?
Ӑна илтсен, эп кулянма пӑрахрӑм:
Влаҫ илнӗ сӑвӑҫсем тӑраҫ-тӗк вӗчӗхсе,
Тӑван тӑрӑхӑмра эп вилӗмсӗр, туссем.

x x x

Ылханлӑ Каинсен ырхан мӑнукӗсем —
Ман сӑввӑмсем ҫине пӑталланнӑскерсем...

1988 ҫ.

## ЭМПЕДОКЛ ЫВАЛЕ ЭМПЕД ÇИНЧЕН ХУНА ЮРĂ

Эмпед йăхĕсем пăхăнман никама:
Юта та, хăватлă Зевса та.
Ку тĕрĕс сăмах пулнине калама
Эп çак сăвăпа ал пусатăп.
Таçти ĕмĕрте хивреленчĕ састаш —
Итле чул çинчи сăмаха, саманташ.

Ялттин патшасен авалхи йăлине
Хитре те мăнкăмăллă каччă
Аслашшĕн сар ылтăн пуçкăшăлене
Паян патшара лармаллаччĕ.
Анчах та ăна вăл парне халлĕнех
Пĕр шухăшсăр пачĕ маттур шăллĕне.

Кам чепмĕ асчах тавраш не хапана!
Сетел туллиех апат-çимĕç.
Ларать яланхи пек манаçлан, — ана
Сарçу сăмахсем илĕртеймĕç:
Эмпедшăн хуçа та, чура та пĕрех,
Çапах та... мĕскершĕн памаççĕ эрех?

Пуян хуçана кăчак туртрĕ Эмпед:
«Мĕн-ма çынсене сăйламастăн?
Мĕн-ма халиччен кĕттеретĕн эс пит,
Хуçа сăмахне каламастăн?
Е эс тĕрĕслен пирĕн чăтăмлăха?
Е эс култарасшăн пиртен халăха?!»

Çак çын кĕттермен-и? — йыхравла çĕре
Çитет Советран чаплă пуçлах.
Пĕр лакăм сăра та пер пĕрем эрех
Часах ун ятне ака пуçлĕç.
Кĕрлет кĕреке — чыс, мухтав пуçлаха!
Чыслаççĕ тулли черккене туслаха.

Ай, финик шерпечĕ! Ик-виç çаврăмрах
Çуланнă тута чăпăрт турĕ:
Сăйлав сăмахне çавăра-çавăра
Мухтать эрехе пĕр маттурĕ.
Е̌ҫки питĕ чаплă, апачĕ — сипет! —
Мĕскершĕн ĕçмест те çимест те Эмпед?

Ак тăчĕ ăсчах кĕреке хушшинчен, —
Умри вăчăри чăнкăртатрĕ.
Каллех пуçлăха мухтама пуçличчен
Çапла каласа касса татрĕ:
«Совет пуçлăхне мухтани ахаль мар —
Е ўсĕр эсир, е тăватăр кавар.

Хуçа демократи йăли-йĕркине
Хăйхаллĕн пăсма пултарсассăн,
Епле эпĕ ĕçĕп сăйлав черккине,
Епле эпĕ ларăп хавассăн?
Виçкарт* пухăвне пуçтаратпăр ыран,
Сăлтавлăпăр: кам демократ, кам тиран».

Шап пулчĕç пĕр вăхăт — чарлан çуралать,
Самант! — пĕр сăмах уралтарчĕ:
Кунта, тен, чăнах та кавар палăрать?
Хуçа туххăмрах кăвакарчĕ.
Йĕрки çаплалла — пухăва каймалла,
Тўрре тухмалла е ...пуçа хумалла.

Çўлту тăррине вырнаçать виç тўре,
Çўлту айĕнче — ирĕк халăх
Иртен пуçласах уяври пек çўрет, —
Сăлтавĕ, тен, пур уямалăх?
Хуçа пуçлăхпа тытнă чаплă ваккат
Сыхлав сăмахне пĕр таттисĕр вакласть:

*Ĕлĕк патшалăх шайĕнчи ыйтусене татса пама аристократипе пĕрле демократсемпе ирĕк халăх та хутшаннă. Ана Виçкарт пухăвĕ тенĕ.

«Сире ыр сунса, чыс туса та шанса
Калатăп — тăнла, ирĕк халăх.
Патшалăх карт евĕр вакланĕ ансат,
Унта пулмасан çирĕп алă.
Е сурăх кĕтӳ, е сăйла кĕреке?—
Пире чи малтан кирлĕ çирĕп йĕрке.

Зевс ирекĕнчен иртме пулĕ, анчах
Шăпа пӳрнинчен çын иртеймĕ.
Сире пăлхатмашкăн шут тытнă ăсчах
Текех пурнăçа тивĕçеймĕ.
Эс халăх, эс турă та, эсĕ — патша:
Халь çак ыйтăва парăр ĕнтĕ татса».

Мĕн çиттĕр ăсчахăн вĕри шухăшне?
Япшар чĕлхине те мĕн çиттĕр! —
Касать çиçĕм-шухăш тĕнче уçлăхне,
Сăмахĕ тухать чĕре витĕр.
Эмпед калаçать, калăн хушнă çунат,
Тусан кăларса халăх алă çупать. —

«Çак çут тĕнчене çутçанталăк пире
Пурне те пĕр танлă çуратнă.
Ама-турăсем ăрасна, пурнĕрех
Пĕр пек ыталанă, юратнă.
Пĕри ылттăн пултăр, теприйĕ — сапфир,
Саккун умĕнче пурте танлă эпир.

Е пултăр хĕвел-патшасем йăслани,
Е пултăр чура пухнă ĕçкĕ,
Пĕрех пĕр çынна уйăрса чыслани
Пиртен çӳлерех çĕклени-çке?!
Эпир хирĕç мар хуçапа пуçлахне,
Анчах йăтас çук тирансен пуçлăхне».

Тăва хум çапмарĕ-и? — илтĕнчĕ сас:
«Каварçăсене — вилĕм! вилĕм!
Тиран таврашне тымартан тасатас,
Шăрши те ан пултăр ун ӳлĕм!»

. . . . . .

Мĕн хаклăш вăл пурнăç, мĕн хаклăш тĕнче? —
Ик пуç кусса анчĕ Çӳлту тăрринчен.

x x x

Вăтăрçиччĕмĕш çул çитиччен, саманташ,
Мĕн-ма çаврăнса килеймен çак састаш?..

1988 ç.

# ĔМĔРЛĔХ САМАНТ



x x x

Таса хирсенче пирĕшти пек таса хĕр ĕçленĕ —
эккей!
Ана уйăх савнă, хĕвел çылăхран çăлса пынă—
эккей!
Чăвашăн çĕршывĕ шап-шур турăсен çĕрĕ пулнă —
эккей!
Мĕн тăвăн? — ăна халь усал-тĕсĕлсем тĕсĕленĕ —
эй-эй...

x

Палхар ялавне кĕмĕл кӳлĕ чӳхенĕ —
эккей!
Пăлхар ялавне пур тавралăх чўк тунă —
эккей!
Ана сар хĕвел те çут уйăх чуптунă —
эккей!
Аçта халь чăвашăн пĕветнĕ пĕтевĕ!? —
эй-эй...

x

Шăпчак юрри чунăма сарă пикен ыталарĕ —
эккей!
Шăпчăк, чикан майрилле, куçкĕретех улталарĕ —
Тен, шăнчăкран кирлерех çавă чеелĕх тенйĕ —
эккей!
эккей!
Ентĕ çынсем пек чее эп пурăна пĕлеймерĕм —
эй-эй...

x

И тăвансем, тăвансем,
эпĕ сире, тавансемĕр,
Пĕр йĕркере виç хутчен
асăнтăм, ан теленсемер.
Тав, чăваша! Диоген
шухăшласа çитеймен
Чыс пъедесталĕ çинче —
пирĕн ырми Аннесемĕр.

x

Хавшанӑ Пӑла хум ухать
юлашки вӑйӗпе хаш та хаш.
Хухатӑн-им эс те,
тахҫан тахатарлӑ ӗрченӗ чӑваш?
Тӗнче юхӑмне хирӗҫле
эс ишейӗн-и?! — илтӗнчӗ сас —
Тасти ӗмӗртен
кимӗ евӗр кӑкараннӑ кӗлӗ.

x

Эп пурӑннӑ чух
маншӑн вилӗм пулмасть — пӑх та кур,
Вилсессӗн вара
эп туймастӑп ӑна — пӑх та кур.
Апла вилӗмпе
тӗл пулмастпӑр эпир нихӑҫан та?..
Тавах лӑплантарнӑшӑн
ман чунӑма, Эпикур*.

x

Ҫӳл вӗренеп те хӑҫан та пулсан —
ӳкмелле.
Ҫут ҫӑлтӑрсен те хӑҫан та пулсан —
ӳкмелле.
Кам мухтавра сӑрт ҫинчи пек юласшӑн —
астӑвӑр:
Сӑрт та хӑҫан та пулсассӑн шуса —
ӳкмелле.

x

Йывӑҫ ӳсет — ӑшӑ ҫумӑр ҫусан —
ӑнсӑртран,
Йывӑҫ ӳкет — урнӑ тӑвӑл тухсан —
ӑнсӑртран.
Мӗншӗн питех хурланас
куҫам тарук хупӑнсассӑн, —
Пурнӑҫ та килнӗ ҫак ҫут тӗнчене —
ӑнсӑртран.

*Эпикур — авалхи грек ӑсчахӗ.

x

Эп ăсчахсен çĕршывне кайса куртăм —
рехмет,
Аслă çынсен сăмахне пĕрчĕн-пĕрчĕн суйларăм —
рехмет!
Çутă тĕнче пĕр иккен, — терĕм те
кăшт иккĕлентĕм:
Эпĕ ухмах-и, вĕсем-и? — çук, пĕлеймерĕм —
рехмет.

x

Сĕм ĕмĕрсен шавĕнче
чăн чăвашла сас шыратăп,
Перчĕн сăмах пуçтарса
пĕрлĕхлĕ сăвă çыратăп.
Эп, несĕлсен çарĕнчен
кăшт кая юлнă салтак,
Калăр-ха, камшăн паян
çак трофея пуçтаратăп?..

x

Мĕн вăл эпир пурăнни —
лапкан вилме вĕренни,
Çута тĕнче саккунне
çитлĕн чăтса çӳрени.
Еккĕмĕр хыççăн кайса
йĕкĕрĕн йăнаш таватпăр...
Мĕн вăл эпир пурăнни —
сылăх пухса çӳрени.

x

Тĕрĕслĕх халь çынсенче —
хаклă ахах шутĕнче,
Перчĕн сутаççĕ ăна
аслă тӳре сутенчех.
Тӳре сăмахшăн парне
вăрттăн ыйтаççе пулсассăн;
Хăй ялан чиккинчен
куçнă иккен çут тенче.

x

Çирĕммĕш ĕмĕр! Ăна эп
ĕшеннĕ пуль теттĕм, —
Çул вĕçĕнче те, — çук, çук! —
ывăнман урхамах.
Тĕпсĕр çырма умĕнче вăл
тăпах чарăнать те —
Кĕмĕл çилхи йăванать,
çулнă çаран пек, лапах.

x

Эй тĕлĕк темерĕн:
умри утма çулам — шур пурçăн хăю,
Утатăп, утса тухаймастăп, —
ăçта Исмаэль савнă Мекка?
Çул урлă хура эрешмен
майĕпен каçса кайрĕ... Аюк!
Элле вилĕме ку?

x

Ассăр ачалăх пуçтарнă
икĕ кесъе шур тетте,
Çамрăклăх çавăрнă тытнă
шур çилхерен ĕмете.
Асам та пулнă ăсмалăх,
сывлăх та пулнă сыпмалăх, —
Эс, Николай Исмуков,
чухăн пулман ĕмерте!!!

x

Шахлич çине кăвак шăрçа
хурса юрлать пĕр кайăк:
Юмах хăрушă та, пĕрех,
пĕрех ун вĕçĕ лапах.
Анчах та пурнаç урăхла —
ун вĕçе пит харуша!
Шахлич çине хура шăрçа
хурса юрлать пĕр кайăк...

x

Эп сар хӗвелччӗ ун чухне,
эп ун чухне чӗкеҫчӗ,
Кайран, мана каҫ хупласан,
эп сӑнсӑр уйӑх ҫеҫчӗ.
Пӗрер ҫынран, икшер ҫынран
пуҫтарнӑ аслӑ халӑх,
Хӑҫан эс тӗрӗс пулнӑ-ши?..
ман ҫавна ҫеҫ пӗлесчӗ.

x

Чалт шурӑ, шурӑ тутӑрпа
шур кӗмӗлне тасатрӑм,
Ҫут уйӑх ванчӑкӗ пекех
ялтӑриччен ҫутатрӑм.
Халь акӑ — аллӑм ман хура,
шап-шурӑ тутӑр — тӗксӗм...
Эп сан хутна кӗрсе, савни,
ят-шывӑма ҫухатрам.

x

Эп — уҫӑ алӑклӑ ҫурт.
Вӗр, саманташ-самана!
Санӑн вӗри сывлӑшу
хӗрттер, тасаттар мана.
Вер, ҫавӑрттар, ахӑрттар,
ҫaлтӑр тусанӗ кӑлар —
Сӑвӑҫ чунне ҫеҫ манран
пӑчӑртаса ан кӑлар.

x

Итлӗр мана, салтака,
тӑнлар, вылявлӑ яш-кӗрӗм,
Эс те итле,
сӑпкаран кармашакан пӗчӗкскерӗм:
Туслӑх тени вӑл хитре
ҫар ҫӗнтересе пына чух,
Ҫар арканать те —
тухать сутӑнчӑк-пексӗк эшкерӗ.

x

Пирĕн ăшра, ӳт-пӳре,
турăçăм, шыв та тăпра —
Сĕм ĕмĕрхи тĕнчере
ĕмĕрлĕх йӳнĕ тупра.
Шухăшлă материалист,
çак тĕрĕсе ĕненсен те
Мĕншĕн пурнан пурнăçна
хаклă мерчен пек упран?..

x

Ан курнăçлан ытлашши
ĕмĕр йӳтемĕп тесе,
Чап та хисеп вилĕмрен
пурпĕр хăтарĕç тесе —
Аслă хĕвел çавранать те
манăç тусанĕ çĕклет,
Чаплă-и, çук-и — пурне те
пӳрĕ сĕрпе тикĕслет.

Шурă Çуртри хуçасем
чикĕм-чикан пек чеечĕ:
Совеç пулсан —
пуранма пите те çамăл теетчĕç.
Совĕçĕн йывăрăш пур!
Эй, хуçасем, сирен пек
Влаçан хура пусмипе
улăхас мар терĕм эп.

x

Тахăмсенче уссарах
эпер шыратпар тĕрек —
Вăхăт çитсен
çилсĕрех пурте тӳнетпер нерех.
Эй эс, чарса чарăйми
куçамăн шелсер çаккунĕ!
Сан еккӳне пăхăнса
йăптăх тăкать ав, тирек.

x

Пурнăç хĕрарăм иккен.
Пурнăç хĕрарăм кăна.
Ĕмĕрĕм иртрĕ,
пĕрех ăнланаймарăм ăна:
Çăлтăр-кунсем çулсерен
йăвашланса пынăçемĕн
Мĕншĕн тата хытăрах
эп юрататăп ăна?..

x

Улăх кăкрийĕ çинче
пĕр хурчăка явăнать,
Çăткăн астăвăм çапла
пурнăç тавра явăнать.
Эй, асăрхан, кÿренÿ —
чунăн аманнă чĕппийĕ,
Вăл хурчăка пек сана
чĕррĕн тытмашкăн анать.

x

Мĕншĕн ытла пысăк уйăх
печĕк çурта çумĕнче?
Мĕншĕн ытла печек хуйăх
пысăк поэт чунĕнче?..
Йыт вĕриппех çĕтĕлет
кĕвĕç этемĕн сăхманĕ,
Унăн кану кунĕсем те
çук, ахăртнех, çĕр çинче.

x

Чунăм — тĕнче хĕрринчи
пĕчĕк, таса кÿлемек,
Туйăм унта чÿхенет
шур çăкаран кимĕ пек.
Шаплăх — саркайăк йăви вăл,
юрă çуралчĕ: ал çунар!
Тинĕс чĕвен çеклепсе
илтĕрччĕ ун хумĕпе.

x

Кам пултарайĕ пӳлме
асла хĕвел çаврамне!
Çылах, çырла пек пухсах,
туле поэт камалне.
Вилĕм тарне араму
типĕтнĕ хыççан сасартак
Тытĕç те анĕç сана
Иосафат* айламне...

x

Эп — Исмаэль юнĕнчен килекен
тавару йалине тытакан,
Вай çитерсе, шал çыртса
тытаймарам ун чух аллама ятага.
Тавартӑм пурнĕр сана,
тавартӑм, пуç касакан, —
Ман савӑшу сӑввисем
канăç памаççĕ сана!

x

Вай çитерсе сулăмна çапаймасан —
чул калмасть,
Хăв айăпна юлташна каламасан —
чун канмасть.
Ман сăввăма савакан саваш чăвашăм,
асту эс:
Калаканнийе манать те,
илтекеннийе манмасть.

---

*Библи мифĕ тарăх Хăрушă Суд тумалли вырăн.

Чуна çунтарса эпĕ татăп Хĕвел умĕнчи
парăма,
Ӳте çĕр туса эпĕ татăп çĕр-шыв умĕнчи
парăма.
Çветтуй пек ăсанăп çак çут тĕнчерен эп,
анчах та
Нихçан та татаймăп, нихçан та Анне умĕнчи
парăма.

x

Эсĕ пĕлмен-им, Сократ,
шухăш хуçи, ун чухне
Ма çулсерен тунине
аслă люстраци* чӳкне?
И çаврăнан самана...
Аслă пулмашкăн юрать-и
Пĕтĕм тĕнче
ухмахна тулнă пулсан кучухне!

x

Шурă чулран пӳ-сине
чун верес кĕртнĕ шур Анна**—
Шур тĕтрери Петергофшăн
вĕçсĕр хӳхлен Ярославна.
Мĕншĕн поэзи тени
чер тунсахра пумайрах?
Меншĕн вара асилу
чăн пурнăçран лайăхрах?

x

Ĕлĕк поэт патшапа
ларнă пулсан юнашар,
Чыс-хисепе пайласа
илнĕ пулсан çурмашар,
Халĕ вара влаçсене
чаплă поэт кирлĕ мар...
О Павон, Павон!
Çăлтăр та халь çалтăр мар.

---

*Люстраци — чӳк парса тасални
**Анна Ахматова

x

Сăвăç чапне хапсăнан
çамрăк сахал-им халькаççăн!

Пурте, тĕк татнăн, васкаççĕ,
пурте шур сăва хайлаççĕ.
Эй, тур çырлах!
çав çынсен пĕчĕк пепке-ачисем
Суккăр, чăлах çуралсан
чул-чунĕсем ыратмаççĕ.

x

Хĕвелĕмĕр! Тĕнче варри,
чĕре варри, Хĕвелĕмĕр,
Яланлăхскер, ĕмĕрлĕхскер,
эс сӳнессе пĕлмерĕмĕр.
Çуна-çунах сӳнен иккен,
Хĕвелĕмĕр — Анне,
Сӳнсе пырусăн ăшăрах эс,
çутăрах, Анне...

x

Тен, ĕмĕлке хыçĕне çутă çӳрет, —
кам пĕлет...
Леш тĕнчере чап тени кирле-ши вăл, —
кам пĕлет...
Эс Елисей* хирĕнчен тĕттем çĕре
тухрăн мар-и,
Иртнĕ асапшăн пайтах чап хушса панă
поэт?*

---

*Леш тĕнчен çутă пайĕ, вырăнĕ.
*Митта Ваçлейĕ.

x

Ай, ăçтан хăват çитертĕм
ун чухне эп ун чухлех! —
Парăнмарăм çеç-и, тусăм,
эп çĕнтертĕм ун чухне!
Халĕ те эп пăхăнмастăп, хăрамастăп —
пĕлĕрсем,
Ма тесессĕн вилĕм йӳнĕ япала вăл —
пĕлĕрсем.

x

Иртнĕ кун шăтăка, çĕр тĕпне,
сылăх евĕр тĕртет те тĕртет,
Пуласси... и тăван,
те вăл тур аллинче, те чăнах та пирте?
Ак çапла, ĕмĕтпе асилӳ хушшинче
хĕсĕнсе пурăнатпăр,
Ак çапла, ĕмĕтпе асилӳ хушшинче
пурĕн пурнăç иртет.

x

Сурăх çухалчĕ пулсан —
хуйăх пусать хресчене,
Тупрĕ пулсассăн ăна —
савăнăç мен ирччене!
Мĕн ку? — пуçа çавăрса
йăпатакан кĕрчеме?
...Ĕнтĕ пурнатпăр çапла,
çутă куна хурататпăр.

x

Вăхăтпа выляççĕ тейĕн
сӳс пăявĕ туртмалла:
Вилнисем ăна турtаççĕ
кунĕн-çĕрĕн каялла,
Чĕррисем ăна туртаççĕ
кунĕн-çĕрĕн малалла, —
Вырăнтах тăрать-çке Вăхăт!..
Çавăн пек шутламалла.

x

Тӳнчĕç хитре палăксем,
сӳнчĕ суя ĕненӳ,
Чак тăрăнать чĕрене
сăнă чавки — кӳренӳ.
Халь Çĕнетӳ çăварне,
кобра куç пăвнăн, кĕретпĕр,
Халăх ухмах иккенне
халăхпала тан пĕлетпĕр.

x

Чап та хисеп, эп сире
йыхăрмăп пит хистесех:
«Кĕрĕр пӳрте паянах,
кĕрĕр те ларăр» — тесе.
Хăшĕ пиртен кĕлмĕçрех:
эп-и, эсир-и? Ыйтатăп
Пурпĕр хапха умĕнчен
ан кайăрсамăр тесе.

Вунçиччĕмĕш çул.
Ав, таçта, вăтăр çиччемĕш çул.
Çак икĕ пăнча
çыхăнтарнă тӳп-тӳрĕ пĕр çул.
Элле эпĕ савна та кĕтнĕ
таван перестройка
Хыçне пытанса
çывхарать виçĕ пуç «Пересе Тройка?»*

---

*Ыйтăва судсăр татса паракан орган. Унта 37-çулсенче ытларах çапла персе вĕлерме йышăннă.

x

Икке найлать пурне те шухăш ман:
Ами пулсассăн, пулмаллах ун ӑрӗ.
Туссем пур чух тупăнатех тăшман,
Тăшман пулсан... тус пулмасса пултарӗ.

x

Пӗр пус укçа та çук — текех ан мухтăр,
Влаçа ларассăм çук — ан йапăлтатăр.
Терӗссине каларăм та çакна,
Туссем те ал памаççӗ халь мана.

x

Çынна эс ыр тумашкан ан васка.
Усал тума капа ан тăрăш теççӗ.
Хăшсем, чăнах та, çак выртан каскан,
Усал тумаççӗ, ырă та кӳмеççӗ.

x

Мӗн çăмăл тӗнчере, мӗскер ансат? —
Яван парать пурне те пурнăç хай вăл:
Сын йапăшне асăрхама ансат,
Çынна канаш пама питех те çăмал.

x

Епле çиет ахах пĕрчи куçа,
Пулсан та хăй йĕп куç пек пĕчĕкçеççĕ.
Сул шучĕпе хаклан-и пурнăçа? —
Ăна мĕнле пурăннипе виçеççĕ.

x

Микротĕнче йĕрки-шим чун-чĕремĕн? —
Саккунĕсем ун урăхла пачах:
Телейĕме çынна пайланăçемĕн
Пĕчĕкленмест вăл — ӳсĕнет анчах.

x

Пĕлетпĕр: пурте, пурте çул çинче,
Шлагмаум антарман-ха: пырăр, иртĕр.
Вокзал пек туйăнать çак çут тĕнче, —
Кĕретпĕр те тухатпăр çех ун витĕр...

x

Хăв ĕçлесе илмен япалапа
Каппайланни, тен, иртекен ухмахлăх.
Анчах хитре сăну-сăпатупа
Вĕçкĕнленни — тур каçарми ухмахлăх.

x

Телей те инкек хушшинче
эс мĕн чухлĕ ан пурăн,
Пĕлсе пĕтереймĕн пĕрех савнăçпа хĕн-хура.
Ав, çĕмĕрт çеçки те,
шуратнă пир тейĕн, шап-шурă,
Анчах çырлисем,
çырлисем мĕншĕн йĕнкĕн хура?

x

Çур килчĕ те кĕркуннепе каять
Кикак хуркайăк — тунсăхлах янравĕ.
Усал-и, ырă-и — пĕр илнĕ ят
Кирлех-и, çук-и — ĕмĕрлĕх сапра вăл.

x

Çын лайăха кăна пăхать пĕрмай,
Начаррине йышăнтараймăн, кăлăх.
Ав, çĕнтерÿн те ашшĕсем нумай,
Çухатусем вара ытла та тăлăх.

x

Ырăлăхсем усалсене çĕнсен
Тĕнче таса пулать тесе калаççĕ
Мĕскершĕн ир каяççĕ ыр çынсем?
Усаллисем усал тума юлаççĕ.

x

Кирлех те мар пек япала пур чух —
Ӑна тытатпӑр хывӑх пек тӑкаклӑ.
Сука, ав, чӗпӗтсе илме те ҫук, —
Сахал чухне вӑл япала пит хаклӑ.

x

Хӑй тӗллӗн ҫитӗнет усал-тӗсел.
Ырра ача пек ҫӗклесе ӳретпӗр,
Аван та сыввӑн ӳстӗр-ха тесе
Ал-урине те ҫирӗп пиелетпӗр...

x

Ыр сӑмахна ӳссех ыратъ вӑй-хал.
Усаллипе — ҫур сӑмахпах амантам.
Сӗр пин тус пултӑр, пурпӗрех сахал,
Анчах та ытлашши ик-виҫ тӑшман та.

x

Пурнасшӑн пулъ виҫ ӗмӗр хӑшӗсем:
Хыткукарла япаласем пухаҫҫӗ.
Паян-ыран вилес пек теприсем —
Мӗн пуррине тӑккаласах тараҫҫӗ.

x

Каллех эп çапăнсассăн кĕтесе,
Ан лăплантар мана текех, тăванăм,
Ку — ăнсăртран, ку — ăнсăртран тесе.
Пĕлетĕп эпĕ: пурнăçăм та манăн
Ăнсăртлăхран тăрать.
Итле, поэт,
Пĕр вилĕм çеç хăй йĕркипе килет.

x

Çăлкуç çине кам хунă йывăр чул?
Кам пултăр! — пĕр чăваш, пĕр кĕвеç Каин.
Анчах — эй чĕрĕ чун! — чулрав чул айĕн
Çăлкуçĕ тупнă, авă, урăх çул.
Анатчĕ ман та философи ĕçĕ.
Чул хунă хыççăн усăлчĕ поэзи.

x

Пĕлместĕр-им эсир кашкăрсене? —
Малтан вĕсем хитре пăлансене
Каварлашса хăваласа тытаççĕ.
Кайран вара, аш уйăрнă чухне,
Пĕрне-пĕри турта-турта çураççĕ.

x

Çын вырăнне эс йышăнатăн тейĕн,
Çын пурнăçне эс пурăнатăн тейĕн. —
Ытла нумай пурнать Марье тесе
Кĕве чунсем тăраççĕ кĕвĕççе,
Хăйсен çулне хăйсем, тен, кĕскетсе...

x

Текех ан калăрсамăр, тетесем,
Сак пурнăç тутине пĕлес тесен
Инкек-синкек астивмелле тесе, —
Тăварлипе тăварсăрне пĕлмешкĕн
Ĕçсе ярас-им çакă тинĕсе?..

x

Ах, лавр кашăлĕ — асаилӳ:
Епле хитреччĕ эп, епле патвар ччĕ!
Мухтав тăрук маттур утне таварчĕ,
Тулли лавне уй варринчех хăварчĕ...
Ах, мăшкăл кăшăлĕ — асаилӳ.

x

Пӳртре те тӗксӗмленчӗ, тӑварланчӗ.
Уҫ чӳрече каррисене, аппа.
Хура куҫсем хуралчӗҫ, чун хурланчӗ,
Аса илсессӗн иртнӗ асапа.
Уҫ чӳрече каррисене, аппа...

x

Тем пысӑкӑш ыйту палли — тӗнче,
Шикленчӗк тӗлӗнӳ — уп кусенче.
Пӑнчийӗ, тумламран та пӗчӗк атом,
Талса ансан, пӗтет вара тӗнче.

x

Мӗн-ма пӑшӑрханатӑн пустуях?
Ҫамку ҫине лартан пӗрме хутламӗ.
Сан сӑввусем, пуш ҫурт пек, пуш-пушах, —
Пӗр вӑрӑ та унта кӗме шутламӗ.

Хӗвеллӗ кун мӗлкем ҫӳрет пӗрлех,
Аҫта кайса кӗрет вӑл сӗм ҫӗрле?
Хисепӗм тепӗр хут хӗвелленсе тухсассӑн,
Туссем каллех килеҫҫӗ-шим, элле?

х

Ан вӑрҫӑр чӑн сӑмахшӑн хӑрушла,
Ан ҫакӑр ярлӑк тем ӑсла-ӑсла:
Эп вырӑсла вӑрҫатӑп, мухтанатӑп,
Анчах та макӑратӑп — чӑвашла.

х

Тархасшӑн каларсамӑрччӗ мана:
Кам курнӑ пӗр ҫыранлӑ ҫырмана?
Эпир санпа тату пурӑнмасассӑн,
Юхатчӗ-и ҫак пурнӑҫ аванах.

x x x

Мухтавлă Хĕвелтухăç ывăлĕ, Омар Хайям,
Каçарăн-и? — паян сана хирĕçлеме хăям:
Патша кĕрекинче эс сахал мар сăйланнă,
Чи тутлă çимĕçсем эс сахал мар суйланă,
Çапах та, о поэт, хĕрарăмпа эрех
Тĕнче тăпси пулаяс çук пĕрех.

x

Сӳнсе пыракан хĕвеле анăçран
Калла тавăрасчĕ, калла пуранасчĕ...
Тавах, тăвансем! Ытарми пурнăçран
Сăйла хăнаран кайнă евĕр каясчĕ:
Сисе пĕтермесĕр, анчах — выçă мар,
Ĕçсе пĕтермесĕр, анчах — ӳсĕр мар.

Сар савӑнӑç çул иртнӗçем сӳнсе
Пулать-шим тунсӑх тӗссӗр тутӑр евӗр?
Унччен туйра-суйра янранӑ кӗвӗ,
Ура айнех, ав, ӳкрӗ сӗвӗнсе.
Ах, вӑхӑт! Вӑхӑт хӑйӗннех ӗçлет.
Калла каймашкӑн ӗнтӗ çук меслет.

х

Поэт, поэт! Сикер влаç умӗнче
Гном евӗр эсӗ: вӑйсӑр, пӗчекçеççӗ.
Сӑмах чӗнме-и!? Ав, хыр, тӑрринче
Аманнӑ выльӑх ӳкессе кӗтеççӗ
Хура пӗлис сӑхманлӑ çӑхансем.
Кша-кша, кша-кша, виле çиекенсем!

x

Ытлашши юратмарӑм-и эпӗ сана,
Ытарми ҫутҫанталӑкӑм?
Ытлашши хак хумарӑм-и эпӗ сана,
Ыр тума маннӑ халӑхӑм?
Чӑнлӑхран хитререх пурнӑҫран
Кайма йывӑр пулать..

x

Сар ылтӑн ҫӗррӗме ҫухатрӑм та —
Сур кун шырарӑм.
Пӗр ҫаврӑм сӑввама ҫухатрӑм та —
Сӗр кун шырарӑм.
Кала, юлташ, апла, эп — кнеҫ е кӗлмӗҫ?
Эп хам камне пӗлсен те — пулӑп пӗлмӗш.

Мĕнле хăватлă, ăрăмлă пулсан та
Хай шăпинчен, кала, кам иртни пур!
Çĕрте выртать, ав кукăр майлă Сантăр*,
Çĕрсе çĕр пулнă, ав, уксах Тимур*.

x

Хутла пĕлен çынна сума сăвас
Йăла-йĕрке те пĕтрĕ — мĕн тавас.
О Диоген!* Ан хăтăр ухмаха эс:
Çурт-йĕрене халь мухтанать чăваш.

x

Пер çылахла теесçе ухмаха,
Çĕр çылăхлă теесçĕ ăсчаха.
Апла пулсассан, калăрсамăр, мĕншĕн
Аçа çапать малтан тăр-ухмаха?

x

Сил ачи кунĕпе выляса ĕшенсессĕн,
Шур чечек варринче хутланса çывăрать.
Кам пĕлет, кам пелет?.. Тен, ўсеє çитĕнсессен,
Вал хурах кăшкăрса тенчене саварать...

*Александр Македонский
*Тамерлан
*Диоген — пичĕкре пурăннă ăсчах

x

Сенкер шăрça çумне сенкер ахах
Сиктермесен, чалма-сурпан илемсĕр.
Ача-пăчасăр çын яланлăхах.
Ĕмĕрлĕхех — телейсĕр.

x

Хитре те калаçма вĕрентĕмĕр паян,
Хивре те калаçма вĕрентĕмĕр паян.
Кашлать çĕршывĕпех сăмах вăрманĕ!
Ау! Çула тухсассăн — аташса каян.

x

Инкек çук чухне пĕлмелле савăнма,
Кашнин куçĕнче çиçтĕр кулă.
Мĕн пур — çавăнпа та, мĕн çук — çавăнпа
Пурнар, тăвансем, çырлахуллăн.

x

Паллах, сана сунмастăп эп кĕтрет,
Ылханăм та ман çынлăхла, хитре:
Кăшт пурăнса эс кур-ха унпĕн-теппĕн
Саманисем ылмашна сехетре!

х

Тӗнче тытакансем, Ҫӗр тӗкмисем,
Миҫе вӑл сирӗн тӗреслӗх, миҫе?!
Те пур, те ҫук ҫав тура.., пурпӗр, пурпер
Вӑл ҫех пӗртен пӗр Тӗреслӗх, Виҫе.

х

Кашни япаларах илем, илем...
Аҫтан-ха тухнӑ ҫавӑн чуль илем?
Ара, тӗнчемӗр пуҫланман-и пирӗн
Пӗрре чӑл-пар сапалансан Илем!*

х

Тавлаштару та шырамастӑп урах.
Пулни-иртни — ҫулса пӑрахнӑ улӑх.
Анчах малӗмӗт — кайранхи каю —
Чуна тирсе ҫӗкленчӗ симӗс курӑк.

х

Чулран касса кӑларнӑ Нефертити,
Ытарлӑ та ҫемҫе кулли уйчеи
Этем чунне ҫеҫке пек илӗртетчӗ, —
Халь ак, кулан тӗнче ухмаххиичен.

---

*Илем — салма пысакаш пите тача матери. Асчахсем калана тарах, пирӗн Тенче, Хӗвел, Ҫӗр, ҫӑлтӑрсем ҫак Илем ҫурӑлса сапалансан пулса кайнӑ.

x

Кĕве çисе ямасть-и кĕвĕссе
Сире, хисеплĕ-чинлă сăвăçсем?
Пĕр лайăх сăвă йĕркелетĕн те —
Пĕлсех тăр: пĕр тăшман тупăнатех.

x

Сăну-питӳ хĕвел пек, шăлусем —
Кашта çинчи рет-рет шап-шур чăхсем.
Санра пĕрре шуйхаштарсассăн хуйăх,
Вĕçсе те анĕç шакарах вĕсем...

x

Хуралçасар натша иккен илем:
Ăна илсе те кайĕччĕç, анчах
Вал хай сана тӳрех тытса илет.
Эй, асăрхан, мăнкăмăллă ăсчах!

x

Епле чее хăшпĕрисем тата! —
Вутпа шыва пĕр саватра тытасшăн:
Поэт пек хыта юратасшан та,
Ăсчах пек лапка, ăслă та пуласшан.

Тепӗр хут ҫуралаймастӑп,
Тепӗр хут пурӑнаймастӑп.
Мӗншӗн, пурнӑҫӑм, сана
Упрама хӑнӑхаймастӑп.

х

Паян — пурне те ӗненетӗп,
Ыран — каллех иккӗленетӗп...
Мӗн тӑван! — пурнӑҫ шыравра,
Шыравӗ — пурӑнӑҫ тавра.

х

Ҫаҫ пулчӗ те — чиплӑ ҫыпсем
Президиума хыпаланнӑн,
Хаваслӑ кукша ҫылтӑрсем
Хӑйсен вырӑнне тухса ларнӑ...

х

Тавӑру — ҫӗнтерет вилӗме,
Чыс — ӑна йыхӑрать.
Юрату — пӑхӑнмасть вилӗме,
Хуйха – хӳтлӗх шырать.

x

Хуçасем çапăçаççĕ. Ан кай
Çав вăрçа эсĕ урăх.
Айăрсем тапăçаççĕ. Ай-хай,
Тантанать ешĕл курăк...

x

Вĕçленчĕ пуçланă ĕçӳ,
Поэма тăп-тăп виçере.
...Телей хыçĕпе кĕвĕçӳ
Мĕлке пек çӳрет.

x

Сан пĕр тĕллев çак ĕмĕртĕ,
Мухтавлă сăвăç:
Пĕр чĕптĕм совеç çук çерте
Шыра эс совеç.

x

Мала анчах, мала! Таса вăрçа
Каллех чĕнеççĕ çĕлĕк çавăрса.
Ăçта каян, этемлĕх, хăвăн хыççăн
Çăмхи-çăмхи кăвак кĕл хăварса?

x

Ма хăрас вилĕмрен?! —
Пĕчĕкçеç телейпе юнашар шăтакан
Пысăк-пысăк инкек те ӳкет шăтăка...
Ма хăрас вилĕмрен?..

x

Тĕнчере пĕртен пер танлăх — вилĕм
Манпа тан тăвать пурне те ӳлем
Саванас-и çакăншăн? Анчах
Ма танлашмалла манпа ачан.

x

Тĕрĕслĕхпе ултав хушшинче
Пирĕн совеç пурнать сарă кайăкан.
Тĕрĕссипе, ултав хăш енче?
Çавна çех пĕлейместĕп-çке лайăххан.

x

Шапа хуранне пĕрчĕк хăйăр лексен, —
Мĕн тейĕр эсир? — чăмăртанĕ мерчен.
Поэт чĕрине элекпе амантсассăн,
Мерченлĕ тăват йĕркепе вăл пирчет.

x

Эй çын элекĕ! Вил-çĕленĕ евер
Ман шăмă витĕр тухран шăхăрса.
Сар савăнăç çинчен паян пĕр евек
Ларайăп-и сар сăвă савăрса...

x

Епле?! — тĕлĕнет мана вилем сунанĕ, —
Аманна, çапах унчченхи хăватрах!
Пĕлмест вăл, айван, çĕнтерÿçĕ суране
Пирчет хăвăртрах.

x

Ăçта ĕмĕрлĕхе тесе шутланă
Этем мухтавĕ-чапĕ? — калар-ха...
Ав, мăй таран хура çĕр сăтса яна
Такам ятне çĕкленĕ палăка.

Тавах турра — шăвать-ха ерипе
Йĕркесĕр пурнăç хăйĕн йĕрĕпе.
Çапах ...чуна хырся çăвас килет ман
Пăлан шап-шур таса хайăрĕпе.

х

Тумхахлă çулпа çÿрессе эп ĕнентĕм,
Халь пĕчĕк хуйха та чăтаймап-ши ĕнтĕ?..
Шап-шурă шăл çеç-и! — вĕри сывлăшпа
Ванса тĕпренеççĕ мунча чулесем те.

х

Тĕнче — Багдад пасаре темелле,
Тивĕçтерсен таварĕ — хуш сумне.
Васкать этем, кумать калле-малле
Халь халь тупас пек пурнăç тупсăмне.

х

Çĕрме пуян вăраххăн ватăлать,
Анчах мĕн-ма каять ...сасартăках?
Пĕлсе пĕтер эс çутçанталăка:
Те хирĕçет вал, те шайлаштарать...

x

Шурă кăна шурă хăва çулçи,
Чĕре тымарĕ евĕр йĕрĕсем.
Хĕресленсе иртен утас çул-шим
Урлă çине тăрăх тымарĕсем?..

x

Çурма çула çитсе çул татрăм,
Çур тĕнчене умран çухатрăм.
Элле çапла çулран çул катăп,
Çут тĕнчене йăлтах çухатăп...

x

Кунсем еңле шуса иртеççĕ хавăрт!
Хура çĕрте Пÿлер те Херсонес.
Мĕскер яланлăх тĕнчере?
Эй, Вăхăт,
Ытла, ытла та хĕрхенÿсĕр эс.

x

Çур сехет тăракан асамат кĕперне
Кам пăхать темĕнччен!
Кĕçтентин! Кĕçтентин! Пĕр самант-ĕмĕрне
Эп сăнатăп хальччен.

Мана курсан эрнипелех пĕр йĕксĕк
Çÿрерĕ тĕксĕм пĕлĕтрен те тĕксĕм:
Ăçтан вăл сиснĕ-пĕлнĕ ман тĕле
Паян килсе çитессине телей?!

х

Тавар илсе-ши, тетĕп, йÿн хакпа? —
Пит савăнса çÿрерĕ пĕр аппа:
Епле туйса вăл илнĕ йытă пек,
Ман пуç çине килессине ишкек?!

х

Мĕн чухлĕ хăрушрах элек,
Ун чухлĕ — ĕненмеллерех.
Хам курнă эп ăна, хам чăтнă,
Сăнни ак халь те чĕререх.

х

Сăввусем салху тесе калатăн.
Пурте, пурте пурнăçне кура.
Уярта çап-çут вăл, анлă Атăл,
Пĕлĕтсем тухсассăн — сем-хура.

x

Эп çынлăх пур-ха теттĕм çынсенче.
Çапла çырман-и Тур кĕнекинче!
Такăнсанах — мана тапса ӳкерчĕç,
Ӳксен — ташларĕç кăкăрăм çинче.

x

Ĕненéр çутçанталăк саккунне:
Хĕл вéçленмесĕр пулмӗ çуркунне.
Йӳççи еçсен те тутлан каласмашкан
Кетсе илетпĕрех уяв кунне.

x

Элле каллех?! Истории аташса
Çӳренĕ самани çула тухать:
Чӳречерен пире вал кармашса
Уксах Тимур куçéсемпе пăхать.

x

Ĕмéрне те такăнмăп тенĕччĕ,
Ĕмĕрне те ватăлмăп тенĕччĕ, —
Пăрнăç пулчĕ çуле — такăнтам,
Пурнăç пывăр килчĕ — ваталтам.

Кам чухламасть ăна! — Арçын вăл яланах
Этемлĕх шутĕнче пĕр карт аяларах...
Хĕрарăм — идеал, анчах та ÿсĕрле вăл —
Каçарăр — выльăхран чылай аяларах!

x x x

Сăвă садне кĕнĕ чух эпĕ пит шуха ачаччĕ,
Шухăш çурхи çилпеле ман пуçăмра вылянатчĕ.
...Пат талса анчĕ улма Çĕр чăмарне кисретсе...
Шухăшăм — йывăр улма. Тусам, эпле кер çывхарчĕ?

x x x

Епле пит сыхлануллă çутçанталак! —
Чи варттăн пÿлĕмне касмасть вăл алак.
Кассан-и? — аслă пурнăç тĕввине кĕрсе
Йалтах арпаштарса пĕтерĕ пÿтсер ала.

x x x

Пĕр шухăш талать те — тарук таканатан,
Чуна çунтаратăн пĕлесшĕн ана та, кăна та.
Нумай пĕлниче те, таванамçам, ырлăхĕ çук:
Кашни пулăмра унăн тунсах вĕçне эп туятăп.

x

Ан çут эс çуртра сар хĕвел тухнă чух, —
Çутти ун мĕлке ÿкермелĕх те çук.
Хăвна чăн-чăнах тус теетĕн пулсассăн,
Эс пул-ха манпа эпĕ айăплă чух.

x

Ан макăр, тăванăм, — куçу пăсăлать,
Куçу пăсăлать — кăмăлу хуçăлать.
Тĕнче — çил çинчи икĕ алăклă çурт вăл:
Пĕри хупăнсассăн, тепри — уçăлать.

x

Анне каланийĕ килет асăма:
Хитре виçĕ кунлăх та, лайăх — яланлăх.
Хитре пулаймарăм, пулайрăм-ши лайăх
Вилсен тăвансем лайăхпа асăнма?

x

Турра та çăмăл мар пире савма:
Асчах каланă пек, пĕр-пĕр сывмар
Шăл ыратсан, эпир, ахтур, телейсĕр.
Ыратмасан — мĕн-ма телейлĕ мар?..

x x x

Пыл та йӳп-йӳçĕ иккен
пысăккăн, ытлăн сыпсан,
Турăх та пыл пек иккен
пĕчĕккĕн, еккĕн сыпсан.
И эс, мăнтарăн чăваш!
Пур япала виçине те
Перекетре эс куран,
перекетре — пурнăç сан.

x x x

Эсĕ, тирпейлĕх, пуян
çын кил-çуртне мĕн таран
Уйăх пек, çутă хĕвел пек
илемлетсе катаран.
Çын умĕнче çын пекех
эп те пурнасшăн, мăнтарăн...
Ах, эс, тирпейлĕх!
Чăвашăн чухăнлăхне пытаран.

x x x

Ыранхине ан хапсан — вăл сан мар,
Ĕнерхине ан асан — вăл сан мар.
Юхан шывра хĕвел ташлана евĕр
Паян, тăванăм, савăнса юлар.

x

Мĕнле тĕнче ку?! — йăлт аптрамалла, —
Шанса та калаçма хăрамалла.
Çапла, ҫын чунĕ — япала халькаççăн:
«Кăтартсанах — туртса илме пăхаççĕ».

x

Кĕр кунĕ! Акă, ӳкрĕ хыçăма
Хуралнă çулçă евĕр хыççăмах.
Кунсем кĕскелчĕç, шухăш вăрăмланчĕ:
Мĕскер кăна килмест пуль асăма!

x

Каллех? Каллех, унччен хиллех, тĕнче
Йăран пек вăрăм ĕмĕр вĕçĕнче
Çунасшăн-тăр пăлхавăр вутĕнче...
Пуç çаврăнать. Тен, çаврăнать тĕнче?

x

Йăлтах тӳлевлĕ тĕнчере, эй-эй, —
Телейшĕн — хуйхă, хуйхăшăн — телей.
Анчах асаплă пурнăçшăн, тăванăм,
Мĕн-ма тӳлемелле вилĕмпеле?!.

x

Ултавçăсем ĕлĕкренех чысра, —
Улталăр, сутăр пĕр-пĕрне часрах!
Анчах ăнланăр, тĕнчене сутаймăр
Чавсаланса ларсассăн та влаçра.

x

Камран килет, мĕнрен? — шутлан ,минрен:
Ирĕксĕртен тĕнче касса çÿретĕн.
Асчах ăс пуçтарать ăс çитменрен,
Ухмах çына ...ăс кирлĕ мар перре те.

x

Теллев эп лартнă пысак еç тума,
Васкатнă вăй виçмесер утама.
Мен-ма, мĕн-ма эп Атала курмасар
Хывса пăрахнă çăмăл аттама?

x

Ют сĕршывра эс пулна, Мускавра,
Тупра пуçтарнă, ылтăн та ахах.
Пĕлетĕн-и, пĕр сунтăх Çĕр тавра
Çавăрăнсан та юлнă... сунтăхах.

x

Ай кураймаççĕ эпĕ çĕкленсен,
Ÿксен вара — тĕсси паха тееççĕ.
Кашт шутласа пăхасчĕ хать вĕсен:
Серте выртакансем кăна ÿкмеççĕ.

# АСТИВСЕ ИЛМЕЛĔХ ИК ЙĔРКЕН

✦

Тухăçран Хĕвел тухать те анăçа анса
 ларать.
Чалăш куçлă чăваша та хăй çине вăл
 пăхтарать.

✦

Палламан çынпа ниxçан та ан калаç эс
 ӳсĕрпе, —
Ӳсĕрпе хăй хăватне те çухатать иккен
 шеопет.

✦

Гегель пек ăслă пулсан та, ан хĕсĕрле эс
 чунна —
Чун вăл — черчеккĕ хĕрэрăм, эсĕ
 пĕлмен-им çавна!

✦

Эп телейлĕ чухне пĕр çавра тĕкĕр пекчĕ
 тĕнче,
Пĕр тумлам куççуль витĕр пăхсан —
 иккĕленчĕ тĕнче.

✦

Ан калаç. ан пайла хăвна çех тивекен
 телейне —
Еçтешӳ. сутăç пек, ыранах тыттарать
 кĕвĕçӳ тӳлевне.

✦

Вĕçевĕ пур пек, кайăкĕ хăй — çук.
Çапла-шим ут пӳрен чун кайнă чух!..

✦

Кăмрăкланать шап-шур çурта çиппи, —
Инкекĕм, эс те çунса кай эплин!

# ПОЭМĂСЕМ



## Вĕçленмен поэма

Ура — Атăлта,
Улăп сăрчĕ — пуçелĕк.

*Энтип Ваççи*

I

Пуçелĕкĕм манăн чечеклĕ çак сăрт,
Тӳшекĕм — çемçе симĕс улăх.
Выртса вуламашкăн ак пуç вĕçĕнче
Хунар вырăнне çутă уйăх.

Хитре тĕнчене хăйĕнчен те хитре
Çырса кăтартаймăн — пĕлетĕп.
Мана çырлахтарĕ ăна чăвашла
Талантлăн пăхса вулани те.

Чăваш сывлăхне сыхласа тăракан
Тавралăх, санран эп писеп-и?
Пăлан тутăх тăмлă çыранĕ те ав
Чăвашăн янах шăммисем пек.

Вăтам ĕмĕрти ялавсем пек вĕçет
Хăва тăрринчи сӳс, темтепĕр.

Шыв-шур тайӑлсассӑн, ҫырма-ҫатрасем
Агеев * ӳкерчӗке евӗр.

Ик аркӑллӑ симӗс кӗпеллӗ йӑмра
Анат чӑвашсен кинӗ майлӑ,
Ытти йывӑҫсен-курӑксен хушшинче
Хӑй евӗрлӗ лӑпкӑ, сӑпайлӑ.

Сӗтел пек Сител те Юпа-Юнтапа,
Арпуҫ Арапуҫӗ те Атӑк...
Эсир пулмасан, ытарми ялӑмсем,
Этемлӗх историйӗ катӑк.

Санрав пӑхаттир пек сӑр сӑрт умӗнче
Кукленнӗ ача пек тӑратӑп.
Ҫук, ӑсӑмпа мар — авалхи сисӗмпе
Таҫти ӗмӗре таврӑнатӑп.

Вӗри сывлӑшпа ҫил сывлать кӳ те кӳ,
Юлать тайӑлса кӗлчечеке.
Кам чӗртнӗ кунта несӗлсен чечекне?
Е вӑл ырӑ тӑхӑм пӳлекӗ**?

Пӑлхар хулисен ишӗлчӗкӗсем пек
Юхса тӑракан пӗлӗт айӗн
Мӗн-ма ӗсӗклет пӗр текерлӗк ялан
Калла та малла вӗҫнӗ майӗн?

Мӗскер эс ҫухатран, мӗскер эс шыран,
Кама пытаратан, текерлӗк?
Чечек тӗпчене куҫенчен пахнӑ чух
Ума шавӑнать пек синкерлӗх.

---

* Агеев — чӑвашсен паллӑ художникӗ.
** Пӳлек — вилтӑпри ҫине лартнӑ хунӑ парне.

Е эсĕ тĕпри несĕлсен ыйхине
Сирме йыхăратăн, чĕнетĕн?
Е çул иртнĕçем мăкалса пыракан
Астăвăм хĕçне çиçĕмлетĕн?

Кĕве çинĕ евĕр çыруллă чулсем
Эс йĕнĕ саспа вăранаççĕ.
Çичют-тăшмана паттáрла хирнине
Чĕлхесéр уйсем астăваççĕ.

Пуç хупă çынсен кăтрисем пек умра
Кĕл тĕслĕ кăлкан хумханать-и,
Е çил, тутăхан çĕрĕ пек, çаврăнса
Çулсен тусанне юпалать-и,

Е путăк та шăтăк мурьям * çийĕнче
Çĕлен çĕкленсе шăхăрать-и —
Кашни хускану чулланан чунсенчен
Таçти ĕмĕре кăларатĕ.

Эпир — иртнĕ вăхăтан пулăмсем:
Пăлхар-сăварсен юн тымарĕ,
Пéрре уйрăлса та тепре пĕрлешсе,
Чĕремĕрсене килет мар-и?

Текерлĕк, текерлĕк, пÿкле ан вĕççем,—
Юрру сан ăстăвам уççийĕ...
Мухтавлă кунсен асаилĕвĕ пек
Мĕлкÿ шуса иртрĕ пуç çийĕн.

II

Тĕнче те гăваткал, те çап-çаврака,—
Анчах тăван ен — ун тĕпелĕ.

* Мурьям — выльăх масарĕ.

Пĕрре татăлса та тепре сыпăнса
Те вăхăт шăвать, те шур пĕлĕт.

Тӳшекĕ мăн улăх, пуçелĕкĕ сăрт,—
Қанать пек кунта аслă улăп.
Элчелĕм çитсессĕн, тăрук чун тухсан,
Е эп те çапла выртса юлăп...

Телейлĕ теççĕ çынна,— тăхăмсем
Ялан ырăпа асăнсассăн.
Телейлĕ эп пулăттăм ахрăм çулне
Кĕрсе çаврăнсассăн ман сассăм.

Юхать-и Пăла çаврăна-çаврăна,
Қашни çаврăмра кĕмел сулă.
Таçтан авалран-и е чун тĕпĕнчен
Тухать тухатуллă салхулăх:

«Алран каймн аки-сухи,
Асран каймн атте-анне.
Аки-сухине хăварас çук,
Атте-аннене манаяс çук...»

Сире эп, асран тухайми несĕлсем,
Хура варманта та, уйра та
Кăвак пĕлĕте перĕнсе утакан
Кĕрнек улăпсем пек куратăп.

Куптак сухапуç хыçепе майĕпен
Эсир ĕмĕре туртса пынă.
Çук, çук,— хыçăрта çăпата йĕрĕ мар —
Истори хăех выртса юлнă.

Савман самана парайман телее
Тиек-улпутсем те илеймĕç.
Эсир, несĕлсемĕр, шăпа умĕнче
Нихçан та пулман хархăм-кăлмĕç.

Апшур йӗрӗхе, этеме пусса мар,
Автан юнӗпех тивӗҫтернӗ.
Салху вӑхӑта васкатасшӑн ӗҫпе
Асамҫӑсем пек ӑс ҫитернӗ.

Ирттернӗ ҫапла пурӑнан пурнӑҫра
Пер чӗптӗм те канлӗх курмасӑр.
Элчелӗр ҫитсен, шур пуҫпе чӗркесе
Пытарнӑ сире хурӑнташӑр.

Аҫта халь выртаҫ шӑммӑрсем-шаккӑрсем,
Ару пуҫӗнчи улӑпсемӗр?
...Шӑпа виҫсе панӑ каҫалӑк ҫинче
Ӳксе ҫухалать-шим ҫак ӗмӗр?

## III

Ак тухӗ ирпе яланхи йӗркепе
Пушар пек чӳклевҫӗ хӗвелӗ.
Манаҫлӑ ларан сарт ҫамки майӗпен
Юн пӗрӗхнӗ евӗр хӗрелӗ.

Умри утма ҫул улӑп ҫулӗ пулсан,
Ҫумри сукмаксем ӑна пӳлмӗҫ.
Эпир улӑхан вӑй-хӑват тӳпине
Те ҫитӗпӗр, те ҫитсе пулмӗ...

Виҫ аршӑнлӑ пусӑм, яланлӑх ӗҫсем
Чӑн-чӑн улӑпла,— кам тавлашӗ!
Анчах улӑпла-ши чунри туйӑмсем,
Еткерӗмӗрсем чӑвашла-ши?

Тӑванлӑх та перлӗх ирре ҫич ютран
Пӗтев-хурткуҫҫи пек сыхланӑ,
Тӑванлӑх та пӗрлӗх мӗнпур никеке
Чӑтса ирттермешкӗн вӑй панӑ.

Таптать тепĕр чух ак чăваш чăваша,
Чунне хавшатать кĕвĕçӳлĕх.
Элле айккинчен хĕтĕртсе тăнипе
Çухалĕ умран улăп çулĕ?

Элле несĕлсен пархатарлă пилне
Эпир манса кайрăмăр ĕнтĕ? —
Çапла шутласа, чĕрене çунтарса,
Эп сăвă çырмашкăн вĕрентĕм.

Пуçламăшĕнче йĕркеленнĕ сассем
Чан çапнă саспа янăраччăр.
Ару пуçĕнчен сулăмпа тухнăскер,
Эп — сирĕн, поэт чунлă ачăр.

Атте-аннесен сăввисен-юррисен
Ситреннĕ вĕçне тухас марччĕ.
Ахаль-и тин çеç шур хур тĕкĕ çине
Саркайăк вĕçсе килсе ларчĕ.

Парне пек кунсем те ялан ăшă мар,—
Чечек улăхне те там тивĕ.
Пĕрех упраясчĕ таса чĕлхĕре,
Пĕрех пулаяс сире тивĕç.

Мĕн тăвăн? — паян та ума самана
Пылпа юнашар хучĕ эрĕм.
Хĕрхӳ кунсене эп тутантăм тем чул —
Пылне астивме пĕлеймерĕм.

Аттесĕр эп ӳсрĕм, çапах чунăмра
Упранчĕ сăмахăн хăвачĕ.
Ик çыншăн та йывăрлăх тӳснĕ анне
Ик çыншăн та çепĕçлĕх пачĕ.

Ҫалас сăмахсем аҫа-ҫиҫĕм пулса
Чула та касма пултарсассăн,
Анне юррисем чун эмелĕ пулса
Суран сиплеме пултарсассăн,

Илсе иксĕлми ытарми пурнăҫра
Эпир ĕмĕр-ĕмĕрлĕх чĕрĕ...
Ҫӳлте ҫутатать улăп чĕртнĕ хунар,
Ура айĕнче — улăп ҫĕрĕ.

1986 ç.

# Митта

Поэма

Сăпайлăх, чăтăмлăх, çыпăх, чунлăх. Çак сăмахсен пĕлтерĕшĕсем пĕр сăмахра — митталăхра шăранса-пĕтĕçсе конкретлăх тупрĕç. Митталăх... Мĕн тери çитмест вăл пире тепĕр чухне!

Митта Ваçлейĕ тесен, тӳрех ун йывăр шăпине аса илетĕн, ирĕксĕрех вара сăвви-юррисем чĕлхе çине килеççĕ:

Хĕнпе хĕрсе туптаннă сассăм
Каллех ян хурçа пек таса.

Ян хурçă пек таса сăвăсем çырма таса чун-чĕреллĕ çын пулмалла. Хăрушă элек тӳссе курнă, «вунă çул лашманта та пилĕк çул чалтунта» çӳренĕ поэт чунĕ чулланман: вăл кашни кунне тĕрĕслĕх çĕнтерессе ĕненсе пурăннă, кашни утăмне Çĕршыв ячĕпе, ун пуласлăхĕпе виçсе пуснă. Чĕркĕмĕл пек таса упраса хăварнă поэт хăйне. «Чухăн, анчах сывă (пур енчен те) таврăнатăп. Турра шĕкĕр!» — тесе çырать Митта хăйĕн тусĕ Алексей Талвир патне 1954 çул вĕçĕнче Çĕпĕр çĕрĕнчен.

Пысăк поэт пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен калаçни ун самани çинчен калаçнипех пулать, мĕншĕн тесен вăл, пĕр вĕçĕмсĕр вăхăта сехетпе виçнĕ пек, саманана чĕре таппипе виçст. Хальхи вăхăтра, парти вĕрентнĕ пек, сăмаха тӳррĕн калама ханăхса пыратпăр. Хăй вăхăтĕнче «халăх тăшманĕ» тесе айапланă Митта Ваçлейĕ çулĕпе утнă çынсем пулман-и вара пирĕн? Кая юлса пулин те, вĕсен ырă ячĕсене халăха таварса парасси — ентешĕсен кăна мар, ĕçтешĕсен те тивĕçĕ, парамĕ. Хăв çĕр çинче пурăнни харама ан кайтар тесен, нумай-нумай тĕрĕс сăмах каламалла: шурри—шурах, хурри—хурах пултăр. Апла кĕретлĕх (гласность) пĕр енлĕ ан тухтăр — сутăнчăксемпе элекçĕсен ячĕсене те тӳррĕнех пĕлтермелле: халăх пурнăçне текех вăтăр çиччĕмĕш çул ан килтĕр. Карамзин калашле,

истори ырă çынсене кăна мар,— çав шайрах, çав вăйпах тиран ячĕсене те астумалла, унсăрăн малалла кайма çук.

Кашни талантлă çыравçă — пĕр вăхăтрах философ та. Митта Ваçлейĕн ăспа туйăм шăранса пулнă сăввисем шухăша яраççĕ, чуна кайса тивеççĕ. Унран вĕренмелли пайтах. Анчах паян кунччен те поэт еткерне туллин тишкерсе тухакан пулмарĕ-ха — ах, теетпĕр те хур тĕкĕпе унтан-кунтан тĕккелесе илнипех çырлахатпăр. Юрать-ха, хăй вăхăтĕнче Г. Юмарт Митта Ваçлейĕн пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен самаях хулăн кĕнеке кăларма пултарчĕ. Унтанпа вунпилĕк çул ытла та иртрĕ ĕнтĕ, анчах,— те кĕмĕл çитменнипе, те кăмăл çуккипе — аслă поэтамăр çуралнăранпа 80 çул çитнĕ ятпа та ун çырнисен пуххине кăлараймарăмăр. Çук, халь тин Миттана нимех те кирлĕ мар,— пире кирлĕ вăл, ун еткерĕ...

Кӳлемекри лăпкăлăх поэтшăн мар. Митта Ваçлейĕ вĕресе тăракан пурнăç варринче тăнă, çавăнпа ун таврақурăмĕ те анлă пулнă; этемлĕх историйĕнчи чи явапла вăхăтра пурăннă вăл, çавăнпа ăстăн тĕлĕшĕнчен те хăвăрт аталанса çитнĕ. Пур япала та кăсăклантарнă ăна, анчах поэт пĕр шикленмесĕр, хăйне мĕн кĕтнине пĕлмесĕр малаллах пăхнă... Элекçĕсемпе çав вăхăтри тӳресем, кĕвĕç чунлă çыравçăсемпе сутăнчăксем вара ун хыççăн шăршласа çӳренĕ, поэта национализм ярлăкĕпе çăварлăхласшăн пулнă.

...Митта Ваçлейне эпĕ мĕнпурĕ те икĕ хутчен çех курнă: пĕррехинче — хамăр килте, тепрехинче — тупăкра...

1955 çулхине пулас — лайăх астумастăп — Василий Егорович Çĕпĕртен, Таловкăран, таврăнна кăначчĕ-ха. Пирĕн патра аннепе тем калаçса ларатчĕç. Эпĕ 12 çулхи ача, пурнăç тути-масине астивме тин çех пуçланăскер, ун куçĕнче ĕмĕрхи тунсах тĕлкĕшнĕ пек астăватăп, халь вара çав тунсăха ун саввисенче куратăп. Василий Егорович кайма пуçтаранса ура çине тăчĕ, куççулĕ кивĕ кĕрĕкĕ çине пат тумласа ӳкрĕ, курмăш пулчĕ ăна вăл, вара сăра куркине шалт ĕçсе пачĕ. Ун чухне эпĕ, айванскер, пуç

тавра шухăшласа илме пĕлмен, Миттан пĕр куççуль тумламĕ те пирĕн кулленхи инкек-синкексенчен чылай йывăртарах тайнине тин ăнлантăм. Ак камран вĕренмелле чăтăмлăха!

Миттасем пултаруллă йăх пулнă, пĕртăвансем Илле, Иван, Васлей, Петĕр, Якку, Коля — пурте вĕсем сăвăсемпе калавсем çырнă, хăшĕсем ăста куçаруçăсем пулнă. Сăмахран, Колян сăввисене «Вĕçленмен юрăсем» кĕнекере вулама пулать, Иванĕ, калавсем çырнисĕр пуçне, вырăсларан пайтах кĕнекесем куçарнă, вĕсен хушшинче — «Дети капитана Гранта», Петĕрĕ чăвашсен паллă прозаикĕ шутланать. Анчах,-- мĕнрен килет, камран? — вĕсенчен пĕри те юррисене юрласа пĕтереймен. Пирĕн литературăра чи синкерлĕ, трагедиллĕ ятсем.

Çыравçăсен йышĕ нумай пулсан та, ытлашши поэт нихçан та пулман. Литература кĕрекинче вĕсен кашниййĕн хăйĕн вырăнĕ. Хисеплĕ кĕтесе чавсапа хирсе вăхăтлăха йышăнма пулать-и, тен? — анчах Вăхăт хăвна тивĕç вырăна çавăтса пырсах лартать. Тав халăх астăвăмне,— кĕрекерен хăваласа кăларса янăскере те хăй вырăнне илсе килет. Митта Васлейĕн вырăнĕ Константин Иванов, Çеçпĕл Мишши, Петĕр Хусанкай ĕрстĕнче. Вĕсемпе вăл çума-çумăн ларса пĕр чĕлхе тупса калаçма-тупăшма пултарать: ун поэзийĕнче К. Ивановăн чăн-чăн чăвашла, çыпăçуллă та ирĕк чĕлхи, Çеçпĕлĕн хĕрӳлĕхĕ, Хусанкайăн пуянлăхĕ. Анчах Митта никам пек те мар, хăй пек çех,— унăн хăйĕн сăн-сăпачĕ, çепĕçлĕхĕ, хĕрӳлĕхĕ, хĕрхӳлĕхĕ. Сăвви-юррин пĕр йĕркине илтсен те, «ку — Митта» тетĕн. Кашни сăмахĕ, пичет çапнă пек, вырăнлă, кашни сăмахçаврăнăшĕ тирпейлĕ.

Мĕнле хусканушăн та тĕрев кирлĕ. Миттан çынна хисеплени тата ун курайманлăхĕ чуна çунатлантарать те, çунтарать те. Вăйлă поэтăн витĕмлĕхĕ те вăйлă: Митта витĕмлĕхĕ хăшпĕр поэтсен творчествинче ăраснах паллă. Тин çеç çырса пĕтернĕ «Митта» ятлă поэмăра вара ятарласах ун сăмахçаврăнăшĕсемпе усă куртăм,— унта поэт

чунĕ, кăмăлĕ, шухăшĕ. Василий Егоровичăн «Тайăр» поэми мана уйрăмах кăмăла каять. Вăл маншăн хура вăрманта юхса выртакан çăл шывĕ пек: витĕр таса, сиплĕхлĕ. Тĕлĕ-тĕлĕпе чăтаймасăр савăнăç уçланкине чупса тухать, вара каллех чун чăтлăхне кĕрсе юрлать. Ӳпне выртса пĕр-икĕ сыпкăм шывне ĕçсе илнĕ пек, пĕр-икĕ çаврăм сăввине вулатăн та хыпса çунан ăша-чикке пусаратăн, тĕреклĕрех туятăн вара хăвна. Лайăх поэзи сиплĕ эмел иккен.

Митта Ваçлейĕ пин юрă çырса хăвараймарĕ, теççĕ. Александр Алга, поэт творчествине тĕпчекенсенчен пĕри, «Кăмăлампа шухăшăм» кĕнеке умсăмахĕнче те çаплах калать. Апла-ши?.. Эпĕ Василий Егоровичăн тăван килне энкэведешниксем киле-киле арăш та пирĕш тустарса кайнă хыççăн картишĕнче, пĕчĕк пахчара ун алçырăвĕсем çилпе тăлăххăн вĕçкелесе выртнине астăватăп... Тепĕр тесен, ан тив, шучĕпе пин юрă çырайман тейĕпĕр,— вăхăтне кура çырлахуллă кăмăлпа пăхар ун çине,— анчах кашни юрри пирĕн чĕрере, пăхмасăр вĕренмесен те — пирĕн чĕлхе çинче.

Пурте вăхăтлăх тĕнчере, халах аставăмĕ кăна ялан-лăх. Темшĕн мана ĕлĕкхи Италин хисеплĕ поэчĕ, тĕнчипе паллă «Иерусалим» авторĕ Торквато Тассо аса килчĕ. Вăл çуклăхра пурăнса ирттернĕ ĕмĕрне, мăшкăл тӳснĕ. Виличчен икĕ çул çурă маларах тĕрмерен тухнă, вара ăна поэтсен лавр кашăлне тавăрса панă. Ăна пытарнă чух пĕтĕм Рим халăхĕ ĕсĕклесе йĕнĕ. Истори трагедилле пĕр-пеклĕхĕ...

Василий Егорович 80 çултан та иртрĕ, анчах пуçа ыраттарса шухăшласан та, сакăрвунă çулхи Миттана куç умне илсе килейместĕп, вăл яланах 49-та. Акă манăн ĕç сĕтелĕ çинчи сăнӳкерчĕкре те Митта Ваçлейĕ кĕрнеклĕ, вăйпитти. Кăшт хĕсерех пăхнă тунсăхлăрах куçĕсенче сăпайлăх, тӳркăмăллăх, чăтамлăх, чунлăх — митталăх.

7. Николай Исмуков.

Куплет-куплетăн сăввăм манăн
Шур юр çине чĕр юн тумланăн
Пăчăртанса тухать чунран.
...Вилсен те сурĕ ман суран.

## Арапуç — 1947 çул

Юнтапа сăрчĕсем — хура çĕр хумĕсем,
Сăрт айкки — ешĕл симĕс çаран.
Тикĕс пынă чухнех тикĕс мар çырмасем —
Çурхи шыв çурса иртнĕ суран.

И касси-кассипе, и пахчи-пахчипе
Çĕрулми кăн-кăвак çеçкере.
Хĕвелçаврăнăш, ав, кил хĕвелĕ пекех
Сарă савнăç сапать вĕçсĕрех.

Чечекрен чечеке вĕлле хурчĕ вĕçет,
Шухăш пек, тăраймасть вырăнта.
Çĕрĕ витĕр пăхса çывăхланнă инçет
Иртнĕ кунăмсемпе хурăнташ.

Аппан чĕнтĕрĕ пек çӳп-çӳхе тĕлĕксем
Чӳхенсе юхрĕç пуль Пăлара...
Çил туллан çинçе хуран айне эп ӳксе
Выртса йĕтĕм те — халь çăмăлрах.

Эп — пăрçа хуралçи. Кивĕ кĕрĕк çирс,
Татăк çăкăр — чĕре сурине.
Хутпала кăранташ умĕнчи кĕсъере
Ӳкермешкĕн уй-хир юррине.

Сухала ӳстерсм — ан паллатăр çич ют,
Тăшманран ĕмĕте пытарам.
Мĕн амакĕ? — таçтан, шиклĕрех катаран
Тулхăрса ыткăнать юланут.

## Çĕпĕр — 1949 çул

Ак каллех умăмра тутăх хĕç-решетке,
Ĕмĕтсем — çапса хуçнă çунат.
Ак каллех умăмра çав эсрел-кĕлеткех
Тайланса каллĕ-маллĕ кумать.

Эй, тĕрме хуралçи! Қасăкрах ĕмĕре
Қайĕ терĕн-им эс қаçăхса.
Урана пралукпа тăлласан та, пĕрех
Юррăма пăрахаймăн çыхса.

Туллашса-татăлса юн карса илнĕ куç —
Çăтса ярăн мĕнпур тĕнчене.
Аллунтан тыттарсан вараланнă виç пус,
Сутса ярăн тăван пиччӳне.

Çын асапĕ сана — чи юратнă апат,
Çын вилсен — саншăн савнăç мĕн чул.
Чĕре мар ăшунта — тимĕр тылă тапать,
Чĕрĕ чун вырăнне — юнлă чул.

Шурлăх пек йӳçекен санăн совеçӳнте
Путнă çын сумпа çех-и? — пинпе.
Тăрăлсассăн истори, Қĕретлĕх сутне
Мĕн куçпа тухăн эс, мĕн питпе?!

Çӳллĕ Пĕлĕт-атте, эс аçа чулĕпе
Ма çапман халиччен тискере?
Е хура Çĕр-анне çӳл Сăвап çулĕпе
Йышăнасшăн пулман ирсĕре.

Эп — чӳклевçĕ ачи, ман ылханăм сана
Çиттĕрех чунилли, çиттĕрех...
Мен кăна çуратмасть тĕнчене самана —
Уншăн çын та шуйттан та пĕрех.

## Çĕпĕр — 1950 çул

Çĕпĕр аслă иккен, аслă та тете мар,
Çĕпĕр анлă та — çук, ирĕк мар.
Кăнтăрла та кунта маншăн тĕттĕм çĕрле,
Çăлтăр та, ав, ӳкет месерле.

Çул енче чул хӳме, çӳл енче сĕм тайга
Касаматăн çуртне хупăрлать.
Çунатне пăркăчланă вĕçен кайăка
Муталать выçлăхпа сив кăрлач.

Çил улать, йынăшать чӳрече айĕпе,
Таврара та юр пилĕк таран.
Ятăма-шывăма майĕпе-майĕпе
Шур тĕнче чĕрĕллех пытарать.

Пархатарсăр иккен «сталинла самана» —
Эп савса мухтаман-и ăна?! —
Манăн ĕненĕве — ĕнерхи паттăра
Халь пăвса пăрахасшăн тăрать.

Йăлт чӳк патăм ăна — чунăма, туррăма,—
Хирĕс-хирĕç ак çук ... татăк хут.
Чĕререн татăлса анакан юррăма
Хурăп хуп хушшине пĕреххут.

Хĕвелтухăç енчен шăвакан пĕлĕтсем,
Ыталам та сире пĕр юхам.
Хамăр ял патнелле тĕрĕс-тĕкел çитсен,
Картаран уртăнса эп юлам.

## Таловка — 1955 çул

Кăшкăрса илтĕнмест — килĕм-çуртăм инçе,
Тинкерсе курăнмасть — умăмра сĕм вăрман.

Ах, мĕне систерсе, утас çулăм çинче
Кĕмĕл сулă пулса çаврăнать çил-тăман?

Саккăрла явăнса çил тăллать урана,
Е татах тамăка тавăрасшăн мана...
Ирĕк сывлăшĕпе чунăма эп çăвам,
Тăван кил тунсахне куççульпе эп çăтам.

Кайăкла пурăнса irттерме пурнăçа
Кайăк мар эп, тăван, айăп çук ман, тăван.
Пĕчĕкçеç шанăça, юлашки шанăça
Чун хевтийĕ тăвам, çул пĕтевĕ тăвам.

Укăлча хапхине эп кĕретĕп уçса;
Сывă-и, тăван ен, сывă-и, Арапуç?
Чăвашсен йăлипе ыватăп вак укçа
Иртнĕ çулăм шутне хĕрĕх те çичĕ пус.

Аллăмра тав курки ирĕк кун пек тулли.
Савнă çыннăм ăçта, тав тума пулнăскер?
Акă, терĕç мана, унăн кĕмĕл сулли,
Ал тутри вĕçĕпе тĕвлесе çыхнăскер...

## Пĕрремĕш монолог

### Кăмăлăм

### I

Çак çутçанталăк панă янтă пурнăç
Уяв парнийĕ мар иккен, туссем.
Çерçи сăмси чуль саванăç эп курнă,
Эп курна мăшкăл та элек тӳссе.

Шайлаштару саккунĕ! Ав çĕкленĕ
Кĕрхи хĕвел кĕрхи чечексене.
Анчах мĕн-ма инçе çулсен çĕклемĕ
Ытла нумай тиенчĕ ман çине?

Асаттесен чăтăмлăхне шыратăп
Чулсем çинче туптаннă чунăмра.
Тавах, тавах! Путмарăм эп шывра та,
Халь çунас марччĕ çăткăн çулăмра.

Шанăçăма тавăрса панă ĕмĕр
Упратăрччĕ пурнас кунăмсене.
Çăварлăхланă тур лаша пек ĕмĕт
Тапса туртать-ха асилўсене.

II

Поэт вăл — халăх чунĕ те хатарĕ
Тесе çсленĕ чух эп чунпала.
Манран хам халăхăн ташманĕ турĕç.
Çынсем, çакна мĕнле ăнланмалла?

Кама шанса кама мĕн калăп ситĕ,
Кампа ларса пусарăп ăшчике.
Туссем тесе шутлана этемсем те
Мана сутса, тен, тухрĕç тиске.

Пурăнăçа, пуçа пушмак тивсессĕн,
Ирĕксĕрех иккĕленсе вис́сен:
Мĕне пĕлтерĕн, тĕрĕслĕхĕм, эсĕ? —
Эп тĕрĕсмарлăх аллинче вилсен...

Эй, вăтăрмĕш çулсем, йўп-йўçĕ эрĕм
Тути-масн килет чĕлхем çине.
Тавах, Çĕршывăм, — эсĕ ĕнсимерĕн
Эп ташману пулма пултарнине.

## III

Çавра-çавра пуç кăшăлĕ тĕрлерĕм
Суйла-суйла хитре чечексене.
Шăнкрав чечекĕ шанчăк пултăр терĕм,
Çул пултăр терĕм сар ейĕксене.

Нумай савăнаймарăм — шанчĕ шанчăк,
Нумай та утаймарăм — пĕтрĕ çул.
Хăш вăхăтра пуç кăшăлĕ пушанчĕ,
Текех унта хăрман чечек те çук.

Тăшман тени такăнасса, тен, кĕтнĕ,
Çĕтсе каяссине, тен, çичĕ ют?
Епле вĕсем васканă! Ав, пĕветнĕ
Тăпрам çине хумашкăн капăр хут.

Ан савăнăр,— эп юрăсем хуратăп,
Çухатуран та рифмăсем туса.
Ыр-усала халь лайăхрах куратăп —
Куççулĕ тасатать иккен куçа.

## IV

Çулса пăрахнă Арапуç çаранĕ
Қаю шăтса тек ӳсмĕ терĕç-ши?
Пĕр таптасассăн хуйхă Тамерланĕ,
Пуçа текех çĕклеймĕ терĕç-ши?

Куратăр-и? — саманисем халь урăх,
Хĕвел те çумăр çупăрлать чуна.
Илтетĕр-и? — çинçе тупаллă курăк
Пăхаттирле сирсе тухать чула.

Эй, хирĕçлев саккунĕ, кассăн-кассăн
Ӳстерекен вăрттăнлăху ăçта?

Хăрушă элеке чăтса курсассăн,
Пулан иккен ăсчах та, сăвăç та.

Шухăшăмсем çитеççĕ пур çĕре те,
Аса илетĕп савнă Тайăра.
Элле, элле ун çулĕпе çӳретĕп?
Элле шăпам саплашĕ сăвăра...

V

Сан умăнта тайма пуçа эп тайăп,
Анчах мĕнпе-ши татăп парăма? —
Чи йывăр вăхăтра мана эс, Тайăр,
Касаматра памарăн касăлма.

Эс чăтăмлăх юрриййĕ пултăн маншăн.
Эс ĕненӳ ялавĕ пек малта
Çырас сăв-юрăсемшĕн, çутă куншăн
Вунçичĕ çул хумхантăн сахалтан.

«Сан шăпуна, поэт, аван пĕлетĕп,
Мĕнпе вĕçленнине те... пурпĕрех
Кашни кунах сана аса илетĕп,
Кашни кунах санра шырап тĕрек».

Çапла чунран пăчăртанса тухайнă
Ман сăввăмсем те, пĕчĕк улăп пек,
Çын хуйхине кăштах çăмăллатмашкăн
Пултарайсан — телейлĕ пулăп эп.

VI

Палхар вăхăтĕнчи çут çăлтăрсемĕр,
Сире пухса ыйтам-и пĕр сăмах? —
Мĕскершĕн чăнлăх кĕçĕн виçĕ ĕмĕр,
Ултав вара виç ĕмĕр аслăрах?

Тĕнче яланлăх. Улшăну та уншăн
Хăйне тытса тăмалăх мелĕ çех.
Тĕрĕслĕхе самантлăх чапшăн, мулшăн
Сутса яракансем те çавсемех.

Чунсăрсене чун пиллени те кăлăх.
Элле этем ялан хирĕçӳре?
Ав, тĕрĕслĕх те тепĕр чух хăр-тăлăх
Ыйткалакан пулса ыйтса çӳрет.

Пĕкен пуçа пăлат хĕç витмĕ теççĕ...
Асат хуçмасть-и вĕçсĕр тайăлсан?!
Митта тăхăмĕсем кĕтме пĕлеççĕ,
Анчах чĕркуçленмешкĕн — нихăçан!

## VII

Тепре выртса тепре кăна курам-и
Курса пĕтереймен тĕлĕкĕме.
Каллех шап-шур кĕпе эп тăхăнам-и
Пуçа ухса манаçлăн çӳреме.

Эккей! Кĕпийĕ пĕттĕр, пуçăм юлтăр —
Хам сывă чух кĕпи вăл пулĕ-ха.
Кунсем иртсе çухалччăр, пурнăç юлтăр —
Пурăнăçпа пĕрле кун килĕ-ха.

Ан йĕрĕр, ан хурланăр, тăкăнсассăн
Улмуççисен сулмакла çеçкисем.
Çурла сине çанталăк çаврăнсассăн,
Хĕвел сăнне илеççĕ улмисем.

Ылмашăван хĕрхӳ чикки сăваплă:
Мĕнпур çĕнни те вилĕмсĕр ырри
Унта ача пек çуралать асаплăн,—
Апла сăмахăм тӳррĕн пултăр-и:

## VIII

Çухалнăччĕ эп утнă çул хисепĕ,—
Пăхсан, пуç çаврăнатчĕ темĕскер.
Таçти çĕрте çĕтсе çӳретĕп эпĕ,
Çынсем те, турăсем те маннăскер.

Ман çул-йĕрпе çӳрекенсем сахал-им
Вут евĕр сӳнчĕç Çĕпĕр çĕрĕнче.
Çав аллă виççĕмĕш çулпа ахаль-им
Кăвак хуппи пек усăлчĕ тенче...

Вĕçет халат пек ирĕклĕх хыпарĕ.
Хавхалану, килех савăлăха.
Анчах мана камах таварса парĕ
Çамрăклăха, çухатнă сывлăха?!

Ах, ах темесĕр сывлăшăм тухмасть-çке:
Иртсе пулать-и, çук-и алларан...
Аша-чикке лăплантарайме çскĕ,
Укет хăш чух хур тĕкĕ аларан.

## IX

Тен, сăвăçсем унта çунса каяççĕ? —
Ӳкеççĕ Пăлана çут çăлтăрсем.
Вĕт хумсемпе шăнкăртатса юхаççĕ
Çырăнаймасăр юлнă сăвăсем.

Шухăшласан, çулпуçăн çутă чапĕ
Çĕкленнĕ мар-и çын хуйхи çинче.
Эпир вара, кăшт ухмахрах ача пек,
Пуçа пĕкетпĕр унăн умĕнче.

Тĕнче йĕркисене пăртак ăнлантăм:
Кайсах пырать иккен мĕн килекен,—

Виле сăхса ларан хура çăхан та,
Тав вăхăта, вилĕмсĕр мар иккен.

Эй, кĕр енне тăм тивнĕ арăш-пирĕш
Улма аври пек асаилӳсем,
Сире те тăраймаççĕ пулĕ пирĕн
Пурăнаймасăр юлнă пуш кунсем.

X

Пĕртанлисен хушшинче çех пĕртанлăх.
Туссем, туссем, эп тивĕç-ши сире?
Кăмăлăрсем мăн Атăл евĕр анлă,
Ят-шывăрсем хисеплĕ виçере.

Шур çăкăр мар — шалтан тивертнĕ ăвă
Çунтарнă чух çунса тăран ăша
Эсир эмелсĕр-мĕнсĕр сиртĕр хавăр
Çынлăхăрпа ман йывăр шухăша.

Çут тĕнчене хупса кайма памарăр,—
Апла эп сирĕн, сирĕн пĕтĕмпех.
Халь тăварланă шыв мана кашт парăр,—
Хаяр ӳкнийĕ тухтăр тĕтĕм пек.

Кĕмĕлпе мар, камăлампа тав тавап
Сăмахсарах ĕненнĕшĕн мана.
Пĕр сак çинче пире ан пултăр тăвăр,—
Çапла хушмасть-и çĕне самана...

XI

Сывалнă салтакла эп ыталатăп
Сире, туссем, чĕнсе ятран ята.
Çĕнтертĕмĕр асавлă усала та,
Çĕнтертĕмĕр çич пуçлă çич юта.

Тĕп пултăр кĕвĕçӳ те çын элекĕ!
Сыв пултăр тĕрĕслĕх — чĕре сури!
Эп паянтан çырмастăп тек элеги,
Эп паянтан хам çĕнтерӳ юрри.

Алран алла симпыл курки çӳретĕр,
Çавра-çавра çаврăнса илсе.
Çак ылтăн кăшăлран пиртен пĕри те
Тухса ан ӳкчĕр, вăхăтсăр вилсе.

Ан чактăр чăвашла ыр тараватлăх,
Ан сӳнтĕр шăкăл-шăкăл калаçу.
Çапла килсессĕн асилӳллĕ ватлăх,
Кунçулăма ылханмалли те çук.

## Иккӗмӗш монолог

### Шухӑшӑм

1

Ура ҫине хура ӗне пуссан,
Мӗн чухлӗ шухӑш тухрӗ капланса!
Эп вӗсене тӑватӗйӗркен хупатӑп —
Кӗтӳ пек ан каяйччӑр саланса.

2

Епле ан пултӑр чунлӑх чунсенче?!
Епле ан пултӑр ҫынлӑх ҫынсенче?!
Эп ҫаксене текех ӗненмесессӗн,
Ман пурӑнни те уссӑр ҫӗр ҫинче.

3

Кам ӑнлантарӗ чун мӗн иккенне:
Е кӑткӑс ӑнлану вӑл, е матери?
Анчах хӑш ҫыннӑн чунӗ ҫуккине
Тӳрех куратӑн...

4

Хӗрхӳ асаилӳ пек, яланах
Пит усӑллӑ тееҫҫӗ палана.
Те пур, те ҫук ун сиплӗхӗ? — пӗлместӗп,
Анчах ялан ҫиес килмест ӑна.

5

Хур тĕкĕпе çырсан та, курăр-ха,
Сахал-и куртăм, чăтрăм хурлăха.
Чакак тĕкĕпеле çырам-и халĕ? —
Чун систĕр çывхаран хăрушлăха.

6

Йапăлтатас йала-йĕркесене,
Тавах, паман Исмук йăхĕсене.
Министр пуличчен, атте каларăш,
Куçран калам тӳрех тĕрĕссине.

7

Кăнтăрлахи хĕвел ăшшипелен
Шур чул çине канас тесе килен.
Тăрук ун айĕнчен хура хăю пек
Явкаланса тухать хура çĕлен...

8

Аçам çине хурам аçа чула —
Асилӳпе таткалам мар чуна.
Емĕтĕме-çунатăма сарам та
Ыталаса илем килес куна.

9

Мĕн каласа парсассăн та пĕрех
Кĕртеймĕн ӳкĕте, ӳкĕтлекенĕм:
Тĕнче варринĕ, маншăн çак Çĕрех,
Çĕр кăвапийĕ маншăн — тăван енĕм.

10

Аҫта вăл тĕрĕслĕх, хăш ҫĕрсенче?
Ана явап параймĕ ҫулҫӳрен те.
Е вăл пурăнăҫри ырлăхсенчен
Хăвна тивĕҫлине кăна илни, тен...

11

Сана кирлех-ши ҫул ҫине тухма,
Ҫынсем пек пĕрчĕн-пĕрчĕн ăс пухма?
Сан шутупа, влаҫ пуррисем ҫеҫ ăслă,
Влаҫсăррисем вара... пĕр карт ухмах.

12

Мĕн чухлĕ илнĕ пулнă ҫавăн чуль
Вут, ҫуннă май, тухать хĕвел ăшшийĕ.
Поэт ăшчикĕ вут пек ҫуннă чух
Аҫтан тухать хĕрӳлĕх ытлашши те?

13

Тăванăмсем, пулар-и пĕр кавар,—
Этемлĕхе тасатмалли тавар:
Ыр ҫынпала пулар ҫич хут та ырă,
Усал ҫынпа — ҫич хут усал пулар.

14

Пăлхавăрлă тĕнчемĕр чир-черне
Эс шут тытман-и, тусăм, пĕтерме?
...Ман Атăл хĕрринче шур Шупашкарăн
Пур пульница, чиркӳ тата терме.

15

Ĕмĕрлĕхе пырас пек туйăнать
Пĕр илнĕ вăй-хăват, хисеп те ят.
Инкек, пушар пек, тăруках тухать те,
Мĕскер пурри ялт çех çунса каять.

16

Шухăшсене калатпăр тĕслесе:
Элекĕн аллисем кĕске тесе.
Пĕлместĕр-им? — ун урисем пит вăрăм,
Çитсе çавăрăнать пур кĕтесе.

17

Кăштах пулсан та тĕпренет чĕре
Элек-мелек сăмах илтмессерен.
Çапла, хурсем варланă çĕр çинче те
Пĕр хушă шатаймасть вара çерем.

18

Ан уттăр терĕн пулĕ урăхран —
«Ятарласа тĕллерĕн урараң».
Тем вăрăмăш патак та икĕ вĕçлĕ:
Паян йĕретĕп эпĕ, эс — ыран.

19

Асаттесем каланинчен пĕлен:
Хăй хӳрине хăех çăтать çĕлен.
Ан кĕрĕр çылăха, ан вараланăр,—
Элекĕпех чыхланĕ çынçиен.

20

Аслах пурнасшăнччĕ хĕпĕртесе,
Мĕн-ма ĕç-пуç пырать чĕрре кĕрсе?
Ялан телейлĕ пурăнас тесессĕн,
Пурăнмалла-шим ухмаха персе...

21

Инкек-синкекĕм пулĕ чул çине,
Телей ахахĕ çăвĕ пуç çине.
Çакна чӳклевçĕ пек ĕненмесессĕн,
Хавшанă чун чăтаймĕ чăннине.

22

Сана пусаймĕ, тĕрĕслĕх, тусан,
Эс путарсан та пурпĕрех тухан.
Анчах мĕне пĕлтерĕн эсĕ маншăн,
Ик-виç кунтан тĕнчем пĕтет пулсан.

23

Çырулăхра та ăш сăмах тупар,
Çырлахура та ырăлăх тупар.
Санран, шăпа, телей ыйтмастăп эпĕ —
Йывăрлăха анчах чăтма вăй пар.

24

Вылямалли тесеччĕ ылтăна,
Парнелĕх çеç тесеччĕ эп ăна,—
Куратăр-и, хĕрарăма çех мар вăл,
Çут тĕнчене те илнĕ тыткăна.

25

Тăваткăл мар — ик енлĕ çак тĕнче,
Ултав та чăнлăх — иккĕш ик енче.
Çав çырсене çапса юхать-мĕн пурнăç,
Хумсем вилеççĕ çав çырансенче.

26

Ыйткалакан çынна çил хирĕç пек,
Ума тухать инкек çине синкек.
Çул суйласси хамран кăна килсессĕн,
Хама анчах, теп, айăплăттăм эп...

27

Çыратăп сăвă чун савăннăран,
Çыратăп сăвă ăшăм çуннăран.
Эй, Çеçпĕлĕм, ытла эс сывăх маншăн,
Теп, хам шăпам пӳкле çавраннăран...

28

Салам сана, иптеш Хасан Туфан!
Сăвву-юрру сан манăçа тухман.
Саманипе килĕштерсе пурнан çын
Нихçан та аслă сăвăç пулайман.

29

Тĕнче мыскарине кăшт хăнăх та
Е хурлама, е мухтама тăхта.
Пер çын инкекĕ мĕн вăл çут тĕнчешĕн,—
Ав, кӳршере тăваççĕ çĕн хăта.

30

Шухăшлама пĕлен этемсене
Пӳрмен телейлĕ пурнăç ĕмĕрне.
Ухмах çынсем те выльăхсем телейлĕ —
Вĕсем пĕлмеççĕ вилĕм мĕскерне.

31

Тупать те пурнăç хăйĕн еккине
Шавла тăрать Пăла шарлакĕ пек.
Кам асăрханă? — сиве чул çине
Шыв çапăнать вĕри кăкăрĕпе...

32

Мана такăнтарма ман çул çине
Пăрахрăн хĕвӳнти арман чулне.
Эй, ăссăр çын! Эп, таканса ӳксен те,
Унта хăйрарăм ăс çивĕчлĕхне.

33

Тискеррĕн шăмарса, юна-юна
Халь тин парахăр хăратма мана:
Чăтса курниссемпе танлаштарсассăн,
Мĕскер вăл вилĕм! — çăлăнаç кăна.

34

Çынна султан мĕскер аташтарать?
Кӳлешӳрен, ав, килĕшӳ тарать.
Телей этемсене кĕвĕçтерет те
Инкек вара ... каллех танлаштарать.

35

Çак çутçанталăк ырлăхне — пехил,
Вылявлă чĕрĕ пурнăçа — пехил.
Пĕр иртнĕ çул çине тек таврăнаймăн —
Памаллине парсан, илмеллине те ил.

36

Епле вĕçетчĕ кайăк савăнса!
Персе антарчĕç — ÿкрĕ хутланса.
Шур юр пек шур пÿспе ăна чĕркерĕм,
Хура çĕрпе хупларăм хурланса.

37

Усал сăмах кĕрет сăмах шутне,
Хăрушă каç кĕрет вăхăт шутне.
Сана та пурнăç темелле-ши, хуйха? —
Кĕретĕн эс те пурăнни шутне.

38

Суранлă чунăмра чуралах çук,
Мăнкăмăллă — анчах хĕвре чул çук.
Килĕштерсен, каçарăп тăшмана та,
Сутăнчăка вара каçарас çук.

39

Çырта-çырта парахнă улмана
Камах çĕклетĕр? — калар-ха мана.
Çур тĕреслĕх мана хурса паратар,
Çур тĕреслĕх те пур пек саманан.

40

Çылăхлине — вĕри çавра çатма,
Çылăхсăра — ытарайми çăтмах.
Ялан çапла шутлаттăмччĕ, анчах та
Хăшсем пĕлеççĕ варрипе утма.

41

Чыслах пурнас тесен — кĕрешмелле,
Кирлех пулсан, мăнаçлăн вилмелле.
Эсир мĕн-ма çапăçуран таратăр? —
Ик пурнăç пурăнасшăн-им, элле?

42

«Телей вăл — телее кĕтни кăна»,—
Тесе каларĕ пĕр ăсчах мана.
Мехелĕм çитесси пумай юлмарĕ —
Телейлĕ пултăм-ши кĕтсе кăна...

43

Ĕнтĕ тăр шыв юхать, сив чул юлать...
Куç курнине те каласан юрать...
Уçланкăна чупса тухать те сăввăм
Каллех чун чăтлахне кĕрсе юрлать.

44

Элле эп, тин çуралнă ачалла,
Куратăп тĕнчене йăлт кутăнла?
Çук, çук!— ача вăхăтĕнчен эп иртнĕ,—
Тĕнчи, тен, хăй йăваннă кутăнла.

45

Ĕнтĕ хĕвел тухать, хĕвел анать,
Пăхса тăрсассăн, пуçăм çаврăнать.
Ай-хай, пĕр кун каять, тепри килет,
Ĕмĕрĕме ката-ката илет.

46

Пурнăçăмра чăтма çук йывăр чух,
Тапта-тапта мана пытарнă чух
Эп турăш умĕнче чĕркуçленмерĕм —
Çулпуç умне пырса ӳкессĕм çук.

47

Хура пустав хĕвел пайăркине
Çаплах тăранаймасть çăта-çăта.
Çапах вăл пулаймарĕ кaç сине
Хĕвел те, пĕчĕк лаптăк çутă та.

48

Çынран эп çех-ши катăк, тупата,
Ман çех-ши ăраскалăм катăк, татăк? -
Пĕр хаклăш япала тупатăп та
Ик хаклăш япала эп çухататăп.

49

Эп айăпа кĕрсен, çынсем мана
Хушса, катса тӳрре каларĕç, сутĕç.
Çапла çав, хăй йывăрăшне манать
Писмен тытса тăран йӳтенĕ сутаç.

50

Чӗнмен-ҫке ҫут тӗнче мана ӗҫке,
Ӗҫсен те мухмӑрӗ ун йывӑр-ҫке.
Апла та ҫӑмӑл мар, капла та пурнӑҫ,
Анчах вӑл, пирӗн телее, кӗске.

51

Ялан ан чав эс чӗрӗ ҫӑлкуҫа,—
Хӑй ҫулӗпе юхсан вӑл сиплӗ, тӑрӑ.
Нумай пурнас тесессӗн пурнӑҫа
Ыр ӗмӗтне кӑна пӳлме ан тӑрӑш.

52

Шухӑш пулать теҫҫӗ ӑшӑ ҫил,
Курӑк пулать теҫҫӗ вилнӗ ҫын.
Асаттесемӗр мар-и — курӑр-ха
Хӗвел патне кармашнӑ курӑка.

53

Ан тив, мана курайманссем туллаччӑр,
Ят-шывама пӗтерччӗр таптаса.
Чӗркӗмӗл пек таса эп — сирӗн ачӑр,
Ӗмӗтӗмсем те манӑн тап-таса.

54

Алран ямарӑн пурнӑҫ йӗвенне,
Ак сулӑнтан майпе ҫӗр ҫул енне.
Ах, салтӑнса ӳкейнӗ сурпану пек
Ӑтса иргтернӗ кунҫулу, анне.

55

Синкерлёхе ăнланăр самаях
Ăна чунпа чăтса курсассăн хăвăр.
Ай-хай хуйхи пырать-çке нумая,
Савăнăçсем анчах иртеççĕ хăвăрт.

56

Тав куркиýĕ хыççăн çул курки,—
Этем пурăнăçĕн çав йĕрки.
Тав куркине тулли тултартăм,
Çул куркине çурри хăвартăм.

57

Çĕр туртрĕ — йывăрлатрĕ уттăма,
Лав тулчĕ — хистеместĕп утăма.
Анчах кунсем мĕн-ма кусаççĕ хăвăрт? –
Мана прахсан çăмăлланать-шим вăхат..

58

Тăванăмсем, хитре тăванăмсем,
Эп ўкнипе пĕтмеççĕ-çке çулсем...—
Тăварăнна лаша пек чупĕç-кайĕç
Эп пурăнса петереймен çулсем

59

Çут уйăх айĕнче хура вăрман...
Тĕнче тени пĕрре те улшăнман.
Сăввăмсенче çын шухăшне курсассăн,
Туссем, каçарăр,— пурнăç улшăнман.

60

Çавăрăнса саланчĕ çăварни,
Юррипеле ăсанчĕ мĕн пӳрни.
Ак çимĕк те çимĕçĕпе çитейрĕ,
Анчах ăçта, ăçта уяв парни?

61

Мĕнле пĕлмен эп халиччен, ухмах,
Çăлтăрсене çăла пырса пăхма?
Вĕсем унта кăнтăрлана анаç-мĕн
Хура каçра каллех çиçсе тухма.

62

Сăввусем салху тесе калатăн.
Пуртс, пуртс пурнăçне кура.
Уярта çап-çут вăл, анлă Атăл,
Пĕлĕтсем тухсассăн — сĕм-хура.

## Арапуҫ — 1957 ҫул

Тӑманпа ҫаврӑнса-пӑтранса иртрӗ хӗл,
Ҫатмари сар ҫупа ҫимӗк ҫитрӗ тинех.
Йӗркеллех пӗтмелле пӳрнӗ пулӗ мехел,—
Каялла ҫаврӑнса ҫитрӗм кил хӳттинех.

Эп тахҫан хураллана пӑрҫа хирӗсем,
Ырӑ кӑмӑлӑршӑн тав сире, пил сире,—
Пуҫ ярсан та кунтах юлнӑ ман юррӑмсем
Тӗрлӗ-тӗрлӗ чечек пулса шӑтнӑ хире.

Ирӗк кайӑкӗ — икӗ хӑлаҫлӑ халат.
Ярӑнать кӑн-кӑвак тӳпере.
Тепӗр хут вутланса кӗтӗр-и вӑй-хӑват
Хӑлатла ҫӗкленмешкӗн тепре.

Пурнӑҫа малалла туртакан ӑсама,
Ӗмӗте мӗншӗн тӳртӗн тӑрас? —
Чунӑмра чан ҫапса янӑрать пӗр сӑмах:
Пурӑнас, пурӑнас, пурӑнас!

Хырлӑхра хурлӑх мар, кӗр кӗрлетӗр кӗтрет.
Тавӑсси! Арапуҫ уявне мен ҫитет?
Улӑх ҫумӗн чупса ҫаврӑнать ҫут Пӑла,—
...Тен, вӑл сывпуллашать манпала...

## Тăван сăмахĕ — 1986 çул

Çапла, тепĕр чух татăлать юрă-кĕвĕ,
Вара,— мур тĕпне!— пурăнас та килмест...
Тĕкме, çапнă хыççăн папка янă евĕр,
Каллех çĕнĕрен вичкĕн чĕрĕлтĕн эс.

Епле-ха чăтса ирттерме вăй çитертĕн?
Епле хуçалмасăр эс юлтăн ун чух?
Мĕнпур тăвансем пухăнса çава тертĕн
Ятне ылханма халь тăвар-и учўк.

Эй, ырăсене çех ĕненнĕ ачалăх,
Эй, тĕрĕслĕхе шаннă çамрăклăх та,
Мен чухлĕ сирте шурă пир пек тасалăх,
Мĕн чухлĕ, мĕн чухлĕ айванлăх тата!

Тискер кайăкра та пулман сĕм тискерлĕх
Çынра пуррине кам шутланă, кала?!
Сана йывар чух юлташу кĕт-кĕверлĕ
Сутни те — пуçа вырнаçман япала.

Туртан лашана ытларах та тиеççĕ,—
Çапла ĕнентернĕ Сăван кĕнеки.
Эп ку сăмаха тĕрĕсех пуль теесшĕн,
Анчах лав туртма камăн пултăр екки...

Вăтăр çиччĕмĕш çул. Лавĕ тулнă, тăванам.
Вăтăр çичĕ мĕльюн! Урхамах тулхăрать.
Кăра Колыман та мутас Магаданан
Сив сывлăшĕ халь те пўлет кăкăра.

Тĕпчемĕр саккунĕ ик-виçе хăлаçлă
Туртса карăнтарнă çиңçе хĕлĕх пек,
Халь-халь янăраслăн, халь-халь татăласлăн,
Чуна хăратать çăвĕпе, хĕлĕпе.

Мĕн тăвăн, тăванăм, мĕн тăвăн, мĕн тăвăн,
Утас çулсене ункăн-ункăн пӳлсе,
Тепре, каялла çаврăнса, юнлă тăвăл
Каллех Чăваша Тамерлан пек килсен?..

Эс мар ун чухне Обь хĕрне чупса анăн,
Ку шыв савнă Атăлăм мар-и тесе,
Эс мар ун чухне тухăça хирĕç тăрăн,
Шалам шухăшна парăс пек çĕклесе...

1986 ç.

## ТУПМАЛЛИ

Çăварни çатми....................................3
Хура вăрман çинче..........................48
Пăла хĕрринче..................................81
Чул çинчи çырусем.......................157
Ĕмĕрлĕх самант............................175
Поэмăсем.......................................219

**Исмуков**
**Николай Аверкиевич**

# Избранные

На чувашском языке

Редактор З. М. Юрьева
Художник Г. И. Иванов
Технический редактор С. Н. Варламова
Корректор Т. И. Матвеева

Сдано в набор 17.12.96. Подписано к печати 7.01.97.
Формат 70*90 1/12. Бумага типогр. “Салика”. Гарнитура литературная. Печать высокая Усл. печ. л. 11,12.
Тираж 500 экз. Заказ №277. Изд. №20. Цена договарная.

Изд-во “Салика”
Типография предприятия “Салика”
428015, г. Чебоксары, ул. Урукова, 17.

15.00